рег. 1473 40-68
2928

Ф. С. МЕЦЕНАТОВ

# ЧӐВАШ ЛИТЕРАТУРИ

ВӐТАМ ШКУЛӐН VIII КЛАСӖ ВАЛЛИ

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1940

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве ______
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
„24 октября 1940 г.
Подпись Г. Иванова

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Ф. С. МЕЦЕНАТОВ

# ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИ

## ВĂТАМ ШКУЛĂН VIII-МĔШ КЛАСĔ ВАЛЛИ

*Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ çирĕплетнĕ*

АСĂРХАНĂ ЙĂНĂШСЕМ

| стр. | йĕрке: | пичетленнĕ: | вуламалла: |
|---|---|---|---|
| 25 | 7 аялтан | çынчен, | çинчен, |
| 27 | 16 аялтан | Çăмахĕ те | Сăмахĕ те |

Чăваш литератури, VIII класс.

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1940

## АВТОРТАН.

Чăваш литератури учебникне кăларас ĕç пирĕн хальччен пулман темелле. Çавăн пекех чăваш литературин историне сăнаса ун тăрăх çырнă материалсем те çукрах. Çавăнпа та учебник çырас ĕçре йывăрлăхсем те пулнă. Çак кĕнеке вăл енчен малтанхи опыт пулса тăрать. Учебникри çитменлĕхсем çинчен вулакансене, вĕрентекенсемпе вĕренекенсене, писательсемпе поэтсене хăйсен шухăшĕсене издательствăна е хама çырса пĕлтерме ыйтатăп. Çитменлĕхсем çинчен кăтартса панисене тепĕр изданире шута илĕпĕр. Вĕсем малашне шкулсем валли чăваш литературипе лайăх учебник пичетлесе кăларма пулăшĕç.

Ф. МЕЦЕНАТОВ.

# 1. МĔН ВĂЛ ЛИТЕРАТУРА. ЛИТЕРАТУРĂНА МĔНШĔН ВĔРЕНМЕЛЛЕ.

Литература тесе эпир илемлĕ çырулăха калатпăр, анчах литература[1] сăмах, анлăн илсен, ăна çеç пĕлтермест. Тĕрлĕ ăслăлăх, политика т. ыт. енĕпе тухнă кĕнекесене те литература теççĕ. Сăмахран, „политикăлла литература“, „ялхуçалăх литератури“, „историлле литература“, „философилле литература“ тата ытти те.

Писательсемпе поэтсем çырнă литературăна, ыттисенчен уйăрса илме, „илемлĕ литература“ (художественная литература) тесе ят панă.

Литература вăл искусствăн пĕр пайĕ пулса тăрать[2]. Литература та, искусство та пурăнăçа тĕплĕн сăнласа кăтартаççĕ, пурăнăçăн тĕрлĕ енĕсене куç умне илсе килсе тăратаççĕ. Писатель перопа калав, роман, пьеса т. ыт. çырса, пурăнăçăн пĕр-пĕр фактне сăнласа куç умне чĕррĕн илсе килсе тăратать; художник сăрăсемпе картинăсем туса кăтартать; кино, театр—выляса пама пултараççĕ; музыка—юрă урлă т. ыт. те.

Çавăнпа та эпир литературăна пурăнăç тĕкĕрĕ тетпĕр. „Искусство есть воспроизведение действительности, повторенный, как бы вновь созданный мир. Литература есть сознание народа: в ней, как в зеркале, отражается его дух и жизнь...“ тет вырăссен паллă критикĕ Белинский.

Октябрь революциччен çынсем мĕнле асаплă пурăнăçра тертленни çинчен çырнă произведени пире ĕлĕкхи пурăнăç çине тарăхма, вăл пурăнăçа каялла тавăрма шутлакансене чунтан-чĕререн ылханма, çĕнĕ пурăнăç тума татах та хастарлăн хутшăнма чĕнет.

Пĕр-пĕр произведени вуласан, кино, картинăсем курсан, çав вуланă е курнă япаласем чылайччен пуçран тухмасăр çÿреççĕ. Вĕсене вуланă е курнă чух, вулакан е куракан чунсăр япала пек ларма пултараймасть. Вăл унти геройсемпе пĕрле савăнать, геройсемпе пĕрле йĕрет, пăлханать, хăй ăçта ларнине те манать. Произведенири, пьесăри, картинăри çынсен пурăнăçĕпе çыхăнса, куракан вăхăтлăха çав тапхăрти пурăнăçа куçать.

Акă, тĕслĕхсем илсе пăхар. Аслă Октябрь революцийĕ хыççăн ялсенче спектакльсем нумай лартма пуçларĕç. Пĕр пьесăра

---

[1] Литера—буква, саспалли. Пичетленĕ кĕнекесене çавăнпа пурне те литература тенĕ.

[2] Искусствăна литературăсăр пуçне тата кино, музыка, театр, картинăсем ÿкересси, ташă, тĕрĕ т. ыт. те кĕрет.

кулак ĕлĕк чухăнсене епле пусмăрласа пурăннине кăтартнă. Чухăн ун патне кивçен тыр͏ă ыйтма пынă: вăл кулак аттине чуптăвать, чĕркуçленсе йăлăнать, эрех ĕçтерет. Кулакĕ чухăна 5 пăт пама пулать, анчах кĕркунне 8 пăт тавăрса пама тата пĕрер анине çулла вырса пама хушать.

Паллах, çак сценăна курса ларакансем кулак çине тарăхмасăр чăтаймаççĕ. Пĕр куракан̆ĕ, ĕлĕк кулак патĕнче хăй тарçăра асапланса пурăннăскер, чăтса лараймасăр сцена çине хăпарса, кулака: „Эсĕ революци хыççăн та çаплах чухăнсене пусмăрлама пăрахман-и?“—тесе хĕнеме пуçланă. „Кулакăн“ сухалĕ хăпăнсан, хăйсен ялĕнчи комсомолец Семен иккенне пĕлсен, куракан вара ку ĕçсем пьесăра пулса пынине ăнланнă.

Тепĕр тĕслĕх: икĕ хресчен пысăк хулана ĕçпе кайсан, театра кĕнĕ пулнă. Сцена çинче пьесăра çынна вĕлернине кăтартнă. Çав хресченсем, хыçалта курса лараканскерсем, свидетеле лекер мар, ав, çынна вĕлерчĕç!..—тесе театртан тухса тарнă. Малта ларакан рабочи, хăюллăскер, тытăр ăна, çыхăр, ав, вăл пытанчĕ!—тесе çухăрса янă. Ун пек тĕслĕхсем татах та нумай. Хамăр та эпир, киносенче ĕçсем аван пулсан, Хĕрлĕ Çар çĕнтернине т. ыт. курсан, чăтаймасăр савăннипе тăвăллăн алă çупатпăр.

Çĕнĕ пурăнăç çинчен, хастар геройсем, стахановецсем, орденлă паттăрсем, депутатсем т. ыт. çинчен çырнине искусствăра-е литературăра курсан, куракан е вулакан: манăн та çавсем пек пуласчĕ, тет, çавсем пек пулма тăрăшать.

Çапла вара, литература этемĕн ăс-тăнне урăхлатать, çĕнетет, çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнет. Çавăнпа та илемлĕ литература коммунизм тума пулăшакан литература пулмалла, çынсен идеологине, шухăш-кăмăлне коммунизм çулĕпе ямалла.

Илемлĕ литература—класс кĕрешĕвĕн орудийĕ. Литература класс кĕрешĕвĕн айккинче тăма пултараймасть: класс кĕрешĕвĕ окопсенче çеç мар, сцена çинче те, кинора та, циркра та, произведенире те, сăвăра та, фольклорта та т. ыт. çĕрте те вăйлăн пырать. Ун çинчен пирĕн партин Центральный Комитечĕ те хăйĕн резолюцинче асăрхаттарнă: „Пĕтĕмĕшпе илсен, пирте класс кĕрешĕвĕ чарăнман пекех, вăл кĕрешӳ литература фронтĕнче те чарăнмасть. Искусствăн класлă природи, пĕтĕмĕшпе илсен искусствăра, уйрăмăн илсен литературăра, сăмахран, политикăринчен, вĕçĕмсĕр нумай тĕрлĕ формăсенче палăрать пулсан та, класлă обществăра нейтральнăй искусство çук, пулма та пултараймасть“. *(ЦК ВКП(б) партин илемлĕ литература тĕлĕшĕнчи политики çинчен 1925 ç. йышăннă резолюци).*

Аслă Ленин: „Литература вăл—пролетари ĕçĕн пĕр пайĕ пулмалла, партийнăй пулмалла“, тенĕ. Октябрьти социализмла революци хыççăн литература рабочи класăн ăсĕнче хăйĕн вырăнне тивĕçлипех тупрĕ. Партипе правительство литература фронтне çулран çулах вăйлатса пыраççĕ: тĕрлĕрен конкурссем туса ирттереççĕ, халăх умĕнче тава тивĕç писательсене орденсем парса наградăлаççĕ, вĕсен юбилейĕсене туса ирттереççĕ, литература пирки уйрăм постановленисем кăлараççĕ т. ыт. те.

Вырӑс „литературовечӗ“ Переверзев революци хыҫҫӑн та пӗр вӑхӑтра: искусство, литература класс кӗрешӳне хутшӑнмасть, тесе ӗнентнӗ. Художник нимле класс майлӑ та мар, вӑл илемлӗ япаласем ҫеҫ тӑвать, тесе сӳпӗлтетнӗ. Чӑвашсен „ҫурмавӗреннӗ теоретикӗ“ Федоров М. та, ҫав Переверзев хыҫҫӑн кайса, тӑшманла идеологие чӑваш литературине сарасшӑн пулнӑ.

XIX-ӗмӗрӗн варринче дворян, буржуази писателӗсем (Фет, Майков т. ыт.) революцилле-демократилле литературӑна хирӗҫ кӗрешнӗ чух, „таса искусство“ („чистое искусство“, „искусство для искусства“) текен „теори“ туртса кӑларнӑ. Вӗсен шучӗпе писатель пурӑнӑҫпа, класс идеологипе ҫыхӑнман ҫын. Художник нихӑш класс майлӑ та мар, вӑл илемшӗн ҫеҫ тӑрӑшать, тесе сӳпӗлтетнӗ вӗсем. Хайсен дворян, буржуази пурӑнӑҫне ҫапла майпа хӳтӗлесе усрасшӑн пулнӑ. Вӗсен „таса искусстви“, „нейтральнӑй искусстви“ хайсен класне тытса тӑма, хӳтӗлесе тӑма кирлӗ пулнӑ. Ҫак „классӑр“ текен буржуази литературин шухӑшӗсене переверзианецсем пирӗн совет литературинче те сарма хӑтланнӑ.

Пирӗн литература—халӑхӑн. Революциллӗ-демократилле писательсем (Некрасов, Чернышевский, Белинский, Добролюбов, Радищев, Герцен т. ыт. те) литература класс кӗрешӗвӗнче, пурӑнӑҫра кирлине аванах кӑтартнӑ. Вӗсем хайсен произведенийӗсенче ӗҫхалӑхӗн йывӑр, асаплӑ пурӑнӑҫне сӑнласа кӑтартнӑ, пусмӑр тӗнчипе кӗрешме чӗннӗ:

„Оставь другим певцам любовь,
Любовь ли петь, где брызжет кровь...“

тесе ҫырать декабрист-писатель Раевский хайӗн пӗр сӑввинче. „Ӑҫта сывлама йывӑр, ӑҫта хуйхӑ илтӗнет: ҫавӑнта чи малтан пул“, тет Некрасов.

Литература мӗнпур ӗҫхалӑхӗшӗн пулмалла, тет Ленин: „...вӑл ирӗклӗ литература пулӗ, мӗншӗн тесен вӑл пурнӑҫпа тӑранса ҫитнӗ героиняшӑн мар, мӑнтӑрланнипе кичемленсе асапланакан „ҫӳлти вунӑ пин ҫыншӑн“ мар, вӑл ҫӗршывӑн чечекӗ, унӑн вӑйӗ тата мӑлашлӑхӗ пулса тӑракан миллион тата вуншар миллион ӗҫҫыннисемшӗн ӗҫлӗ“. (*Ленин*, „Партийная организация и партийная литература“, собр. соч., т. VIII, стр. 325). Сталин юлташ писательсене пахаласа ҫапла каланӑ: „... Социализмлӑ строительствӑна инженер-металлургсем, инженер-строительсем, инженер-электриксем питех те кирлӗ. Пире ҫынсен чунӗсене тӑвакан инженерсем кирлӗ. Эсир, писательсем—ҫынсен чунӗсене тӑваканнисем“.

Ҫапла вара, илемлӗ литературӑна мӗнпур ӗҫхалӑхӗшӗн тӑвас тесен, писателӗн пурӑнӑҫа, этем чунне, шухӑш-кӑмӑлне пит те тарӑннӑн, инженер хайӗн машинисене пӗлнӗ пекех аван пӗлмелле, унсӑрӑн пурӑнӑҫа, ҫынсене сӑнласа пама, „этем чунӗсен инженерӗ“ пулма май пулас ҫук.

Пурӑнӑҫа сӑнласа кӑтартас ҫӗрте Сталин юлташ писательсене социализмла реализм меточӗпе ӗҫлеме сӗннӗ. Вӑл—пурӑнӑ-

ҫа тараннăн, тĕплĕн, тĕрĕссĕн, пролетари куҫĕпе пăхса ҫырма кирлине пĕлтерет. Социализмла реализм ҫинчен Совет писателĕсен Союзĕн уставĕнче ҫапла каланă: „Социализмла реализм, советсен илемлĕ литературипе литература критикин тĕп методĕ пулса тăрса, художнике чăн-чăн пурăнăҫа, унăн революциллĕ аталанăвĕнче, тĕрĕс историллĕ-конкретлă кăтартса пама хушать. Ҫавăнпа пĕрлех чăн-чăн пурăнăҫа художествăллă тĕрĕс тата историллĕ-конкретлă кăтартса пани, ĕҫҫыннисене идея тĕлĕшĕнчен урăхлатас, вĕсене социализмла воспитани парас задачăсемпе ҫыхăнса пымалла".

М. Шолохов хăйĕн „Тихий Дон" романĕнче казаксен пурăнăҫне, йăлисене, чĕлхине т. ыт. енĕсене те ҫав тери тараннăн кăтартма пултарнипе унăн романĕ хальхи тата ӳлĕмхи историксемшĕн те казак пурăнăҫне, чĕлхине, йăлисене сăнас енчен паха та пуян документ пулса юлать. Ахальтен мар Шолоховпа А. Толстой писательсене академик ятне панă. Пирĕн совет ҫĕршывĕнче пултаруллă вăйсене, талантсене ӳсме ҫул уҫă, вĕсен паха ĕҫĕсене государство яланах тивĕҫлипе хаклать.

1939 ҫулта вырăс, украина, белорусс т. ыт. халăх писателĕсене те правительство нумай наградăларĕ. Чăваш писателĕсенчен те Н. И. Полоруссов (Шелеби) „Знак почета" орденĕ илчĕ. Пусмăр айĕнче пурăннă тĕттĕм халăхсем, рабочисем, ĕҫхреснеĕсем совет влаҫĕ пулнăранпа партипе совет ĕҫĕнче ĕҫлеме тивĕҫ илчĕҫ; инженерсем, учительсем, профессорсем, тĕнчипе паллă академиксем, тĕнчене тĕлĕнтерекен паттăр геройсем пулса тăчĕҫ. Ҫавăн пек пулма пире Сталинла Конституци право панă: ĕҫле, вĕрен, ӳс! Кам пулас килет—пул!

Ĕлĕкхи вăхăтра халăх хушшинчи нумай талантсем палăрма пултараймасăрах сӳнсе ларнă. Вĕсене ӳсме, вĕренме услови пулман, ĕҫлеме ирĕк те паман. Йывăр пурăнăҫ вĕсене ыйткалама янă, вĕсен ĕмĕрĕ йывăр ĕҫре иртнĕ. Ун ҫинчен эпир иртнĕ ĕмĕрти писательсен, художниксен произведенийĕсем тăрăх та аван пĕлетпĕр. Сăмахран, „Ванька Жуков" (Чехов), „Козета" (В. Гюго), Богданов-Бельский художник ӳкернĕ „У дверей школы" картина т. ыт. те ĕлĕкхи ачасен асаплă пурăнăҫне аван кăтартса параҫҫĕ. Ӳссен кам пуласси, вĕренесси ҫинчен вĕсем нумайĕшĕ шутлама та пултарайман. Шкулсем пуян ачисемшĕн пулнă. Акă мĕн ҫырать ĕлĕкхи шкул ҫинчен ун чухнехи учительница А. Симонова: „Пĕрре эпĕ революцичченхи шкулта 5-мĕш класра вĕренекен ачасене сочинени ҫырма „Ӳссен эпĕ кам пуласшăн" ятлă тема патăм. Вĕренекенсем ним ăнланмасăр ман ҫине пăхма пуҫларĕҫ. Ним шарламасăр лараҫҫĕ, сочинени теми ятне те ҫырмаҫҫĕ. Эпĕ малтанах хам та аптăрарăм, каярах вара тема ниме юрăхсăр иккенне тавҫăрса илтĕм. Чăнах та, кам пулма пултартăр-ха ун чухне хресчен хĕрĕ-ывăлĕ?"

Ҫавăн майлă темăпах хальхи учитель сочинени ҫырма совет шкулĕнчи ачасене парать. Хальхи ачасем ку тема пирки нумай шухăшласа тăмаҫҫĕ. Тӳрех ҫапла ответсем параҫҫĕ: „Эпĕ—летчик", „эпĕ—инженер", „эпĕ—командир" т. ыт. те, т. ыт. те. Вĕ-

сем хăйсен пурăнăç тĕллевне пĕлеççĕ. Вĕсем хăйсен ачалăхĕчи телейлĕ пулнине те пĕлеççĕ, çавăншăн Сталин юлташа тавтăваççĕ вĕсем.

Пирĕн илемлĕ литература ĕçĕ, писательсен ĕçĕ—ĕç паттăрĕсен образĕсене, вĕсен ĕç майĕсене произведени урлă кăтартасси пулса тăрать. Вăл пурăнăç тĕкĕрĕ çеç пулмалла мар, пурăнăçа тума та вĕрентмелле. Совет литературин задачи пирки Совет Союзĕнчи писательсен I-мĕш съездĕнче (1934 çул) А. А. Жданов юлташ акă мĕн калана:

„... Совет литератури пирĕн геройсене кăтартма пĕлмелле, *хамăрăн ыранхи кун* çине пăхма пĕлмелле. Ку вăл утопи пулмĕ, мĕншĕн тесен пирĕн *ыранхи кун* йĕркеллĕн ăнланулла ĕçпе паянах ĕнтĕ хатĕрленсе пырать...“

## II. ЧĂВАШСЕН ОКТЯБРЬ РЕВОЛЮЦИЧЧЕНХИ ПУРĂНĂÇĔ, КУЛЬТУРИ.

Октябрь революциччен чăвашсем, ытти вак халăхсем пекех, икĕ пусмăр айĕнче пурăннă. Пĕр енчен вĕсене патша правительствипе вырăс буржуазийĕ, тепĕр енчен чăваш пуянĕсем, „куштансем“ хĕссе пурăннă. Патша правительстви чăваш пек вак халăхсене тĕттĕмре усрама тăрăшнă. Çавăнпа та чăвашсем хушшинче хут пĕлекенсен шучĕ 18% çеç пулнă. Октябрь революциччен аслă шкул пĕтернисем чăвашсенчен пурĕ те 15 çын кăна пулнă. Тăван чĕлхепе кĕнеке-хаçатсем кăларма ирĕк паман. Литература та аталанма пултарайман. Темиçе ĕмĕр хушши тĕттĕм халăха хĕреспе тата хĕçпе пăхăнтарса усранă.

Паттăр ĕçхалăхĕ хăрасах тăман: Разинпа, Пугачевпа пĕр майлă пулса тата 1905—1907 çулхи революциллĕ движение хутшăнса, патша влаçне хирĕç паттăррăн кĕрешнĕ, юлашкинчен 1917 çулта çĕнтернĕ.

Мĕнпур халăх халĕ Совет Союзĕнче „формипе нациллĕ, содержанипе социализмлă“ культурине анлăн вăйлатса пырать. Чăваш ĕçхалăхĕ те Октябрь революцийĕ хыççăн хăйĕн культурине пысăк утăмсемпе малалла ячĕ, буржуаллă националистсене хирĕç, эсерсемпе троцкистсене хирĕç вăйлăн кĕрешсе пычĕ, вĕсене тăрă шыв çине кăларса, пурăнăçран кăкласа ывăтрĕ.

Малалла чăвашсен ĕлĕкхи пурăнăçĕпе, культурипе кĕскен паллашар.

Вырăс летопиçĕсенче чăваш халăхĕн ячĕ пуçласа 1524 çулта тĕл пулать. Унчченхи тапхăрта чăвашсене „горные марийцы“, „горные татары“, „татары“ т. ыт. ятпа асăннă.

XVI ĕмĕртен пуçласа, чăвашсене тата Вăтам Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхсене те вырăс государстви колонизацилеме тытăнать; 1552 çулта вырăс государстви Хусан патшалăхне тутарсенчен туртса илет, чиркӳсем, çĕнĕ хуласемпе ялсем лартма тапратать; пупсем, боярсем, губернаторсем, вак служащисем пуяс шутпа вак халăхсем хушшине килме пуçлаççĕ. Вырăс патшин чиновникĕсем, полицийĕ халăхран мĕнле кулнине, мăшкăлла-

нине Герцен писатель хайĕн „Былое и думы“ мемуарĕнче аван кăтартса панă. Акă, хăшпĕр вырăнĕсене илсе пăхар:

„Земски полицишĕн чăн-чăн пуянлăх—вотяксем, мордвасем, чăвашсем пулаççĕ: çав халăхсем мĕскĕн, хăравçă. Исправниксем, хăйсене финсем пурăнакан уездсене янăшăн, губернаторсене икĕ хут ытла укçа тыттараççĕ.

Полиципе чиновниксем çав чухăнсемпе тĕлĕнмелле хăтланаççĕ. Вотяксен ялĕ урлă пĕр-пĕр ĕçпе землемер пырать-и, вăл вара унта чарăнатех, урапа çинчен астроляби илет те, çĕре шалçа çапса лартать, сăнчăр тăсать. Тепĕр сехетрен пĕтĕм ялăн сехри хăпать. 12-мĕш çулта: „фрацуз“, „французǃ“ тенĕ пекех—„межемерия, межемерия“—теççĕ мужиксем. Староста халăх ячĕпе пуççапма пырать. Лешĕ пĕрмаях виçет те, çырать. Староста унтан: тĕрĕс мар ан виççем, ан кӳрентерсем,—тесе йăлăнать. Землемер çирĕм, вăтăр тенкĕ ыйтать. Вотяксем—хĕпĕртесех каяççĕ, укçа пухса параççĕ, землемер вара тепĕр вотяк ялне çити каять.

Е исправникпе становоя çын вилли тĕл пулать-и, вĕсем ăна, сивĕпе усă курса, вотяксен ялĕсем тăрăх икĕ эрне хушши турттарса çӳреççĕ, вара кашни ялтах çапла калаççĕ: халĕ кăна тупрăмăр, следствипе суда сирĕн ялăрта тумалла, теççĕ. Вотяксем укçа парса хăтăлаççĕ“.

Исправниксем, пупсем яла пыни халăхшăн „хура кун“ пулса тăнă. Вăл кун халăхран куланай пухнă, типĕ тытни-тытманнине, христос тĕнне епле тытнине тĕрĕсленĕ. Нумайĕшне тĕрмене хупнă, хĕненĕ, укçан тӳлеме хушнă, вĕсене хĕснĕ. Пысăк тӳлев парсан, вара каçарам пек тунă. Укçана сăлтавсăр çаратса кайни вара халăхшăн „хура кун“ пулса тăнă. Тепĕр çул иртсен, çав ялсене каллех хĕреспе, хĕçпе хĕсме çĕнĕрен пырса тухнă.

Чăвашсем хушшинче те пупсем, исправниксем иртĕнсе пурăннă. Чиркӳсем, монастырьсем çĕршер, пиншер десятина таран çĕрсем акса тăнă, халăха ирĕксĕр ĕçлеттернĕ. Бояр ывăлĕсене ялсем, вулăссем çирĕплетсе панă.

1756 çулта патша влаçĕ тутарсен мечечĕсене çĕмĕресси çинчен указ кăларать, тĕрлĕрен ытти тĕнсене хĕсме пуçлать. 1740 çулта 250 кил пуçне йывăç чиркӳ лартма закон йышăнать. Çапла вара, 1763 çул тĕлне чăвашсем хушшинче те 39 чиркӳ тата часовнисем пулнă, Октябрь революци умĕн 398 чиркӳ, 8 монастырь пулнă.

Анчах чăвашсем христос тĕнне йышăнасшăн пулман. Хăйсен „аслашшĕсен“ туррисене вăрттăн асăннă, иконăсене сакайне пăрахнă, çунтарнă, куçĕсене шăтарнă т. ыт. те. Ку фактсене эпир литературăра Эльгерĕн „Хĕн-хур айĕнче“ ятлă историллĕ поэминче, Иван Мучин „Чышкă тытăмĕ“, „Турă ячĕпе, патша хушнипе“ калавĕсенче те лайăх куратпăр.

Иртĕхсе пурăнакан патша йыттисене хирĕç, полицие, улпутсене, пупсене хирĕç халăх сахал мар кĕрешнĕ. Чăваш халăхĕ Пугачев пăлхавĕнче те паллă вăй пулса тăнă. Нумай çĕрте хресченсем улпутсен именисене, вăрманĕсене туртса илнĕ, çунтарнă; пупсене, исправниксене çака-çака вĕлернĕ.

1764—1800 çулсенче христос тĕнне вак халăхсем хушшинче çирĕплетме пупсем урăх май тупнă: тĕн кĕнекисене чиркÿсемпе шкулсем урлă сарма тăрăшнă.

Вара вак халăх ачисене монастырьсене, шкулсене ирĕксĕр илсе кайса вĕрентме пуçланă. Закон тăрăх 10 кил пуçне пĕр ача памалла пулнă. Пупсемпе монахсем вĕренекен ачасене хытă тарăхтарнă. Халăх тĕн çыннисене курайми пулнă: вĕсем иртĕхсе пурăнни, пупсем хăйсем те тĕн йăлисене, типĕ тытассисене пăхăнманни, хĕрарăмсемпе алхасса пурăнни т. ыт. те халăха вĕсенчен пĕтĕмпех сивĕтнĕ, курайми тунă. Çавăнпа та халăх вĕсене хирĕç час-часах пăлханнă.

XVIII ĕмĕрĕн вĕçĕнче христос тĕнне сарас майпа Чулхулара, Хусанта миссионерла кĕнекесем чăвашла тухма пуçланă.

1807 çултан пуçласа чăвашсем хушшинче те шкулсем уçма пуçлаççĕ. Чи малтанах (1807 ç.) шкул Пăртасра уçăлать; каярах 1875 ç.—Тĕрлемесре, 1876 ç.—Элĕкре, 1879 ç.—Нăрвашра тата ытти çĕрте те.

1868 çулта Чĕмпĕрте (халĕ Ульяновск) учительсене хатĕрлекен чăваш шкулĕ уçăлнă. Ăна И. Я. Яковлев пуçарса янă.

XIX ĕмĕрте тĕн кĕнекисемсĕр пуçне, ялхуçалăх, медицина, ачасене пăхса ÿстересси çинчен т. ыт. çинчен те калакан чăвашла кĕнекесем тухма пуçлаççĕ. Тĕслĕхрен: „Слова о христианском воспитании детей", „Çанталăк çинчен сăнани" (Хусан, 1895 ç. *А. В. Смоленцев*), „Турă чăнне курать те час каламасть" (*Л. Н. Толстой*), „Тутарсемпе чăвашсем" (*Н. К.*) „Вырăс патшалăх историйĕ çинчен калани" т. ыт. те.

Çак кĕнекесем халăха ăс-тăн пама мар, тĕн сĕрĕмĕпе пăчланса, тĕттĕмре пурăнма хушнă, шовинизмла шухăш сарнă, чăн тăшмана—патша влаçне хÿтĕлесе тăнă.

Ахальтен мар Ленин „Россия—халăх тĕрми",—тенĕ. Россия пирки çапла каланă: „Çавăн пек тискер çĕршыв, халăх массисене вĕренÿ, çутăлăх, пĕлÿ тĕлĕшĕнчен çав тери çаратса тусăнтарнă çĕршыв—Европăра урăх, Российăсăр пуçне, пĕре те юлман" (*Ленин*, 1913 г. „К вопросу о политике министерства народного просвещения"). Ленинпа Сталин, пирĕн коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, эпир Октябрь революцийĕ хыççăн çак „халăх тĕрминчен" çăлăнса тухрăмăр. Çĕрĕн пĕрре улттăмĕш пайĕнче социализм турăмăр, коммунизм тăватпăр.

Çапла ĕнтĕ, Октябрь революциччен пурăнăç çинчен тĕрĕссĕн калакан кирлĕ кĕнекесене халăх хушшине сарман, литература произведенисене те пичетлеме, ăна вăйлатма ирĕк паман. Çапах та халăх хăйĕн пултарулăхне фольклор урлă сарса пынă, юмахсене, юрăсене т. ыт. те ĕмĕрсем тăршшĕнче çухатмасăр усранă.

Ĕмĕрсем тăршшĕнчи халăхăн асаплă, пусмăрлă пурăнăçĕ, шухăш-сисĕмĕ, сăмах çивĕчлĕхĕ фольклора кĕрсе юлнă. Халăхăн ĕлĕкхи пурăнăçне, шухăш-сисĕмне пĕлес енчен фольклор питĕ паха материал пулса тăрать. Фольклор пире халăхăн тĕрлĕ тапхăрти пурăнăçне уççăн çутатса парать.

## III. ФОЛЬКЛОР.

### МĔН ВĂЛ ФОЛЬКЛОР. ФОЛЬКЛОРА МĔНШĔН ВĔРЕНМЕЛЛЕ.

Фольклор тенĕ сăмах—англичансен сăмахĕ. „Folklore“ Folk—халăх, lore—пĕлў, пултарулăх, творчество. Вăл термина 1846 ç. Англири Вильямс Томсон ятлă вĕреннĕ çын сĕннĕ тăрăх йышăннă. Çавăнтанпа вăл терминпа наука, литература пĕтĕм тĕнчипех усă курать. Фольклора пухас ĕçе, ăна сăнаса вĕренес ĕçе чи малтан Англире XV—XVII ĕмĕрсенче пуçланă.

Фольклор материалĕсене (юмах, юрă, пословицăсем т. ыт. те) кам шухăшласа хăварнине пĕлме йывăр. Вĕсен авторĕ—халăх. Халăх хушшинчи хут пĕлмен талантсем шухăшласа кăларнипе вĕсем халăх хушшине саланнă. Çулран çул, ĕмĕртен ĕмĕр, пĕр ăруран тепĕр ăрăва куçса пырса, фольклор паянхи куна çитнĕ. Нумайĕшĕ вĕсем манăçа та кайнă, çухалса пĕтнĕ, нумайĕшĕ улшăнса пынă. Анчах илемлĕ формăллă, аван содержаниллĕ фольклор материалĕсем халăх çăварĕнчен, халăх чĕлхинчен тухса ўкме пултарайман, ĕмĕрсем тăршшĕпе усранса, паянхи куна çитнĕ.

Фольклор чĕлхи—илемлĕ чĕлхе; вăл ĕмĕрсем тăршшĕпе якалнă, çивĕчленнĕ, янăравлă пулса пынă. Фольклор чĕлхи—халăх чĕлхи. Вĕсем чĕререн тухнă сăмахсем, пурăнăçа тарăннăн кăтартса паракан сăмахсем пулса тăраççĕ. Ĕлĕкхи халăхăн пурăнăçне, вĕсен шухăш-сисĕмне пĕлесси енчен фольклор нумай пулăшать. Фольклора пирĕн Аслă çулпуç Ленин питĕ пахаланă. Акă мĕн каланă вăл Добровольский пухнă „Смоленский этнографический сборник“ ятлă кĕнекери фольклор материалсемпе паллашса тухнă хыççăн: „...мĕнле интереслă материал. Эпĕ ак çак кĕнекесене васкавлă пăхса тухрăм та, çакна куратăп: çавсене пурне те социальнă-политикăллă пĕтĕçтерме, çавсене пурне те пăхса тухма алăсем çитмеççĕ, е кăмăл çук, пулас, вĕт çав материал тăрăх халăх шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсем çинчен питех те лайăх тĕпчесе кĕнеке çырма пулĕччĕ. Юмахсенче... çав тери лайăх вырăнсем пур. Акă мĕн çине çаврăнтарса пăхтарма кирлĕччĕ пирĕн литература историкĕсене. Вăл халăхăн чăн-чăн творчестви, пирĕн кунсенче халăх психологине тĕпчесе вĕренмелли питех те кирлĕ те паха япала. Халăх творчествинчи тата çав творчествăра халăхăн йышлă массисен ĕмĕрхи кĕрешĕвĕн пĕтĕм тупсăмĕ, шухăшĕпе ĕмĕчĕ витĕрех палăрса тăракан чи кирлĕ те паха элеменчĕсене уçса тупма пире объективлă, наукăллă марксистла анализ кăна май парĕ, пирĕн çамрăк литературоведсем халăх творчествин пысăк пуянлăхĕсем çине тимлĕн çаврăнса пăхма тивĕç“.

Пушкин, Лермонтов, Гоголь, Крылов, Некрасов, Грибоедов, Горький, Островский т. ыт. классиксем яланах фольклор материалĕсене пухма тăрăшнă, вĕсене сăнанă, вăл материалсемпе хăйсен произведенийĕсене çырнă чухне усă курнă. Халăх пурăнăçĕ çинчен фольклор материалĕсене якатса, илемлетсе, сăвăласа, аван юмахсем, поэмăсем çырнă. Ун пеккисем, сăмахран, Пушкинăн „Руслан и Людмила“, „Пулăçăпа ылттăн пулă“ т. ыт. те.

Пирĕн чăваш поэчĕсем те: Ивник, Ухсай т. ыт. те халăх юмахĕсене сăвăласа çырнă: „Кăмака çинчи Иван“, „Телей çулĕ“, К. В. Ивановăн—„Тимĕр тылă“, „Тăлăх арăм“, „Икĕ хĕр“ т. ыт. те.

Фольклор материалĕсене пĕтĕçтерсе халăх поэмисем туни те литературăра нумай. Ун пек произведенисем: „Шах-намэ“, „Калевала“, „Илиада“, „Одиссея“, „Песнь о нибелунгах“, „Эдда“, „1001 ночь“, „Давид Сасунский“ т. ыт. те.

Чăвашсен М. Федоров çырнă „Арçури“ те халăх поэми тума тытăннăскер пулнă. Анчах автор ăна çырса пĕтереймен, пуçламĕшне (пролог) çеç çырса пама ĕлкĕрнĕ.

Фольклорта чĕлхене илемлетекен майсем—танлаштару, эпитет, метафора, олицетворени, гипербола, аллитераци, рифма т. ыт. те калама çук нумай. Ахальтен мар Ленин, Пушкин, Горький писательсене фольклортан вĕренме, этемлĕхĕн ку таранччен тунă культурипе усă курса анлăн ĕçлеме хушнă. „Сăмах ăсталăхĕн пуçламĕшĕ фольклорта, хăвăрăн фольклора пухса, çавăн тăрăх вĕренĕр, çавăн çинче лайăхрах ĕçлĕр. Вăл сире те пире те, Союзри поэтсемпе прозăпа çыракансене те темĕн чухлĕ материал пама пултарать. Иртни çинчен мĕн чухлĕ лайăхрах пĕлĕпĕр, çавăн чухлĕ çăмăлрах, çавăн чухлĕ тарăнрах тата хавасрах хамăр халĕ мĕн тунисене, вĕсем епле пысăк вырăнта тăнисене ăнланса илĕпĕр,“—тенĕ М. Горький Совет писателĕсен 1-мĕш съездĕнче.

Е тата:

„Пушкин „Мускаври просвирнясен“ чĕлхине пит те пысăк хака хунă; вăл хăйĕн нянинчен, Арина Родионовнăран, вĕреннĕ. Калаçу чĕлхине пит ăста пĕлекен Лесков та хăйĕн нянинчен, салтак арăмĕнчен, вĕреннĕ. Пĕтĕмĕшпе илсе каласан, çак хăйсене питех палăртма юратман нянькăсемпе кучерсем, пулăçăсем, ялти сунарçăсем тата ытти йывăр пурăнăç çыннисем литература чĕлхине аталантарас ĕçре хăйсен влиянине палăртни çинчен татăклăнах калас пулать. Анчах литераторсем çак пурăнăçра калаçу чĕлхин стихийлă юхăмĕнчен чи тĕллевлĕрех, вичкĕнрех, шухăш тĕлĕшĕнчен çыпăçуллăрах сăмахсене çав тери тимлĕн тишкĕрсе суйла-суйла илнĕ. Пирĕн кунсенче пурăнакан литераторсем çакнашкал сăмахсене суйласа илес ĕçе туманни вара вĕсен произведенийĕсен пахалăхне нумай чакарать...“ (*Горький*, „Çамрăксемпе калаçни“, 1934 çул).

Çапла вара, халăх чĕлхин, фольклорăн пуянлăхĕ пысăк. Вĕсене суйласа илсе усă курма пĕлмелле. Илемлĕ литература классикĕсем (Иванов К. В., Федоров М. т. ыт. те) фольклорпа пĕлсе, кирлĕ вырăнта усă курнă.

Фольклор, искусствăпа литература пекех, класлă. Класлă обществăра фольклор та класс интересĕнчен пăрăнса, класс кĕрешĕвĕн айккинче тăрса юлма пултараймасть. Кашни класăн идеологийĕ фольклорта уççăн палăрса тăрать. Фольклор урлă та класс кĕрешĕвĕ пырать. Халăх хăйĕн юмахĕ-юррисенче хăй улпутсене, патшасене, пупсене хирĕç пынине кăтартать.

Халăх геройĕ—Иван („Ухмах Иван“ е „Кукша Иван“) çав харампырсене пур çĕрте те çĕнтерет, улталать, çиеле тухать.

Юлашкинчен патша хĕрне илет, патша пулать. Халăха ĕçке, туя чĕнет: ытти патшасем пек тискер мар Иван. Ку ĕнтĕ халăх ирĕк пурăнăç пулассине, государствăна халăх хушшинчен тухнă çынсемех тытса пырасси çинчен ĕмĕтленнине систернĕ.

Пурăнăç улшăнса пынă май, фольклор произведенисем те çĕнĕрен çуралса пыраççĕ. Вĕсем çĕнĕ тапхăрти пурăнăçа кăтартса параççĕ. Акă, сăмахран, çĕнĕрен тухнă пословицăсемпе тупмалли юмахсем:

Пятилетка турат мар,—алпа тытса хуçас çук.

Çунать-çунать—çунса пĕтеймест (электричество).

Кăткăсем çĕлене парăнтарчĕç (рабочипе хресчен).

Юмахсем: „Телей çулĕ“, „Чапаев вилĕмĕ“, „Виçĕ ывăл“ т. ыт. те.

Е вырăссен:

Большой клад—коли в колхозе лад.
В колхозе язык не в зачет,
Кто работает,—тому почет.
На печи заседать,—трудодней не видать.
Береги колхоз,—получишь хлеба воз.
Где пашет сошка,—там хлеба крошка.
Единолично жить,—слезы лить.
Один жил,—в заплатах ходил,
В колхоз пришел,—кафтан нашел.
Ни меры, ни краю колхозному урожаю.

(„Творч. народов СССР“ кĕнекерен.)

Çапла вара, фольклор тĕрлĕ вăхăтри пурăнăçра çуралнă, вăл хăй çуралнă тапхăрти пурăнăçа кăтартать.Çав енчен ĕнтĕ фольклор хаклă материал пулса тăрать. Çавăнпа та ăна пухмалла, сăнамалла, унпа усă курмалла.

Чăваш фольклорне пухас ĕç XIX-мĕш ĕмĕрте пуçланнă. Малтанах ют çĕршыв çыннисем, вырăссен вĕреннĕ çыннисем пухкаланă, каярах чăвашсенчен те пухакансем пулнă (С. М. Михайлов, И. Н. Юркин, Шелеби т. ыт. те).

1900 çулта чăваш чĕлхипе ĕçлекен профессор Н. И. Ашмарин, фольклор пухмалли программа туса, ăна учительсем, чăваш интеллигенчĕсем патне салатнă.

Октябрь революцийĕ хыççăн фольклор пухас ĕç тивĕçлĕ вырăн йышăнчĕ. Ку тĕлĕшпе „Сунтал“ редакцийĕ, Наукăпа Тĕпчев институчĕ вăйлăн ĕçлесе пыраççĕ. Пухнă материалсене уйрăм кĕнекен е статьян пичетлесе кăлараççĕ.

Фольклор шутне çак произведенисем кĕреççĕ: юрă, юмах, ваттисем каланисем (пословицы), тупмалли-сутмалли юмахсем (загадки), ваттисен сăнанисем (приметы), былинăсем тата ытти те. Кашни пайĕ тата хăй темиçе ушкăна пайланма пултарать. Тĕслĕх, юрăсем: ĕç юррисем, туй, ĕçкĕ, салтак, уяв, ташă, ачапăча, çĕнçĕр юррисем т. ыт. юрăсем те. Туй юррине илсен, вăл каллех хăй темиçе тĕрлĕ пулать: хĕрйĕрри, хĕрçуммисен юрри, туй ачисен юрри, хăйматлăх, туй арăмĕсен, мăнкĕрӳ юрри т. ыт. те. Малалла эпир фольклорăн кашни пайне уйрăм илсе пăхăпăр.

## А. ЮРĂСЕМ.

Юрăсем питĕ авалах пуçланса кайнă. Пурăна-киле, культура вăйланнă, чĕлхе аталаннă май, юрăсем те нумайлансах пынă.

Ытти халăхсенни пекех, чăвашсен те юрăсем нумай, вĕсене уллахри çамрăксем те, туй халăхĕ те, хирте ĕçлекен те, выртмара та, вăйăра та, салтакра та юратса юрлаççĕ.

Юрăсене пухса, вĕсем тăрăх кĕнеке çырасси революцичченех тапраннă. Малтанах урăх çĕршыв çыннисем, унтан вырăс çыннисем пухнă. Каярах чăвашсем те пухма пуçлаççĕ.

1909 çултан чăваш юррисене гармонизацилесси пуçланать. Çав çул пуçласа „Пиçнĕ-пиçмен çырлашăн" юрра Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи учитель Дмитриев гармонилене. Ку енĕпе пирĕн халь Воробьев, Лисков, Лебедев, Лукин, Хирбиков т. ыт. ĕçлеççĕ. Халăх хушшинче юрă ăстисем те сахал мар. Сăмахран, Г. Ф. Федоров (Сĕнтĕр р.) 500 ытла юрă пĕлет. Унăн юррисене композиторсем çырса илеççĕ.

Халăх юррисен форми, техники пирĕн чăваш поэзине аталанма нумай пулăшнă. „Арçури", „Нарспи" поэмăсем халăх юрри формипе таччăн çыхăнса тăраççĕ.

Поэзипе пĕрлех хальхи вăхăтра халăх юррисем те çĕнĕрен çĕнĕ тухса пыраççĕ. Çĕнĕ такмаксем (частушки), юрăсем революци хыççăн çав тери нумайланчĕç. Поэтсемпе композиторсем пĕрлешсе юрăсем тăвасси те малти вырăна туха пуçларĕ.

### I. ĔÇ ЮРРИСЕМ.

Ку юрăсем пуринчен ытла эртелпе тумалли ĕçсенче пит кирлĕ. Юрă, ĕçлекенсене хавхалантарса, ĕçе харăс тытăнма пулăшать. Сăмахран, „Сăвай юррине" илер. Ăна сăвай çапнă чух халĕ те юрлаççĕ. Кунта вăл пилĕк-ултă çынна сăвай тукмаккине пĕр харăс йăтса çапма пулăшать. Эртелпе вĕсем: „Хоп, пĕрре! Хоп, иккĕ! Хоп, виççĕ!"—тесе çăмăллăнах йăтса çапаççĕ. Ĕç те юрăпа аван пырать, çăмăлланать, ўркентермест.

Çавăнпа та ал-ура ĕçĕсенче, эртелпе тумалли ĕçсенче мĕн авалран çавăн пек ĕç юррисемпе усă курнă. Ĕлĕк, машинăсем те пулманнипе, пĕр çын тăвайман ĕçе яланах эртелпе тумалла пулнă. Çавăнпа та ĕç юррисем мĕн ĕлĕкренех ĕçпе тачă çыхăнса тăнă, ĕçре пулăшнă.

Ĕç юррисем этемсем авал тискер кайăк пек пурăннă вăхăтрах пуçланнă. Çĕр ĕçĕпе пурăнма пуçласан та, ĕç юррисем тырă акнă çĕрте, утă çулнă çĕрте кирлĕ пулнă.

Кашни ĕçĕн ĕлĕкрен хăйĕн ритмĕ (виçи) пулнă. Сăвă виçи те çавăнтанах пуçланса кайнă. Илĕпĕр сўс тўнине, пир çапнине, авăн çапнине. Вĕсем илемлĕ кĕвĕ пек янăраççĕ: пĕрин хыççăн тепри çапса музыка тăваççĕ, ĕçе çăмăллатаççĕ. Юрă хăвăрт пырсан, ĕç те хăвăртланма пултарнă. Юрăсем хурлăхлă пулни ĕç йывăрринчен килнĕ.

## II. САЛТАК ЮРРИСЕМ.

Ӗлӗкхи юрӑсенче эпир кӑмӑла хуҫакан хурлӑхлӑ юрӑсем нумайӑйине куратпӑр. Йывӑр пурӑнӑҫ савӑнӑҫлӑ юрӑсем тума май паман. Салтак юррисенче те ҫавнах куратпӑр. Чӗререн тухакан хурлӑхлӑ юрӑсемпе вӗсен сӑвви салтака каякансене хӑйсене ҫеҫ мар, кил-йышне те, ял-йышне те, хурӑнташӗсене те йӗртнӗ, мӗншӗн тесен салтак служби ӗлӗк йывӑр пулнӑ. Салтака ӗмӗрлӗхех илсе кайнӑ темелле, 25 ҫул хушши салтакра тытса усранӑ. Ҫапла вара, салтака кайнӑ ҫынӑн ӗмӗрӗ те унтах иртнӗ.

Салтакра вӗсене ҫын вырӑнне шутламан. Аслисем мӗн хушнине кирлӗ-кирлӗ мара та итлемелле пулнӑ. Салтаксене лайӑх ҫуртсене кӗртмен. Ун чухне аллӑксем ҫине: „Салтаксемпе йытӑсене кӗме юрамасть", тесе ҫырса ҫапнисем пулнӑ. Вӗсене выльӑх вырӑнӗнче усранӑ, „тупӑ ҫимӗҫӗ" (пушечное мясо) вырӑнне анчах хунӑ. Хӑйсем тӗллӗн шутлама, мӗн те пулин тума чарнӑ. Ахальтен мар вара „Вуник салтакӑн пӗр качака чухлӗ ӑс пулнӑ" тесе сӑмах каларнӑ ӗлӗк, „салтак" сӑмах чи хӑрушӑ сӑмахсенчен пӗри пулнӑ. Ҫавӑнпа Некрасов:

„И ужас народа при слове „набор"
Подобен был ужасу казни".—тесе ҫырнӑ.

Салтакӑн вӑрӑм, йывӑр служби ҫине тарӑхса ытти писательсем те ҫырнӑ. Акӑ мӗн ҫырнӑ Герцен: „Российӑри ҫар служби йӗрки, хӑйӗн ҫав тери пысӑк срокӗпе, питех тискер те хӑрушӑ" („Былое и думы").

„Вырӑс салтакӗ, хӑйӗн тӑванӗсенчен 24 ҫул хушши уйрӑлса пурӑннӑскер, пурин тӗлӗшӗнчен те ютшӑнать, вӑл хӑйӗн тивӗҫлӗхӗнчен кӑна ютшӑнмасть. Вӑл хӑйӗн тӑван килне ватӑлса таврӑнать. Вӑл таврӑнни хӑех те ӗнтӗ, вӑл хӑйне лайӑх тыткаласси пирки шанчӑклӑ пулать, мӗншӗн тесен отставкӑна айӑпа кӗменнисене ҫеҫ парӑҫҫӗ. Тӑван ялӗнче вӑл хӑй пӗлекен темиҫе старик ҫеҫ тупать. Ҫӗнӗ ӑру ӑна пӗлмест те, унпа туслашмасть" (Пушкин). „Салтак пурӑнӑҫӗ йывӑр, анчах кантра йӑллинчен лайӑхрах",— тет Радищев. Ҫапла ӗнтӗ, вилӗмрен кӑшт ҫеҫ ҫӑмӑл пулнӑ салтакӑн йывӑр пурӑнӑҫӗ.

XIX-ӗмӗрте Барсов пухнӑ салтак юррисене, фольклор материалӗсене вуласан, В. И. Ленин ҫапла каланӑ:

„Какая эта замечательная вещь, какие богатые материалы о военных истязаниях, которые допускали цари, особенно Николай I. Как эти истязания отразились великолепным образом в народных сказаниях и песнях".

Халӗ малалла салтак юррисене пӑхса тухар. Эпир вӗсем тӑрӑх халӑх салтак служби ҫине мӗнле пӑхнине те лайӑх курӑпӑр. Салтак шӑпи пек йывӑр шӑпа та пулман. Акӑ, мӗнле юрланӑ ӗлӗк салтака каякансем:

Кайӑк хурсем каяҫ, ай, картипе,
Кайри мала, тесе, ай, ан калӑр.
Эпир нуша курма, ай, кайнӑ чух,
Кайччӑр, пӗтчӗр, тесе, ай, ан калӑр.

Патшаннах та хули, ай, чул хула,
Чул пулин те чунăм, ай, пĕр туртмасть.
Аттеех те çурчĕ, ай, çĕрĕк çурт,
Çĕрĕк çурт пулин те, ай, чун туртать.
Кăвак лаша çилхи сулахайра,
Хăçан çавранĕ-ши сылтăма?
Çакă килтен тухса кайсассăн,
Хăçан эп килĕп-ши çаврăнса?
Хура чĕкеç килет юр кайсан,
Эпир час килес çук пĕр кайсан...

Çак юрăсем ĕнтĕ салтак службине питĕ йывăр пулнине кăтартаççĕ. Вăрăм срокла служба хăратса „Эпир час килес çук пĕр кайсан",—тесе юрлаттарнă.

Хĕрлĕ Çара каякансен юррисем пачах урăхла. Вĕсене çамрăксем хăйсем Хĕрлĕ Çара юрăхлă пулнипе савăнса, тăван çĕршыва сыхлама тивĕçлĕ пулнипе хĕпĕртесе юрлаççĕ. Килтисем те савăнăçлăн, вĕренме каякан ачине ăсатнă пек, ăсатса яраççĕ.

Совет çамрăкĕсем ĕлĕкхи пек улпутсемпе буржуйсемшĕн, патшашăн пуçа хума каймаççĕ. Вĕсем юнпа çапăçса илнĕ ирĕк çĕршыва сыхлама каяççĕ. Çамрăксем Хĕрлĕ Çара кайманнипе çеç хурланма пултараççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн çĕршывра „красноармеец" сăмах—чи паха ятсенчен пĕри. Вĕсене халăх юратать, мĕншĕн тесен вĕсем çĕршыври лăпкă пурăнăçа, ĕçе, социализм ĕçне сыхласа тăраççĕ. Ахальтен мар вилнĕ пиччĕшĕ вырăнне Хĕрлĕ Çара шăлнĕсем каяççĕ (П. Котельников, Ив. Лагода т. ыт. те).

Хĕрлĕ Çар—пысăк шкул. Унтан таврăнакансем пачах çĕнĕ çын пулса килеççĕ, ялсенче чи активлă çынсем пулса тăраççĕ.

Пирĕн ĕçхалăхĕ граждан вăрçи паттăрĕсене нихăçан та манмасть. Чапаев, Щорс, Лазо т. ыт. те хăйсен пуçне хĕрхенмесĕр этемлĕхе ирĕке кăларассишĕн паттăррăн çапăçса вилнĕ. Вĕсем пире валли пуян та культурăллă, ирĕклĕ пурăнăç туса панă пулсан, пирĕн çĕнĕ пурăнăçра вăйлăн хутшăнса ĕçлемелле. „Пирĕн çынсем мĕншĕн кĕрешнине тата вĕсем пĕтĕм тĕнче историнче мĕншĕн паллă историллĕ çĕнтерӳсем тунине пĕлме кăмăллă та савăнăçлă. Пирĕн çынсем нумай юн юхтарни харама кайманнине, вăл хăйĕн результачĕсене панине пĕлме кăмăллă та савăнăçлă. Çак вăл пирĕн рабочи класăн, пирĕн хресченсен, пирĕн ĕçлĕ интеллигенцин ăс-тăнне хĕçпăшаллантарать, çак вăл тивĕçлĕ савăнăçлă кăмăла малалла ярса çĕклентерет. Çак вăл хамăр вăйсем çине шанассине çирĕплетет тата коммунизмăн çĕнĕ çĕнтерӳсене çĕнсе илме çĕнĕ кĕрешĕве мобилизацилет",—тенĕ И. Сталин.

Хĕрлĕ Çар ретне каякан çамрăксем чи юратнă, чи савăнăçлă юрăсем юрлаççĕ. Акă, тĕслĕхсем:

Анне, маншăн ан макăр,
Пирĕн умра çул такăр.
Такăр çулпа утатпăр,

Хĕрлĕ Çара каятпăр.
Савăн, анне, манпала.
Маншăн эсĕ ан кулян.
Эпĕ каятăп сыхлама
Хамăр тăван çĕршыва.

Мĕншĕн тесессĕн:

Кăмакара кăвар пур,—
Вьюшка хупса хурас мар.
Йĕри-тавра тăшман пур,—
Сыхлăх ĕçне манас мар.

Савнийĕсем те хăйсен маттур каччисене питĕ тулли кăмăлпа ăсатса яраççĕ:

Хутлам-хутлам тилхепи
Сентре çинче вырттăрччĕ.
Чун юратнă сар ачи
Хĕрлĕ Çарта пултăрччĕ.

Пӳрт умĕнчи чиене
Тат-ха, савни, ытларах.
Совет Союз чиккине
Сыхла, савни, хытăрах.

Пирĕн Хĕрлĕ Çара кайма çул çитменнисем те хăйсем ирĕккĕн Хĕрлĕ Çарта пуласшăн ăшаланаççĕ, çул çитессе кĕтеççĕ:

Садра лантăш чечек пур,
Хăçан çеçки тухĕ-ши?
Çара кайма шухăш пур,
Хăçан вăхăт çитĕ-ши?

Вĕрене турта хуçăлсан,
Хурăн турта сыпăнать.
Пичче çартан таврăнсан,
Мана вăхăт çывхарать.

Чипер картус çĕлетрĕм
Пуçра тулли тăмашкăн.
Яш пĕвĕме ӳстертĕм
Хĕрлĕ Çара каймашкăн.

Хĕрлĕ Çарта пирĕн красноармеецсем, социализмла çĕршывăн патриочĕсем пулса, чикĕсене çирĕп сыхлаççĕ, орденсем илме тивĕçлĕ пулаççĕ. Вĕсемпе ялти савнийĕсем те хытă савăнаççĕ, мухтанаççĕ:

Кĕмĕл çĕрĕ пулчĕ, çутă пулчĕ,
Сар хĕрсене пулчĕ юрăхлă.
Манăн савнă тусăм, хура куçăм,
Хĕрлĕ Çара пулчĕ юрăхлă.

Тăри вĕçсе килнĕ,—илтрĕр пулĕ,
Хире чĕп кăларнă,—куртăр пулĕ?
Савни портрет ячĕ,—илтрĕр пулĕ,
Умне орден çакнă,—куртăр пулĕ?

1938 çулхи кĕркунне Хасан кӳлли патĕнчен самурайсене паттăррăн хăваласа яни çинчен те частушка-такмаксем сахал мар хума ĕлкĕрнĕ:

Ан чик, сысна, сăмсуна
Колхоз ешĕл пахчине.
Ан чик пуçна, самурай,
Совет Союз чиккине!

Урса кайнă йыттине
Сăмса урлă патăмăр.
Ирсĕр самурайсенне
Шăлне хуçса ятăмăр.

Хальхи призывниксен юрринчи чи характерлă мотив вăл—тăван çĕршыва тăшмансем килсе тапăнасран куç шăрçине сыхланă пек сыхласа усрасси, çак телейлĕ шăпана тивĕçлипе пурăнăçласси:

Сысна çерем çĕтесрен
Тимĕр карта тытăпăр.
Тăшман килсе кĕресрен
Ялан сыхă тăрăпăр.

Совет Союзне тапăнма йыхăррине тăшмансем ĕнтĕ аванах пĕлеççĕ. Ăна Хасан кӳлли çывăхĕнче пулнă ĕçсем те аван кăтартса пачĕç. „Хасан кӳлли пулмарĕ Япония кулли". Ворошилов ун пирки çапла каланă: „Ку чечекĕ çеç-ха, çырлисем малалла пулĕç!"—тенĕ.

Пирĕн пур—çĕршыва сыхлаканĕ те, сыхламалли пурлăхĕ те, сыхламалли хĕçпăшалĕ те:

Çĕршыва савни тесех саватпăр,
Сыхласа усратпăр анне пек. (Лебедев-Кумач.)

## III. ТУЙ ЮРРИСЕМ.

Кашни халăхăнах мĕн авалтанпа çынсем мăшăрланнине—качча кайнине, авланнине асăнса уявсем—праçниксем, туйсем туса ирттереççĕ. Революци хыççăн кивĕ туй йăлисем сахалланчĕç, вĕсен содержанийĕ пĕтĕмпех улшăнчĕ.

Хĕрарăм ĕлĕкхи вăхăтра, пĕр качча кайсан, кăмака кукринчен ниçта та тухайман. Унăн кун-çулĕ кил хушшинчех иртсе кайнă. Упăшки ăна йывăр ĕçпе хăшкăлтарнă, ятланă, хĕненĕ; хĕснĕ ăна хунямăшĕ те... Ахальтен мар: „Хĕре калам, кинĕм илттĕр",—тенĕ ваттисен сăмахĕ çӳренĕ фольклорта. Качча кайнă хĕрарăмăн асаплă пурăнăçне эпир литература урлă та аван куратпăр. Сăмахран, Çеçпĕлĕн „Чăваш арăмне", „Иртнĕ самана",

К. В. Ивановăн „Тимĕр тылă“, „Нарспи“ произведенисенче т. ыт. те. Хĕрарăмăн ун чухне нимĕнле право та пулман. Хĕрарăм халăх хушшине тухма пултарайман. „Хĕрарăмăн çӳçĕ вăрăм та, ăсĕ кĕске“,—тенĕ. Çавăнпа та ĕлĕкхи саманара ашшĕ-амăшĕсем хăйсен хĕрне юратман çынна ирĕксĕр качча парсан, хĕр вĕсене хирĕç тарăхса, хурлăхлă юрăсем юрланă:

Кӳл хĕрринчи йăмрине
Кăçал касса ямасан,
Пуртă витмĕ, терĕр-им?
Ах, аттеçĕм-аннеçĕм,
Кăçал хĕрĕре памасан,
Ĕмĕр каймĕ, терĕр-им?

Хальхи вăхăтра Совет Союзĕнчи çамрăксем хăйсем килĕшнĕ тăрăх мăшăрланаççĕ. Вĕсене ашшĕ-амăшĕ те хирĕç мар. Мăшăрланакан çамрăксем тавра халь ӳсĕр çынсем мар, эрех карланкисем мар, укçашăн çунакан йăскар карчăксем мар,—колхозниксем, учительсем, агрономсем, летчика, инженера тухнă тăванĕсем, тухтăра тухнă пĕлĕшсем, хурăнташсем, ял-йышсем вăрăм, телейлĕ ĕмĕр сунса савăнаççĕ.

## IV. ÇĔНĔ ЮРĂСЕМ.

Октябрь революцийĕ хыççăн халăх ăс-тăнĕнче те пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Ĕçхалăхĕн шухăшĕ халь—çĕршыва вăйлатасси, коммунизм тăвасси. Çавăнпа та хурлăх çинчен мар юрлаççĕ юрăра,—телейлĕ пурăнăç кĕвви шăранать халăхра.

Малтанхи тапхăрта пирĕн кивĕ форма, кивĕ çемĕ ăшне çĕнĕ содержани панă юрăсем чылайччĕ. Халĕ вĕсем сахал: пачах çĕнĕрен тухнă, хамăр композиторсем, поэтсем, халăх хушшинчи талантсем тунă юрăсем сарăлса пыраççĕ.

Вĕсенче хальхи пурăнăç çинчен, хальхи çынсем çинчен юрлаççĕ. Пирĕн юратнă Ленин, Сталин çинчен, Совет Союзĕн геройĕсене юратса юрлакан юрăсем Совет Союзĕн пур кĕтессисенче те, пур халăхсен чĕлхипе те янăраççĕ. Вăл юрăсем ĕçхалăхне кĕрешме, ĕçлеме чĕнеççĕ, ĕçхалăх умне ыранхи задачăсене кăларса тăратаççĕ. Кашни юрри пысăк шухăша çав тери янравлă каласа парать:

Улма чăпар ут эп утланам-и,
Инçе кăна çула эп тухам-и;
Эх, пырса кĕрем-и эп Мускава,
Улма чăпар утăма вылятса.
Хĕрлĕ площадь çинче, ай, мавзолей,
Пырайса тухам-и эп вăл тĕле.
Мавзолея кĕрсе эп курам-и,
Ленин атте çине эп пăхам-и.
Шухăшăмсем ман аслă Кремльре,
Унта пирĕн çулпуç—кăвар чĕре,
Сталин патне кĕрсе эп тухам-и,
Колхозсенчен салам эп калам-и.

Улма чăпар ут эп утланам-и,
Инçе кăна çула эп тухам-и.
Эх, килсе кĕрем-и эп колхоза,
Улма чăпар утăма вылятса.
Эх, килсе кĕрем-и эп колхоза
Сталин янă чи ăшă салампа.

Е тата: Пурăнмашкăн пурнăç тулăх,
Юрлама та пит аван.
Советсен çĕршывĕ тăрăх
Кайтăр юрă,
Юрă кайтăр ян та ян!

Е тата: Уйра тăри юрласан
Килет уйăн илемĕ.
Эпир ĕçе тухсассăн,
Килет ĕçĕн илемĕ.

Халăх хушшинче юрлакан çĕнĕ юрăсене поэтсемпе композиторсем якатса туни те нумай. Тĕслĕх:

Чĕнтĕрленĕ кĕпер Атăл çинче,
Унăн сăнĕ тăрă шыв çинче.
Аслă Сталин,
Аслă Сталин Мускав хулинче.
Унăн сăнĕ,
Унăн сăнĕ кашнин килĕнче...

(„Аслă Сталина пахалаcа".)

Шурă тутăр ярапи
Халь те арча тĕпĕнче.
Сталин юлташ сăмаххи
Ĕмĕр чĕрем варринче...

(„Айтăр юрлар савăнса".)

Хĕрлĕ сатин саппунĕ
Пит килĕшет хĕрсене.
Конституци—çĕн закон
Савăнтарать чĕрене...

(„Сталинла Конституци".)

Ку юрăсенче эпир вĕсене халăх юррисен формипе тунине куратпăр. Вăл юрăсем нумайĕшĕ 7 сыпăклă.

Кунсăр пуçне, халăх çĕнĕ юрăсене ĕлĕкхи юрă форми сăмахĕсемпе, кĕввипе тунине те куратпăр:

Тĕслĕх: Çĕмĕрт çеçки çурăлсан,
Вăрман витĕр курăнать.
Ленин çутнă çутăсем
Ĕмĕр сӳнми çутăлаç.

Е тата: Вăрман урлă каçрăмăр
Вĕрене çулçи çуттипе.

Хир-хир урлă каçрăмăр
Сарă тулă пуссипе.

Ял-ял урлă килтĕмĕр
Электрицă çуттипе.

Çак колхоза кĕтĕмĕр
Ленин юлташ вĕрентнипе.

Тулли телей куратпăр
Сталин ертсе пынипе...

(„Сталин юлташ çулĕпе".)

Хаваслă та пуян, телейлĕ те илемлĕ пурăнăç хаваслă та илемлĕ, çĕнĕ, ăшă кăмăлпа çырнă юрăсем ыйтать. Пурăнăçăн кашни событийĕсене, çĕнтерĕвĕсене мухтакан юрăсем сахал мар пирĕн. Çапах та татах нумайрах юрăсем юрлас килет.

Мĕншĕн тесен:

Пурăнма пулăшать пире юрă,
Çĕнтерме вăл пире пулăшать.
Кам утать юрăпа пурнăç тăрăх,—
Вăл нихçан та ниçта та çухалмасть.

## ХАЛĂХ ЮРРИСЕН ТЕХНИКИПЕ ФОРМИСЕМ.

Халăх юррисен тĕп форми тăватă йĕркеллĕ куплет (строфа) пулса тăрать. Вĕсен малтанхи икĕ йĕрки час-часах çутçанталăк çинчен, кайранхи икĕ йĕрки пурăнăç çинчен калать.

Шурă тутăр ярапи
Халь те арча тĕпĕнче.
Сталин юлташ сăмаххи
Халь те чĕрем варринче.

Ку юррăн икĕ пайĕ пĕр-пĕринпе параллелизм, танлаштару йĕркипе çыхăнса тăрать.

Халăх юррисем хушшинче темиçе вариантлă юрăсем питех те нумай.

Юрăсенче тата хушса юрламаллисем те тĕл пулаççĕ.

Тĕслĕх:

Çурхи хĕвел ăшăтсан,
Çĕмĕрт çеçки çурăлсан—

*Хушса юрламалли:*

Авăтать куккук,
Авăтать куккук,—
Янăрать вăрман.

Пирĕн бригада хире тухсан,
Ĕç юррине тытăнсан—
Авăтать куккук...
Пирĕн бригада ĕçе тухсан,
Трактор ĕçе тытăнсан—
Авăтать куккук...
Пирĕн бригада канма ларсан,
Канăç юррине тытăнсан—
Авăтать куккук...

Ĕлĕкхи варианчĕ унăн çапла пулнă:

Авăт, куккук, хытăрах,
Чарăнассу инçе мар—
Авăтать куккук...
Пăхса юлăр, ай, тăвансем,
Уйăрласси инçе мар—
Авăтать куккук...

Халăх юррисен сăввисем 7 сыпăклă, терĕмĕр. Ку—унăн тĕп форми пулса тăрать. Анчах çичĕ сыпăкран сахаллисем е нумайăисем те тĕл пулаççĕ. Хăш чухне 8—9—10, 11—12—13—14 сыпăка та çитеççĕ. Вĕсем час-часах 7 сыпăклă сăвăсене тăсса юрланинчен пулса кайнă. Сăмахран, çак тĕслĕхсене илер:

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
Шăнкăрчă чĕппи шыв ĕçет.
Чĕкеç чĕппин мĕн ĕç пур?
Тăванпа тăван савăнать,—
Çичĕ ютăн мĕн ĕç пур?

Ку йĕркесенче çичшер сыпăк. Ăна тăсарах юрласан, çапла пулать:

Шăнкăрах та шăнкăр, ай, шыв юхать,—10
Шăнкăрчăн та чĕппи, ай, шыв ĕçет...—10

Е тата тăссан:

Шăнкăр-шăнкăрах кăна тăр шыв юхать,—11
Шăнкăрчăн хура чĕппи халь шыв ĕçет—11

Малалла халăх юррисен рифмисене пăхса тухар. **Рифма** тесе сăвă йĕркисем пĕр пек пĕтнине е пĕр пек илтĕннине калатпăр (хурама—турама, карăш—харăс). Халăх юррисенче çав тери аван, янăравлă рифмăсем тĕлпулаççĕ, хăш чух вĕсем йĕрке варринче пулаççĕ. Ун пек рифмăсене шалти рифмăсем, теççĕ. Юрăсенче час-часах 1-мĕшпе 3-мĕш, 2-мĕшпе 4-мĕш йĕркесем рифмăланаççĕ.

Тĕслĕх: Хура лаша çилхине (а)
Ийĕс турапа турарăм. (б)
Хампа варлă ачине (а)
Сар мăйăрпа усрарăм. (б)

Рифма кунта **а б а б** пулать. Ун пеккине **перекрестная рифма** теççĕ.

Анчах рифмăсем час-часах пĕр пек сăмахсемпе пулаççĕ:

Пурçăн тутăр пурччĕ ман,
Çÿçи çукки пĕтерет.
Чунăм савни пурччĕ ман,
Ялта çукки пĕтерет.

**Хăш чухне 3**-мĕш йĕрке рифмăланмасăр юлать:

Хусан тутри шур тутăр,
Çыхас килет, мĕн тăвас?
Ял варринчи сар ачи,
Курас килет, мĕн тăвас?

**Тата рифмăсем** виçĕ **йĕркере** те пĕр пек пулни **пур**:

Вуник куккук пĕр карăш
Авăтаççĕ пĕр харăс.
Çакă ялăн хĕрĕсем
Сăв калаççĕ пĕр харăс.

**Тăвата йĕрки** пĕр пек пĕтнисем те пур:

Кÿлес-тĕк кÿлес лашине,
Пĕкĕрен çÿлĕ пуçлине.
Çаврас-тăк çаврас ачине,
Пĕчĕкрен шутлă ÿснине.

**Юнашар** рифмăсем те тĕл пулаççĕ:

Улăх тăрăх ут çултăм,
Улма йывăççи тĕл пултăм...

1-мĕшпе 4-мĕш, 2-мĕшпе 3-мĕш йĕркесем рифмăланни **халăх** юрринче çук та пулмалла; пулсан та питĕ сахал, **мĕншĕн тесен** ун пек рифмăна пуçра тытма та йывăр.

Шалти рифмăсем те юрра илемлетсе тăраççĕ:

Лашисене пăхăр-ха,
Пĕкĕрен çÿлте пуçĕсем.
Ачисене пăхăр-ха,
Хĕрсем çинче куçĕсем.

Эп кай**мăттăм** вăрмана,
Хура çырла илĕртет.
Эп тух**мăттăм** улаха,
Сарă савни илĕртет.

**Кусемсĕр** пуçне, чăваш юррисем аллитераци, ассонанс **евчен питех** те пуян. Юрăсене варринче, тата хыçĕнче çеç мар,— малта та пĕр пек янăрамалла тăваççĕ, сăмахсене пĕр пек сасăсемпе пуçласа юрлаççĕ, сăвăсене çав тери илемлĕ, янăравлă **тăваççĕ.**

Тĕслĕх: Самартан илтĕм сар лаша
Савнă çĕре çÿреме,
Чĕмпĕртен илтĕм чĕн йĕвен
Чĕннĕ çĕре çÿреме...

Акăш ăçта—Атăлта.
Чĕппи ăçта—Чĕмпĕрте...

Турти тăрăх тар юхать,
Çилхи витĕр çил вĕрет,
Пĕкки витĕр пĕлт юхать...

**Аллитерацисем** кашни юрăрах пур темелле. Юрăсем вăл еиччен питĕ пуян. Халăх та вĕсене хытă юратать, юрланă чух чăсах эрешлесе хурать. Аллитераци юрăсене илем кĕртсе тăрать. Çавăнпа вĕсемпе поэтсем те усă кураççĕ.

Е тата усă сасăсем те (**у, и**) пĕр пек пулнине илер (ассонанс):

Чуп, чуп, утçăм, чуп, утçăм,
Уйра шур юр пур чухне.
Çăварни çуни—çут çуни,
Çутти юлтăр çул çине.

Хисеплесе юрланине кăтартма юрăсенче **и, çăм, çĕм, семинччĕ т.** ыт. аффикссемпе те усă кураççĕ. Тĕслĕх:

Ах, аттеçĕм, аннеçĕм,
Ялан ырă аннеçĕм!..

Вăрман хĕрĕнчи ват юман,
Çулçи пĕр пек сарлинччĕ.

Хуçа килне хуçа пулса
Хам кĕрем-и?..

Эпир иккĕн пĕр мăшăр,
Сассем пĕр пек тухинччĕ.

Халăх юррисене мĕнле виçепе çырнине сăнассипе халиччен чылай çынсем ĕçленĕ. Сăмахран, Фукс, Ритих, Корш, Магницкий, Ашмарин т. ыт. те. Фукс, юрăсене сăнаса, вĕсенче тоника виçи пуррине те асăрханă. Чăваш юррисем силлабико-тонически стихсем пулса тăраççĕ. Вĕсен силлабика майлă сыпăксем нумайĕшĕн пĕр пек: çичшер сыпăк, ударени йĕрке вĕçĕнче пулаканни те нумай. Тоника майлă, ударенисем йĕркере черетленсе пыни те уççăн палăрать, анчах тĕрĕс черетленнисем нумай мар—хутăш виçепе пулаççĕ; вĕсене таса ямб, хорей, анапест т. ыт. тесе калама çук.

Çак куплетсене виçе (ритм) енчен сăнар:

Вуник куккук пĕр карăш
Авăтаççĕ пĕр харăс.
Çакă ялăн хĕрĕсем
Сăв калаççĕ пĕр харăс.

Эпир ку юрă силлабика законĕнчен пăрăнса тоника картине кĕнине куратпăр. Силлабикăри пек унта пуринче те 7 сыпăк, анчах вăл тĕп закон мар. 7 сыпăклă сăвăсем тоникăпа çырнисем те тĕл пулаççĕ.

Тĕслĕх:

Тăп-тăрă уйăхлă каç.
Çăлтăр çӳлте пит нумай... (*Уйăп*).

Чи пысăк уйрăмлăхĕ кунта ударенире. Кунта ударени силлабикăри пек хыçала ӳкмест, йĕрке тăршшипех пырать.

Пĕрремĕш йĕркере ударени 2, 4, 6 слог çине ӳкет: виçĕ стопаллă ямб пулса тухать, 2-мĕш йĕркере 3, 6 слогсем çине ӳкет, икĕ стопаллă анапестпа килĕшет. Халăх юррисенче ударени те хыçалта, слог шучĕ те 7-шер. Тĕслĕх:

Эп каймăттăм вăрмана,
Хура çырла илĕртет,
Эп тухмăттăм уллаха,
Сарă савни илĕртет. (*Халăх юрри.*)

Пуш уйăхăн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшатса,
Силпи чăваш ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса. („*Нарспи*".)

Халĕ пирĕн поэзире тоника силлабикăран малти вырăна йышăнчĕ. Тоникăпа çырнисем нумай. Чăваш чĕлхи законĕсем те, ударени правилисем те тоникăпа килĕшеççĕ, унпа çырма май параççĕ.

## Б. ЮМАХСЕМ.

Юмахсем кашни халăхăнах пур. Тем çинчен те калаççĕ вăл юмахсем: паттăрсем çинчен, пуп, пуян, патша çинчен, выльăхсем, тискер кайăксем, çил, хĕвел, асамăç т. ыт. çинчен те. Юмах та класс кĕрешĕвĕпе çыхăнса тăрать. Ĕçхалăхĕн юмахĕ хăйĕн ĕлĕкхи йывăр пурăнăçĕ çинчен, вăл патшана, пупсене, пуянсене курайманни çинчен калать. Ĕлĕкхи вăхăтра кивĕ йĕркерен уççăн кулса тăрăхлама пултарайман пирки, ĕçхалăхĕ юмахра та пулин юптарса, хăйĕн тăшманĕсенчен кулнă, вĕсене ылханнă. Ăна эпир „Нуша", „Пуянпа чухăн", „Пуппа тарçи", „Сăвăр халлапĕ", „Чухăн Мĕтри", „Амаçури", „Ăслă хĕр", „Тимĕрçĕ ачи" т. ыт. юмахсенче те куратпăр!

Юмахсенче нумай çĕрте халăх паттăрĕ (Иван, Кукша Иван, Ухмах Иван... т. ыт. те) пуринчен те ăслă, чее, хăй ĕçне тума пултарнине куратпăр. Çĕрĕ те, вăрманĕ те, йывăçĕ те, упи те, кайăкĕ те, пулли те, ракĕ те, кĕмĕл çĕрĕ те, лаша çилхийĕ те—пур те Ивана пулăшаççĕ, ун майлă ĕçлеççĕ. Таса чĕреллĕ паттăра тĕнчере пурте юратаççĕ.

Пĕр Иван йышши паттăрсем çеç, умри инкексене çĕнтерсе, çитес çĕре çитме пултарнă. Телей çулне тупас пулсан, юмахсем умри йывăрлăхсемпе, пурăнăçри пусмăрлăхпа кĕрешме кирлине кăтартнă.

## ХАЛЬХИ СОВЕТ ЮМАХĔСЕМ.

Революци хыççăн çĕнĕ пурăнăçра çĕнĕ юмахсем туха пуçларĕç. Ку юмахсене çĕнĕ паттăрсен, пирĕн пограничниксен, Ленин, Сталин образĕсем кĕрсе пыраççĕ. Юмахсенче „Телей çулне тупса паракан „ăмăрткайăксене“ халăх юратса асăнать. Çĕнĕ юмахсем телейлĕ çĕршыва сыхлакан ывăлсем, хĕрсем çинчен калаççĕ („Виçĕ ывăл“, „Чапаев вилĕмĕ“ т. ыт.).

Ĕмĕрсен ĕмĕчĕ, халăхăн ĕлĕкхи юмахĕсенчи ĕмĕчĕ пурăнăça кĕчĕ. Халĕ халăх чĕрине хăратакан çул юппинчи юпа çук. 12 пуçлă „çĕленсем“, „асамçăсем“... халь çук. Юмахра асăннă „сĕт кӳлĕсем“, „пыл тăвĕсем“, темле çимĕç те паракан сĕтел çиттисем, вĕçекен кĕççесем (ковер) т. ыт. пурăнăça кĕчĕç. Ĕçхалăхĕ пуян та культурăллă пурăнăç çулĕпе коммунизм патнелле утать.

Халĕ çĕнĕ совет юмахĕсене уйрăммăн пăхса тухар.

**„Телей çулĕ“.** Ку юмахра йывăр пурăнăçпа пусмăрта тертленсе пурăннă çынсем телей пуррипе çуккине шырама кайнине катартнă. Телей ăçтине шăпчăк та, уйăх та пĕлмест. Хĕвел çеç телей шыракансене пĕр çулпа кайса, çул юппине çитме хушать.

„Унта нумай пĕлекен ăмăрткайăк телей çинчен калĕ“,—тесе ярать. Кайсан-кайсан, телей шыракансем икĕ старике тĕл пулаççĕ: вĕсем тĕнче тĕрĕслĕхĕн кĕнекине çыраççĕ иккен. Унтан малалла каяççĕ, ăмăрткайăк шăлнĕне кураççĕ. Телей çулĕ çинче çĕлен выртать-мĕн. Анчах хăй тĕллĕн касакан хĕç каснипе 9 пуçлă çĕлене вĕлереççĕ те, пурăнăç лайăхланать: тырăсем те, ытти çимĕçсем те лайăх ӳсеççĕ. Каярах, çав ăмăрткайăк вилни çинчен илтсен, телей шыракансем хытă хуйхăраççĕ. Ку юмахри телей çулĕ—революци çулĕ. Буржуазирен влаçа туртса илнипе çеç ĕçхалăхĕн лайăх пурăнăç пулма пултарать. Телей çулне тупса паракан стариксем—Маркспа Энгельс, ăмăрткайăк—Ленин.

Телей çулне тупассине шанмасăр килĕсене каялла таврăннă çынсем кĕрешӳрен хăракан çынсем пулса тăраççĕ. Çĕленпе çапăçнă чух вилнисем ирĕклĕхшĕн, революцишĕн вилнисем пулаççĕ (Чапаев, Щорс, Лазо, Руднев, Пархоменко..., пирĕн Хĕрлĕ Çар паттăрĕсем т. ыт.)

**„Ленин тĕрĕслĕхĕ“** юмах та çавăн майлах. Кунта икĕ тăван Россия тăрăх телей шырама тухса каяççĕ. Телей çинчен калатăп тесе, пан, пуп, улпут çаксене пĕрер çул ĕçлеттереççĕ, анчах тĕрĕслĕх çинчен шарламаççĕ: пансене пăхăнса ĕçлеме, турра кĕлтума кăна вĕрентеççĕ. Шăлнĕ вара, аптăраса, килне таврăнать. Асли татах чăнлăх шырать, фабрикăна ĕçлеме кĕрет. Унта рабочисем тĕрĕслĕхе пĕлекен пĕртен-пĕр çын—Ленин пурри çынчен, вăл Питĕрте пурăнни çинчен калаçнине илтет. Ленина шыраса тупать. Ленин: сирĕн тĕрĕслĕх хăвăртах, тет. Рабочисемпе хресченсен пуянсене, пупсене, фабрикантсене хирĕç кĕрешмелле, вĕсене сирпĕтсе ямалла, тет. 1917 çулта Ленин тĕрĕслĕхĕ пурăнăça кĕчĕ. Юмахсенче телей, тĕрĕслĕх шыракансем, юлашкинчен, ăна тупрĕç. Некрасов асăннă „Саплăклă“, „Тырăсăр“, „Çимен-

лĕх“ ялсемпе „Чăтмалли хуйăх“ уезчĕсем пирĕн çĕршывран çухалчĕç.

**„Лашасăр Кĕркури трактор хуçи пулни“.** Чухăн Кĕркури ĕлĕкхи вăхăтра лаша тытса курайман. Лайăх пурăнăç унăн картишне кĕрсе курман. Революци хыççăн, çынсем колхозсем туса лайăх пурăнăçпа пурăннине курсан, вăл та хăйсен ялĕнче колхоз тума чĕнет. Хăй тракторист пулать. Юмах революци хыççăн вĕренме, çын пулма çул уçă пулнине кăтартса парать.

**„Чапаев вилĕмĕ“.** Ку юмах граждан вăрçи паттăрĕ Чапаев епле вилни çинчен калать. Чапаев, салтака кайнă чух, çул май кукамăшĕ патне кĕрет. Лешĕ ăна кĕмĕл çĕрĕ парса ярать: вăл çĕрĕ пулсан, çын çĕр çинче ниçта та вилмест, тет, анчах шывра çĕррĕн хăвачĕ пĕтет, тет. Чапаев шыва кайса вилет. Анчах Чапаев çĕрĕ пирки мар вилет ĕнтĕ! Чапаев шывра вилнĕ пирки юмахне çапла шутласа кăларнă. Кĕмĕл çĕрĕ темле хăватлă пулни—юмахран илнĕ япала. Ĕлĕкхи юмахсенче ун йышши „çĕрĕсем“, „силлесен укçа тăкăнакан çĕлĕксем“ нумай пулнă. Куна та çавăнтанах илсе усă курнă.

**„Виçĕ ывăл“.** Ку юмах пограничниксен, красноармеецсен пурăнăçне, паттăрлăхне кăтартать. Пĕр çыннăн виçĕ ывăл пулнă: асли—флотра, вăталăххи—летчик, кĕçĕнни—пограничник. Пиччĕшĕсем службăран таврăнаççĕ. Шăлнĕ темшĕн час таврăнаймасть, ăна кĕтеççĕ. Унтан çыру илеççĕ. Çырура: „Сирĕн герой усал тăшмансен аллинчен вилчĕ“,—тенĕ. Вара икĕ пиччĕшĕ Сталинран шăллĕ вырăнне чикĕ сыхлама кайма ыйтаççĕ. Сăрт хушшинчен „чĕрĕ шыв“ тупса, вилнĕ шăлнĕне чĕртеççĕ. Пурăнсан-пурăнсан, чикĕри тăшмансем, çак хăйсем вĕлернĕ пограничник каллех чикĕре тăнине асăрхасан, тĕлĕнсех каяççĕ. Пуçлăхĕсем патне чупса кайса, мĕн курнине каласа кăтартаççĕ, Совет Союзне нихăçан та çĕнтерейрес çук, тесе хăраса ӳкеççĕ. Çапла, Совет Союзне çĕнтерес çук. Юмахринчен те ирттерсех телейлĕ пурăнăç тăвакан ĕçхалăхĕ хăйĕн ирĕк пурăнăçне çĕлен-калтасен аллине текех нихăçан та памĕ. Октябрьти социализмла Аслă революци халăхăн ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне, ĕмĕр-ĕмĕр кĕтнĕ шанчăкĕсене пурнăçа кĕртрĕ. Патша саманинчи тискер пусмăрта асапланса пурăнакан халăх хăюллă та аслă паттăрсем пуласса ĕмĕтленме пĕр самантлăха та пăрахман. Вăл юмахри пек илемлĕ çĕршывсем, ирĕклĕхпе чăнлăх тата телей йăлкăшса тăракан çĕршывсем, ковĕр-самолетсемпе скороход-атăсем, „асамлă“ йĕкесем пуласса ĕмĕтленнĕ. Ун чухне вĕсем ĕмĕтсемпе юмахсем çеç пулнă. Халь ĕнтĕ пирĕн Совет çĕршывĕнче юмахсем чăн-чăн пурăнăç пулса тăчĕç, халăх ĕмĕчĕсем пĕтĕмпех пурăнăçа кĕчĕç.

## В. ТУПМАЛЛИ (СУТМАЛЛИ) ЮМАХСЕМ.

Тупмалли юмахсем—образлă, метафорăпа каланă предложенисем. Кунта пĕр япала çинчен калани урăх япалана пĕлтерет; вăл мĕне пĕлтернине шухăшласа тупмалла. Çавăнпа ăна тупмалли юмах тенĕ. Тупмалли юмахсем кашни халăхăнах пур. Вырăссен—„загадки“, тюрксен—„тапмача“ (тупмалли тенинех пĕлте-

рет) т. ыт. те. Вĕсем çыннăн ăс-тăн çивĕчлĕхне вăйлатма пулăшаççĕ. Çавăнпа ăна „головоломка“ (пуçа ватмалли) тенĕ. Вĕсемпе ĕлĕкех усă курнă.

Тĕслĕх:

1. Пулли шывра, хӳри тулта (*курка*).
2. Юнĕ пур, чунĕ çук (*палан*).
3. Шуса пырать, йĕрĕ юлмасть (*тилĕ*).
4. Тимĕр йытă кил сыхлать (*çăра*).

Тупмалли юмахсенче ахаль япаласене чĕрчунсем пек кăтартса пани те пур:

1. Çуначĕсемпе хăлаçланать, вĕçсе каяймасть (*арман*).
2. Пĕчĕк инке хĕрĕх хут кĕпе тăхăннă (*купăста*).

Тата чĕрчунсене ахаль япала пек кăтартса панисем те пулаççĕ.

Тĕслĕх:

1. Çулла кăвак, хĕлле шурă (*мулкач*).
2. Пĕр вĕçĕ ухват, тепĕр вĕçĕ çулăк, варри ырçа (*ĕне*).

Тупмалли юмахсене кашни халăх хăй пурăнăçĕнче çывăх тăракан япаласенчен тунине курма пулать. Вĕсем халăх мĕн ĕçпе пурăннине, çутçанталăкпа пурăнăç çине мĕнле пăхнине те кăтартса параççĕ, çавăнпа та хăшпĕр тупмалли юмах хăш вăхăтра, хăш ĕмĕрте тухнине те пĕлме пулать.

Тĕслĕхшĕн çаксене илер:

1. Нумай пулмасть çуралтăм, ват карчăка улăштартăм (*плуг*). Ку—плуг тухнă, сухапуç кивелнĕ вăхăтра тухнă тупмалли юмах.

2. Хĕрĕх йывăçăн пĕр тăрă (*авăн йывăççи*). Ĕлĕкрех тырра авăнпала типĕтсе çапнă. Çăмахĕ те çавăнтан юлнă.

3. Çăкалăх витĕр юр çăвать (*çăнăх аллани*).

4. Çăрттанĕ сиксе пырать, Атăлĕ шăнса пырать (*пир тĕртни*).

XVI—XVII ĕмĕртен пуçласа чăвашсене те христос тĕнне кĕртме пуçлаççĕ, пупсем тата иконăсем—халăхăн курайман япалисем пулса тăраççĕ. Çавăнпа та вĕсем тупмалли юмахра та палăрса юлнă.

Тĕслĕх: 1. Пирĕн килте ют çын пур (*икона*).
2. Çиет, ĕçет,—ĕçет, çывăрать (*пуп*).
3. Вăрăм çӳçлĕ упăте (*пуп*).

Кунсăр пуçне, хальтерех пулса пыракан, хальхи пурăнăçа, хальхи çĕнĕ япаласене пĕлтерекен тупмалли юмахсем те чылай тухса пыраççĕ. Тĕслĕх:

1. Пĕр краççин пĕтĕм яла çутатать (*электричество*).
2. Хăй пĕрре çеç, пĕтĕм яла ăслăлатать (*учитель*).
3. Пуçĕ çук,—этемрен нумай пĕлет (*кĕнеке*).

4. Чунсăр, юнсăр—юр юрлать (*Купăс*).
5. Çӳлте сывлăшра вĕçет, канма шыва ларать (*гидроплан*).
6. Алăсăр-урасăр çӳретĕп, тимĕр çинче чупатăп (*поезд*).

## Г. ПОСЛОВИЦĂСЕМ.

Пословицăсем (ваттисен сăмахĕсем)—калаçура час-часах усă курнипе çирĕпленсе ларнă кĕске, образлă, тарăн шухăшлă предложенисем. Вĕсем пурăнăçра ват çынсем вĕрентсе каланă, ĕмĕрсем тăршшĕпе якалса, çивĕчленсе пынă сăмахсем.

Акă ĕçхалăхĕн тĕрлĕ ĕмĕрти йывăр пурăнăçне кăтартакан пословицăсем:

1. Çип ăçтан çинçе, çавăнтан татăлать.
2. Турри вилĕме, пуянĕ выçлăха кĕтет.
3. Мула пăхса качча ан кай.
4. Чăн сăмахăн суйи çук.

Ĕçхалăхĕн пословицисенче çынна ĕçчен, йĕркеллĕ пулма, пĕрлешсе ĕçлеме вĕрентсе каланисем те нумай.

Тĕслĕх:

1. Иккĕн икерчĕ çиме аван, вуниккĕн авăн çапма аван.
2. Пĕр çын сурать—типсех пырать, халăх сурать—кӳлĕ пулать.
3. Ӳркенмен—ăста пулнă, тет.
4. Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр.
5. Çич хут виç те пĕрре кас.
6. Паян тумалли ĕçе ырана ан хăвар.

Пословицăсенче те эпир аллитераци, рифма, ритм пуррине курма пултаратпăр.

Тĕслĕх:

1. Ялан ятпа çӳресен, ялти вата ятламасть.
2. Тухман çын тухсан, тăман тухать, тет.
3. Шикли шикленнĕ, кĕрĕкне пĕркеннĕ.
4. Нумай пурăнатăн,—нумай куратăн.

Пословицăсем икĕ пайран тăрса, йĕкĕр членлă та пулаççĕ.

Тĕслĕх:

1. Йĕппи ăçта—çиппи унта.
2. Уй куçлă—вăрман хăлхаллă.

Хальхи вăхăтра çĕнĕ пословицăсем тухса пыраççĕ. Тĕслĕх: Колхозăн пӳлми—çулла та хĕлле те иксĕлми т. ыт. те.

## IV. ЧӐВАШСЕН ОКТЯБРЬ РЕВОЛЮЦИЧЧЕНХИ ЛИТЕРАТУРИ.

Октябрь революциччен тӗрлӗ нацисен литературине ӳсме ирӗк пулман. Тӗн кӗнекисем, патшана, патша влаҫне ырласа ҫырнӑ кӗнекесем кӑна ирӗккӗн сарӑлма пултарнӑ. Литература пулнӑ пулсан та, нумайӗшӗ миссионерла, кулакла содержаниллӗ пулнӑ; чӑн-чӑн халӑх литератури сарӑлайман, пичетленеймен. 1905 ҫулхи революци хыҫҫӑн кӑна йывӑр пурӑнӑҫ ҫинчен революциллӗ содержаниллӗ произведенисем „Хыпар“ хаҫатра т. ыт. ҫӗрте пичетленкеленӗ.

Революцичченхи литературӑна пирӗн пӗлмелле. Ун тӑрӑх эпир ӗлӗкхи вӑхӑтра ӗҫхалӑхӗ епле асапра пурӑннине, ун чухнехи пурӑнӑҫ епле пулнине пӗлме пултаратпӑр. Вӗсем пире ун чухнехи пурӑнӑҫа ылханма, ҫӗнӗ пурӑнӑҫ тума вӗрентеҫҫӗ. Анчах кунта Ленин: „Пӗтӗм этемлӗхӗн аталанӑвӗнче тунӑ культурӑна тӗплӗн пӗлнипе кӑна, ӑна ҫӗнетсе янипе кӑна пролетариллӗ культурӑна тума пулнине уҫҫӑнах ӑнланса илмесӗр, эпир вӑл задачӑна татса параяс ҫук“ тата „Хӑвӑн ӑспуҫна этемлӗх ку таранччен туса ҫитернӗ мӗнпур пуянлӑхсене пӗлнипе пуянлатсан ҫеҫ коммунист пулма пулать“, тенине асра тытмалла. Ҫав капитализм вӑхӑтӗнчи культурӑран пирӗн хамӑра кирлисене суйласа илсе, усӑ курма пӗлмелле.

1905 ҫулхи революциччен ҫырнӑ е пичетленнӗ произведенисем чӑвашсен питӗ сахал пулнӑ. Унччченхи литература произведенийӗсенчен пӗр „Арҫури“ баллада ҫеҫ пире уҫҫӑн палӑрса тӑрать. Ыттисене эпир пӗлсех каймастпӑр. Пуласса та нумай пулман. „Арҫури“-не автор 1891—92 ҫҫ. ҫырнӑ. Анчах вӑл та 1908 ҫулччен пичетленме пултарайман, Атӑл тӑрӑх чӑвашсем хушшине алҫырӑвӗпе ҫеҫ саланнӑ.

1905—7 ҫҫ. революциллӗ движени патша саманине вӑйлӑн кисрентерсе илнӗ. Пӗтӗм Российӗпех сарӑлнӑ революциллӗ движени патша влаҫне хӑратса пӑрахнӑ. Ку революцие пур нацисем те хутшӑннӑ, хӑйсен прависене пурӑнӑҫласшӑн тӑнӑ.

1905 ҫулхи революциллӗ движени чӑваш литературине те малалла яма пулӑшать. Революци кӑварӗпе чӗрӗлнӗ талантсем литература ӗҫне хутшӑнаҫҫӗ: сӑвӑсем, калавсем т. ыт. те ҫырса пичетлеме пуҫлаҫҫӗ.

1906—7 ҫулсенче Хусанта „Хыпар“ ятлӑ чӑвашла хаҫат тухма пуҫлать. Вӑл хаҫатра, монархистла-миссионерла произведенисемсӗр пуҫне, революциллӗ произведенисем те пичетленеҫҫӗ. Вӗсем шутне ҫаксем кӗреҫҫӗ: „Чаплӑ вилӗм юрри“, „Шухӑшсем“, „Ҫӗнӗ ҫул“ т. ыт. (Тайӑр Тимкки), „Ҫӗлен“ (Шелеби Н.), „Шӳтсем“, „Ялти пурӑнӑҫ“ (М. Ф. Акимов) т. ыт. те.

Реакци вӑйланса пынӑ май патша правительстви „Хыпар“ хаҫата 1907 ҫ. май уйӑхӗнче хупса лартать.

Ӗлӗкхи пурӑнӑҫ ҫинчен ҫырнӑ произведенисенчен нумайӑшне фольклорпа усӑ курса ҫырнӑ. Хӑшпӗр ҫынсем фольклор пухассипе те нумай ӗҫленӗ. Вырӑсла произведенисем куҫарас ӗҫ те пулса пынӑ. И. Н. Юркин чӑваш юмахӗсене, шӳтсене, пословицӑсене, тупмалли юмахсене т. ыт. нумай пухать, кӗнекесем туса кӑларать, хӑй те ҫырать.

1906—07 ҫулсенче Чӗмпӗрте К. В. Иванов ӗҫлеме тытӑнать. Хӑй тӑван ҫӗршывӗнче пухнӑ халӑх творчествипе усӑ курса, халӑх юмахӗсене сӑвӑласа, хитрелетсе ҫырать („Икӗ хӗр“, „Тӑлӑх арӑм“, „Тимӗр тылӑ“ т. ыт.). Унтан асран кайми „Нарспи“ поэмӑна ҫырса пӗтерсе, 1908 ҫ. „Чӑваш халлапӗсемпе юмахӗсем“ ятлӑ кӗнекере пичетлесе кӑларать. Ҫак кӗнекерех М. Федоровӑн „Арҫури“ балладиӗ те пичетленет. 1906 ҫ. вырӑс писателӗ Гарин-Михайловский чӑвашсем ҫинчен „Зора“ (Сарпике) ятлӑ драма ҫырса кӑларать.

Кунта вӑл 1880 ҫ. Самара-Златоуст чугун ҫулне тунӑ ҫӗрте ӗҫлекен чӑвашсен йывӑр пурӑнӑҫӗ ҫинчен, вӗсем бунт пуҫласа ярса Англия инженерне Гаррине вӗлерни ҫинчен ҫырать. Гарри иртӗхсе, ашшса пурӑннӑ-мӗн. Вӑл Сарачӑм текен чӑваш ҫамрӑкӗн Сарпике ятлӑ савнӑ хӗрне вӑйпа тенӗ пек туртса илсе, хӑй качча илет. Чӑвашсене хӗстерет, пусмӑрлать. Вӗсене „дикари“, тет. Сарпике сӑнӗ пире Шевченко ҫырнӑ „Катерина“ поэминчи хӗрарӑм асаплӑхне аса илтерет.

Малалла ҫӳлерех асӑннӑ хӑшпӗр писательсемпе, кӗскен те пулин, уйрӑммӑн паллашар.

## М. Ф. Акимов (1884—1914).

Михаил Федорович Акимов 1884 ҫулта Тутар респ., Пӑва р-чи Таяба ялӗнче, чухӑн хресчен ҫемьинче ҫуралнӑ. Унӑн ашшӗ кӗтӳҫӗ пулнӑ. Ача чухне Акимов хӑй те кӗтӳ кӗтнӗ. Кӑнна Кушкинчи двухкласнӑй шкулта вӗренсе тухсассӑн, 1902 ҫулта Акимов Чӗмпӗрти Чӑваш шкулне вӗренме кӗрет. 1905 ҫулта вӗренекенсен забастовкине хутшӑннӑшӑн Акимова шкултан кӑларса ярассӗ. Вара Акимов, 1906 ҫ. Хусанта „Хыпар“ хаҫат тухма пуҫласан, унта ӗҫлеме каять. „Хыпарта“ вӑл ӗҫхалӑхне кирлӗ статьясем, произведенисем пичетлеме тӑрӑшнӑ. „Хыпар“ хаҫата хупсан (1907 ҫ.), Акимов Чӗмпӗре куҫса суд органӗсенче ӗҫлеме пуҫлать. Вӑл хӑй ӗмӗрӗнче революци пуласса, чӑваш ӗҫхалӑхӗ ирӗке тухса хӑй чӗлхипе кӗнеке-хаҫатсем кӑларасса, литература вӑйланасса кӗтсе-шанса пурӑннӑ. Анчах вӑл Октябрь революцийӗччен пурӑнайман, 1914 ҫулта чахотка чирӗпе вилнӗ.

„Хыпарта“ унӑн ҫакӑн пек произведенисем пичетленнӗ: „Шӳт туни“, „Ялти пурӑнӑҫ“.

**„Шӳт туни“**. Ку—революциллӗ юмах. Юмах тесе ӑна цензура аллинчен вӗҫерӗнсе пичетлеме май пултӑр тесе ят панӑ. Чӑннипе вӑл—ун чухнехи власть йӗркине ҫивӗччӗн критиклекен вӑйлӑ сатирӑллӑ калав. Унӑн содержанийӗ ҫапла: Пӗр Ҫимун ятлӑ хресченӗн ҫураки тунӑ чух лаши вилет. Лаша илме укҫа тупай-

маннипе улпутран пӗр 50 тенкӗ ыйтма каять. Улпучӗ, хытӑскер, памасть. Ҫакӑнта вара вӗсен тавлашу тухса каять. Акӑ вӗсем тавлашнине кӑтартакан диалогне кӗскетсе илсе пӑхар:

„— Манӑн нуша килчӗ... Тархасшӑн пӗр 50 тенкӗ укҫа парччӗ.

— Мӗнле укҫа? Ӑна ӑҫтан илсе парам эпӗ сана? Манӑн укҫа ҫук.

— Епле ҫук? Эсӗ улпут. Эсӗ уйӑхне темиҫе ҫӗр тенкӗ илсе тӑратӑн.

— Укҫана мана нумай ӗҫленӗшӗн параҫҫӗ.

— Мӗн ӗҫленӗшӗн?

— Эсӗ мӗн пит манран эпӗ мӗн ӗҫленине ыйтса ҫӳрен?

— Эсӗ кам? Эсӗ—хресчен, эпӗ—улпут!.. Кунне тӑхӑршар сехет ӗҫлетӗп. Эсӗ мӗн ӗҫлетӗн? Хӗл кунӗнче нимӗн ӗҫлемесӗр кӑмака ҫинче кӑна выртатӑн!

— ... Эсӗ хӑна „эпӗ улпут“, тетӗн. Сана улпут кам турӗ? Турӑ турӗ-им?

— ... Хам тӑрӑшнипе пултӑм.

— Апла пулсан, эсӗ ҫак ху таврари 800 десятина ҫӗре те ху тӑрӑшнипе тупрӑн пулӗ?

— ... Пире ӑна патшасем вӑрҫӑсенче мухтава тухнӑшӑн панӑ.

— ... Эсир хӑҫан вӑрҫрӑр?.. Халӗ те сирӗн пек улпутсем вӑрҫӑсенче нимӗн тумасӑрах мухтава тухаҫҫӗ. Вӑрҫӑсенче пирӗн юн тӑкӑнать!..

— ... Тухса кай кунтан. Эсӗ нимӗн пӗлмен ҫӗр хурчӗ, ҫапах манпа калаҫма ҫӳрен тата.

— Эпир пӗлменнишӗн кам айӑплӑ? Эсир!.. Пире вӗренме ялсенче пӗчӗк шкул тума та чаратӑр... Халӑх укҫине пуҫтаратӑр... выҫӑ кам вӗренейтӗр?

— Ӗҫле. Пурлӑхна эрех ӗҫсе ан пӗтер.

— Эсир тӗнчере пӗр кахалсем. Эсир эрех пиртен те нумай ӗҫсе пӗтеретӗр. Хӑвӑр укҫӑра пӗтерсен тататчӗ... Эпир тар юхтарса тупнӑ укҫана пӗтеретӗр...“

Ку диалог хресченшӗн улпут мӗнле тискер ҫыннине лайӑх кӑтартса парать.

Ҫимун ӑшра капланса тулнӑ ҫиллине, шухӑшне пӗтӗмпех кӑларса кӑтартнӑ. Халӑха вӑл патша влаҫӗ хресчене мӗнле ҫаратнине ҫинчен, пусмӑрлани ҫинчен каласа пама пуҫлать. Хайне вара „Ӑслӑ Ҫимун“ теме пуҫлаҫҫӗ. Анчах виҫӗ эрнерен ӑна ҫав улпут патӗнчи калаҫушӑн ҫӗрле казаксем пырса тытса каяҫҫӗ. Ҫимун ӗмӗрлӗхех ҫухалать, арӑмӗпе икӗ ачи тӑлӑха тӑрса юлаҫҫӗ.

**„Ялти пурӑнӑҫ“.** Ку пӗчӗк драма—автобиографиллӗ япала. Вӑл ялти чухӑнсен йывӑр пурӑнӑҫне, ял пуҫлӑхӗсем (староста т. ыт.) чухӑнсене мӑшкӑланине, вӗсен ӗнси ҫинче пурӑннине кӑтартса парать.

Ку драмӑн содержанийӗ ҫапла: пӗр Хӗветӗр ятлӑ 60 ҫулхи хресченпе унӑн арӑмӗ питӗ чухӑн пурӑннӑ. Хӗветӗр ял хуралҫи пулса ӗҫленӗ, хуралланӑшӑн илме тивӗҫлӗ укҫине ӑна староста памасӑр тӑрать. Ҫав укҫана илесшӗн Хӗветӗр старостӑна ӗҫтерет, хӑналать.

Çапла ĕнтĕ, ĕçленĕшĕн илме тивĕçлĕ укçана та ял пуянĕсем, кулаксем, улпутсем чухăнсене тӳлесшĕн пулман. Çапла пулнă пуянсен тискерлĕхĕ, çапла пулнă чухăнсен асаплă кунçулĕ.

Пӳрчĕ кивĕ, çĕрĕшнĕ...
Сывлăш пăчă, хăйă шăрши;
Авăрлакан ӳсĕрет.

**Г. А. Кореньков.** Г. Кореньков „Хыпар" хаçатра Крылов баснисене куçарса чылай пичетленĕ. Сăмахран: „Юман айĕнчи сысна" („Свинья под дубом"), „Тилĕпе иçĕм çырли" („Лисица и виноград"), „Автанпа ахах пĕрчи" („Петух и жемчужное зерно"), „Упăтепе куçлăх" („Мартышка и очки") т. ыт. те.

Кусене Кореньков халăх юррисен 7 сыпăклă стихĕпе усă курса куçарнине куратпăр.

Тĕслĕх:

Ватă юман айĕнче
Сысна икел çинĕ-мĕн,
Çие-çие äшĕнче
Пĕтĕм пырши тулнă-мĕн...
„Ара, эсĕ мĕн таван,
Мĕн тымарне чакалан?
Тымарсене хускатсан,
Хăрса каять вĕт юман!.."
„Кирли-мĕн вăл, ват юман,
Мĕскер парать вăл мана?..—
Пулсан икел пултăрччĕ,
Вăл хăть кăшт ӳт хушĕччĕ".
„Эй, намăссăр!"—тет юман.—
Эсĕ хăвăн сăмсуна
Кăшт çӳлерех хăпартсан,—
Сана сысна апачĕ
Ăçта ларни курнĕччĕ".

Кунсăр пуçне, Кореньков калавла произведенисене те куçарса пичетленĕ. Тĕслĕх: В. Г. Короленко çырнă „Вут куçĕ" ятлă прозăллă сăввине, „Çурта çунса пĕтрĕ" калавне т. ыт. те кăтартма пулать. Ку калавсене куçарни—Кореньков революци майлă пулнине аван кăтартса парать. Мĕншĕн тесен революционерсен тĕрмери, Çĕпĕрти асаплă пурăнăçне шеллесе çыракан произведение урăх шухăшлă çын куçарас та çук. Ку произведенисене авторĕсем ĕçхалăхĕ ирĕке тухассине шанса çырнă. Кореньков вĕсене питĕ аван, илемлĕ чĕлхепе юратса куçарни палăрать.

Г. Кореньков вăл халĕ те пурăнать. Куславкка р-чи Тĕрлемесри вăтам шкулта учитель пулса ĕçлет. Ударник-учитель. 1939 ç. унăн пуçламĕш шкулта вырăс чĕлхине вĕренмелли кĕнеки те тухнă.

Кореньков çав Тĕрлемесрех çуралса ӳснĕ. Чĕмпĕрти учительсене хатĕрлекен чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Çавăнтанпа паян кунччĕнех учительре пурăнать.

## И. Н. Юркин (Юркка Иванĕ).

И. Н. Юркин чăваш юмахĕсене, шӳтсене, пословицăсене тупмалли юмахсене т. ыт. те питĕ нумай пухнă. Оригиналлă произведенисем те чылай çырнă, вĕсенчен хăшĕ уйрăм кĕнекен хăшĕ „Хыпарта" пичетленнĕ.

Унăн произведенийĕсенче чăвашсене çутта кăларассишĕн ĕçлесси малти вырăнта тăрать.

Вăл 1863 çулта Тутар республикинче, Пăва районĕнчи Пӳркел ялĕнче çуралнă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче, Хусанти учительски семинаринче вĕреннĕ. Анчах, чухăн пирки, вĕренсе тухаймасть, ăна семинаринчен кăларса ярасçĕ. Унтан вара вăл Чĕмпĕртех ĕçлеме тытăнать. 1880 çулсенчен пуçласа, вăл фольклор материалĕсене пухма тытăнать. Чăваш халăхĕн пурăнăçĕпе интересленет.

Халĕ вăл хайĕн 50—60 çул ĕлĕкрех пухнă юмахĕсене чăвашсен Наукăпа Тĕпчев Институтне панă. Унăн çакăн пек кĕнекесем пичетленнĕ:

1. „Шӳтсем", Хусан, 1907 ç., 23 стр.
2. „Юмахсем", 16 стр., Хусан, 1907 ç.
3. „Халлапсем", 16 стр., Хусан, 1907 ç.
4. „Ваттисен сăмахĕсем", Хусан, 1907 ç., 10 стр.
5. „Халлапсем", Хусан, 1907 ç., 35 стр.
6. „Урине", Чĕмпĕр, 16 стр.
7. „Хăраманскер", 1917 ç., Сенгилей, 15 стр.
8. „Хулари масар çинче", Чĕмпĕр, 1918 ç.
9. „Вĕреннĕ çынсем", Чĕмпĕр, 1918 ç.

## М. Ф. Федоров (1873—1909).

Михаил Федорович Федоров Сĕнтĕрвăрри р. Хурапха ялĕнче хресчен çемьинче çуралнă. Вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен, унтан учительски институтран вĕренсе тухнă. Царевококшайск (халĕ Йошкар-Ола) уездĕнче шкул инспекторĕ пулса ĕçленĕ. 1891—92 çулсенче вăл, фольклор материалĕсемпе усă курса, чухăнсен ĕлĕкхи йывăр пурăнăçне кăтартакан „Арçури" ятлă произведени çырать. М. Федоров 1909 çулта вилет. „Арçури" балладине вăл пĕтĕмпе çырса пĕтереймен.

„Арçури" баллада (сăвăллă юмах) формипе те, содержанипе те фольклора питĕ çывăх тăрать. Халăх юррисем пекех, ăна Федоров 7 сыпăклă стихпа çырнă. Фольклор материалĕсемпе— пословицăсемпе, халăх юррисемпе усă курни балладăра уççăнах палăрса тăрать. М. Федоров „Арçури" произведение „Халăх поэми" тума шутланă, çавăнпа та ăна фольклор материалĕсемпе анлăн усă курса çырнă. Вăл баллада пире чăваш ĕçхалăхĕн асаплă пурăнăçĕпе, шухăш-сисĕмĕсемпе паллаштарать.

Карчăк Микули каймарĕ,
Ăна юлташ пулмарĕ:
Микул турра пуççапма
Ишекелле каймалла, терĕ:

Тӳркĕллине тӳрлетме
Тиха тытса пусмалла, терĕ.
Арăм сывмар, суя мар,
Хĕлĕн-çăвĕн хĕн курать, терĕ.
Кирилесем килте çук,
Лавраç пичче лава кайнă,
Салтак ачи пама кайнă.

Мĕн çинчен çырнă, мĕнле пуранăçа уçса парать пире М. Ф. Федоров çак йĕркесенче? Хĕветĕр вăрмана хăйпе пĕрле юлташлăха Карчăк Микулине те, Кирилесене те, Лавраç пиччене те чĕнсе çавăраннă-мĕн. Анчах вĕсем ерĕçмеççĕ, пĕри те вăрмана каяймаççĕ. Вĕсен татах та васкавлă ĕçсем пур-мĕн. Хĕветĕр эртелпе кайнă пулсан, хăраса асапланас та çукчĕ. Карчăк Микулин ĕçĕ те пустуй ĕç пулнă: Микул турра пуççапма вуншар çухрăм Ишеке каясси, арăм чирлипе тӳркĕллине тӳрлетме тиха тытса пусасси чухăн хуçалăхшăн калама çук йывăр, пысăк такак. Çаппа начарлатнă халăха тĕшмĕшлĕхпе турра ĕненни. Начар пуранăç пулмасан, арăмĕ те хĕлĕн-çăвĕн хĕн курмĕччĕ, ĕçлеймесĕр выртман пулĕччĕ.

Кириле килте çукки те, Лавраç пичче салтак ачине леçме кайни те ялти чухăнсен пуранăçĕ асаплинех кăтартаççĕ.

Хĕветĕр вăрмана каçа хирĕç, хĕвел ансан кайни те сăлтавсăр мар. Вăл, вăрман сыхлакансем ан курччăр тесе, ĕçе çĕр хута туса килесшĕн. „Хăрак турат пуçтарма" та шикленсе çӳреме лекнĕ. Чухăнскерĕн лаши те начар, лаша апачĕ те ыраш улăмĕ çеç. Лаши лайăх пулсан, каллех вăл çав инкексене курман пулĕччĕ. Акă мĕнле ун лаши:

... Аран-аран уткалать:
Ыраш улăм çитерсен,
Ырă выльăх та ывăнать...
Чуман лаша пек чупать.

Паллах, вăл лашапа ĕç тума та йывăр пулнă. Хĕветĕр вăрмана кайнă чух çулĕ те, çанталăкĕ те усал пулнă:

Сулăхайра сулăн пур,
Сылтăм енче çырма пур.
Тăвар-вăрри тăвайкки,
Ăçта пур-ши сĕвекки?
Йĕп чиксе те куç курмасть...

„Йĕп чиксе те куç курманнипе" Хĕветĕре пур япала та хăратса тăрать. Хресченсем хушшинчи тĕшмĕшлĕ юмахсем Хĕветĕре аса килсе, хăратма пуçлаççĕ. Хĕветĕре çав каç вилĕм çитнĕ пекех туйăнать:

Киле çитсе тăрасчĕ;
Ыр вилĕмпе вилесчĕ;
Ватăличчен пурнасчĕ,
Тӳшек çинчех вилесчĕ.

Вара: „Кушак çури“ мар тесе,
Авалхи çынсен йӑлипе
Тирпейлесе пытарӗç.

Вилӗм çинчен шутланипе, ӑна çемьи аса килет. Çавӑнпа çапла калать Хӗветӗр:

Пуян вилет—мул юлать,
Ыр çын вилет—ят юлать,
Эпӗ вилсен—мӗн юлать?
Хуньӑм хӗрӗ хура хӗр,
Хурлӑх курма вӑл юлать.
Ачам-пӑчам пит айван,
Халиччен суха тытайман.
Кам ачашлӗ ачама?
Кам хӗрхенӗ хӗрӗме?
Тӑлӑх-турат пуличчен,
Хӑрӑк турат пулас та,
Кӗрхи çилпе вӗçсе ӳкес,
Çурхи шывпа юхса каяс,
Арман умне пӗвенес.

Ире хирӗç, çил-тӑман чарӑнсан, Хӗветӗр, аташса çӳренӗскер, вӑрман пуянлӑхне, лайӑх йывӑççене курнипе тӗлӗнсех каять. Вилӗм шухӑшӗ ун çухалать. Хӑйӗн хуçалӑхӗ çинчен аса илет, ӑна юсама шутлать. Çавӑнпа та вӑл вӑрманти йывӑççене, хӑйне кирлӗ япала тума пит те юрӑхлӑ пулма пултарасси çинчен шухӑша кайса, пӑхса çӳрет:

... Пилӗк йӳплӗ пилеш пур,
Сенӗк тума пит селӗм.
Хурӑн шурта хурама,
Тур ӳстернӗ туратсӑр—
Турта тума вӑл юрать.

Анчах вӗсене вӑл касаймасть, тытасран хӑрать. Тытсан, тӳлеме укçа та çук Хӗветӗрӗн. Ахаль те пурӑнӑçӗ вӗсен питӗ йывӑр: хырӑç-марӑç та, хырӑм выççи те хуçалӑха хытӑ юхӑнтарать, „çын куçӗнчен пӑхтарать“:

Çитмен пурнӑç пирки-çке
Çын куçӗнчен пӑхатпӑр,
Çиме çӑкӑр çитмесен,
Пӑтавка йатса каятпӑр.
Хырӑç-марӑç памашкӑн
Хушпу саклат хыватпӑр.
Ыраш калчи сутатпӑр,
Кайран юра еретпӗр;
Хутаç çакса каятпӑр,
Ыйткаласа çӳретпӗр...

Çапла кăтартнă М. Федоров „Арçури“ балладинче патша саманинчи чухăнсен йывăр пурăнăçне. Вĕсем, темле тăрăшсан та, ура çине тăма пултарайман. Хырăç-марăç татма хушпу саклат хывни, ыраш калчи сутни, кивçен илсе çини, уншăн пуяна ĕçлесе пани пурăнăç канлĕренех пулман. Вĕсем хыççăн ыйткалама каясси çеç юлать.

Ку йĕркесенче революцилле сăмахсем çук пулин те, вулакан ĕçхалăхĕн ĕлĕкхи пурăнăçĕ çав тери йывăр пулни çинчен чухлатех, сисетех. Хĕветĕрсен çавăн хыççăн, паллах, пуянсене, патша влаçне курайманни вăйланма пуçлать. М. Федоров унтан ытла ун чухне çырма та пултарайман. Революци çинчен асăннă вырăнсем пулсан, вăл произведение патша саманинче пичетлемен те пулĕччĕç.

## „АРÇУРИ“ ФОРМИ.

„Арçури“ баллада форма енчен те пуян. Кунта фольклор материалĕ питĕ нумай; вĕсемпе автор питĕ те вырнаçуллă, кирлĕ вырăнта усă курнă.

Чи малтанах кунта пире аллитераци йышлăн тĕл пулни кăмăла каять: произведени пĕтĕмпех аллитерацисенчен, ассонанссенчен тăрать темелле, вĕсем произведение илемлетеççĕ. Акă тĕслĕхсем илер, мĕнле аван янăраççĕ вĕсем:

1. **Пил**ĕк йўплĕ **пил**еш пур,
   **Се**нĕк тума пит **се**лĕм,
2. **Ват** юмана çил **ват**нă,
   **Çĕ**мĕртсене **çĕ**мĕрнĕ.
3. **Ху**ньăм **хĕ**рĕ **ху**ра **хĕ**р,
   **Ху**рлăх **ку**рма вăл юлать.
   ...Ачам-пăчам пит **а**йван...
   Кам **ача**шлĕ **ача**ма?
   Кам **хĕ**рхенĕ **хĕ**рĕме?

Е рифмăсене илер:

Сикрĕ тухрĕ çырмаран,
Пĕкке хуçрĕ çурмаран.

Е тата: иксĕмĕр—çитрĕмĕр, айван—тытайман.

Пословицăсем те пур кунта. Эпиграфа илнĕ татăкĕ те „Тухман çын тухсан, тăман тухать“ тени пословица пулса тăрать. Ку эпиграф халиччен тухман Хĕветĕр пĕрре тухсах инкек курнине ĕнентерме кирлĕ пулнă. Е тата: „Пуян вилет—мул юлать, ыр çын вилет—ят юлать“ т. ыт. те.

## Н. И. Полоруссов—Шелеби (1881 ç.)

Николай Иванович Полоруссов—Шелеби Тутар республикинче, Аксу районĕнчи Çĕнĕ Ўсел ялĕнче 1881 çулта çуралнă. Пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, чухăн пирки, малалла урăх вĕренеймен, хресчен ĕçĕпе пурăннă, тĕрлĕ вырăнсенче писарь т. ыт. пулса ĕçленĕ.

Литература ĕçне Полоруссов 1905 çулхи революци хыççăн хутшăннă. 1906 çулта „Хыпар“ хаçатра унăн „Çĕлен“ ятлă малтанхи революциллĕ сăвви пичетленет. Каярах халăх творчествине пухассипе ĕçлеме пуçлать. Историри ĕçсем çинчен çӳрекен халăх хушшинчи юмахсем тăрăх поэмăсем çырать. Революциллĕ сăвăсем çырнăшăн, революциллĕ шухăшлă пулнăшăн ăна патша чиновникĕсем хĕстерме пуçлаççĕ. Вара вăл чылай çул хушши Çĕпĕрте пурăнать. 1915 çулта „Константинополь хулине туни çинчен чăваш ваттисем калани“ тата чăвашсен пурăнăçĕ-ĕçĕ çинчен „Çарăмсанпа Хăнтăрçа“ ятлă сăвă кĕнеки кăларать, 1905 çулсенчех халăх юрланă революциллĕ „Раççей“ юрра çырса илет. 1915 çулта пуян кулак пусмăрĕ çинчен „Ваçанкка“ ятлă сăвă çырать.

Октябрь революцийĕ хыççăн Шелеби вăйлăн ĕçлеме пуçлать, сăвăсемпе поэмăсем çырать („Эссепе“, „Уксах Тимĕр Пӳлере илни“, „Çеçпĕл“ т. ыт. те). 1922 çулта вăл Шупашкара пурăнма куçать. Унта малтан коммуна шкулĕнче завхозра ĕçлет, сăвăсем çырать. Вăл шкулта вĕренекен Уйăп Мишши т. ыт. çамрăксене сăвă çырас ĕçе явăçтарать, литературăпа интереслентерет. Хăй çырнă произведенисене Шелеби уйрăм кĕнекен, сборникĕн е „Сунтал“ журналра, хаçатсенче пичетлесе пырать. 1926 ç. унăн „Шелеби сăввисем“ ятлă кĕнекен 1 томĕ пичетленсе тухать. 1928 ç. „Шелеби çырнисен пуххи“ ятлă кĕнеке кăларать.

1928—33 çулсенче Шелеби Хусанта пурăнать, Хусанти чăваш писателĕсен секцинче тăрать. Унăн ун чухнехи сăввисем „Утăм“ альманахра пичетленеççĕ. Çав вăхăтрах, 1928 ç., тата чăваш поэчĕсен сăввисене тутарла куçарса, тутар чĕлхипе „Чăваш илемлĕ литератури“ ятлă кĕнеке кăларать. 1930 çулта тутарларан чăвашла куçарса „Тутарсен хальхи литературинчен“ ятлă кĕнеке кăларать.

1932 çулта Шелеби суккăр пулать. Анчах çырас ĕçе вăл пăрахмасть. Унăн сăвви-поэмисенчен: „Ленин“, „Сталин“, „Коммунизм патне“, „Хĕрлĕ Çăлтăр“, „Çĕнтерӳ парни“, „Максим Горькине“, „Хĕрлĕ Çар кунĕ“ пирĕн литературăра паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. 1935 çулта ăна, чăвашсен ватă поэтне, чăваш халăх поэчĕ ятне панă. 1939 çулта Шелеби поэт, Совет Союзĕнчи ытти халăх поэчĕсемпе пĕрле, „Знак почета“ орден илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ĕçлес хаваслăхĕ унăн татах та хăпарать.

Акă мĕн çырать вăл орден илнĕ ятпа:

... Ĕçхалăх манăн  
Ĕçĕме чаплăн пахаларĕ,  
Хаваслă ятпа чысларĕ,  
Çĕнтерӳ юррисем юрлас кăмăл  
Çуркунне пек. çулăмланчĕ.

Аслă çĕршыв чаплă ĕçĕнче  
Мĕнпур хăватпа ĕçлеме

Сăмах паратăп халăх умĕнче—
Çутă кунçулшăн кĕрешме.

Е тата:

Çĕршыв мана çут орден пачĕ,
Вăл çут телей пек йăлтăрать.
Çулпуç парни, çĕршыв парни—
Çĕн юрăсем çырма ыйтать.
Нихçанхинчен те чыслăрах
Искусство пирĕн çĕршывра.

Ленин, Сталин çинчен çырнă сăвăсенче автор вĕсене чĕререн юратса хавасланнине куратпăр. 1924 ç. Ленин вилсен, çав пысăк хуйăх çинчен „Ленин“ ятлă сăвă çырать. Акă, хăш вырăнсене илсе пăхар вăл сăвăран:

Вут çулăмĕ пек
Чĕлхӳ-çăвару
Епле сивĕнсе
Чĕнми пулчĕ-ши?

Тĕттĕм пуçлăхĕ—
Хăрушă вилĕм
Епле сан патна
Хăйса пычĕ-ши?..

Хĕвел çутти пек
Яту çут пултăр,
Янраса тăтăр,
Ĕмĕр чĕр пултăр!

Ĕçхалăхĕн юратнă çулпуçĕ Сталин çинчен çырнине илсе пăхар:

Ĕçӳсем сан хурçă,
Чĕлхӳ кăвар.
Çĕр çийĕнче сана
Пур тĕлте те
Лайăх пĕлсе тăрать
Пур чĕлхе те.
Эсĕ чĕре патне
Кăвар хуран,
Коммунизм çулпе
Ертсе пыран...

Малалла Шелеби революциччен çырнă „Çĕлен“, „Раççей“, „Ваçанкка“ сăввисене пăхса тухар.

**„Çĕлен“**—символлă сăвă. Ăна М. Горький çырнă „Песня о Буревестнике“, „Песня о соколе“ сăвăсем майлă çырнă теме пулать. „Çĕлен“ произведенире Шелеби патша вăхăтĕнчи ĕçхалăхĕн пусмăрлă, асаплă пурăнăçне кăтартать. Çĕлен çĕр çине тухса выртнипе, „Çакă çĕрĕн çийĕнче çĕлен сăхман çын та çук“,—тет. Анчах çав çĕлене кайăк анса сăхса вĕлерет. Çапла вара, Çĕлен—патшан тискер, ирсĕр йĕркине, Кайăк—революцие пĕлтерет.

Çĕлен çитмен çĕр те çук,
Çĕлен сăхман çын та çук...

Кайӑк часрах килинччӗ,
Ҫӗлене вӗлеринччӗ...
Юнпа куҫҫуль нумай юхнӑ
Ҫӗлен ҫӗрте выртнӑран.
Ҫӗлен ӳчӗ юн юхтарать
Кайӑк анса ҫыртнӑран.
Ҫӗлен пӗрре вилӗ-ха,
Ӗмӗрлӗхе пӗтӗ-ха...

Совет Союзӗнче эпир вӑл „ҫӗлене" 1917 ҫ. вӗлернӗ. Ҫӗрӗн 1/6 пайӗнче халь эпир ирӗк пурӑнӑҫ тӑватпӑр.

**„Раҫҫей"** (юрӑ). Ку юрра 1905 ҫулхи революци вӑхӑтӗнче Хусан кӗпӗрнин Чистай уездӗнчи чӑвашсем вӑрттӑн юрлана. Вӑл юрра Шелеби халӑхран илтсе ҫырса илнӗ. Юрӑ содержанийӗ Раҫҫейри ӗҫхалӑхӗн чӑтма ҫук йывӑр пурӑнӑҫне кӑтартса парать. Ҫав вӑхӑтрах пуянсем, „пичке пек хырамлӑ" тӗрлӗ патша йыттисем ашкӑнса пурӑннине кӑтартать. Раҫҫей вӗҫӗ-хӗрри курӑнми ҫав тери пысӑк, пуян, пурлӑхлӑ пулин те, ҫӗршывӗпех ыйткалакан, тӑлӑх-турат асап курса, выҫӑ пурӑнать; улпут йыттисем кӑна кулач ҫиеҫҫӗ... Паллах, ҫак юрӑ ӗҫхалӑхне кӗрешӳ ҫулӗ ҫине тӑма пулӑшнӑ.

**„Ваҫанкка"**. (1915 ҫул). Ку сӑвӑра ялти кулаксем ӗҫхалӑхне мӗнле пусмӑрласа пурӑнни ҫинчен ҫырнӑ, Ваҫанкка пуян хӑй вӑйӗпе мар, чухӑнсен вӑйӗпе пуйнине кӑтартнӑ. Сӑвӑра эпир чӑвашсем те классем ҫине пайланса кайнине, пуянӗсем чӑваш чухӑнӗсене пусмӑрланине куратпӑр. Кашни ялтах кулаксем ялти ӗҫхалӑх ӗнси ҫинче пурӑннӑ. Ваҫанкка текен пуян та Кив Тимушкел ялӗнчи ҫиме пӗтнипе аптӑранӑ чухӑн ҫынсене укҫа, тырӑ парса „пулӑшать", „хӗрхенет". Кӗркунне ҫитсен, вӗсенчен каяллa ытлашшипе шӑйӑрать.

Илме вӑхӑт ҫитсессӗн,
Тин пустарать вут ҫине,—тет автор.

Ҫитменнине, пуян патне тырӑ, укҫа ыйтма кайсан, ҫинчен ӗҫтерсе хӑвармалла пулнӑ, ҫуллахи хӗрӳллӗ ӗҫ кунӗсенче пуян анисене вырса памалла пулнӑ. Кӗркунне вара... 5 пӑт е 20 тенкӗ вырӑнне 8 пӑт е 25 тенкӗ тавӑрса памалла пулнӑ. Ҫапла вара, пуянӑн ӗҫӗ пит ансат пулса пынӑ:

Ун акнӑ та, вырнӑ та,
Пуҫтарнӑ та, ҫапнӑ та...

Ҫак пурӑнӑҫ, асаплӑ, пусмӑрлӑ пурӑнӑҫ, совет ҫӗрӗнче ҫук. Анчах ку произведенисем пире ӗлӗкхи йывӑр пурӑнӑҫ тискерлӗхӗ ҫинчен пӗлме нумай пулӑшаҫҫӗ.

### Тайӑр Тимкки—Т. С. Семенов (1887—1916).

Тимофей Семенович Семенов (Тайӑр Тимкки) 1887 ҫулта Шемек ялӗнче (Тутар респуб. Буденный р-нӗ) чухӑн хресчен ҫемьинче ҫуралнӑ. 1895 ҫулта ялти шкула вӗренме кӗнӗ. Ялта

вӗреннӗ чухне унӑн ашшӗ вилет. 1903 ҫулта Тайӑр Тимкки Кӳрен ялӗнчи двухкласнӑй шкула вӗренме кӗрет. 1904 ҫулта вӑл Чӗмпӗрти учительсене хатӗрлекен чӑваш шкулне кӗрет, анчах ҫитмен пурӑнӑҫ пирки вӑл унта нумаях вӗренеймест.

Вара вӑл Хусана ӗҫ шырама каять. Унта вырӑс типографийӗсенче, каярах „Хыпар" хаҫатра наборщик пулса ӗслет. Революци майлӑ сӑвӑсем ҫырнӑшӑн 1907 ҫулта ӑна арестлеҫҫӗ, 1909 ҫулта Ҫӗпӗре ссылкӑна яраҫҫӗ.

1914 ҫулта вӑл Ҫӗпӗртен таврӑнать. Пӗр вӑхӑт Кавказра тӗрлӗ вак ӗҫсем туса пурӑнать. 1916 ҫулта ӑна империализм вӑрҫине илсе каяҫҫӗ. Вӑл вара 1916 ҫултах Кавказ фронтӗнче вилет.

„Хыпар" хаҫатра наборщик пулса ӗҫленӗ чухне Тайӑр Тимкки сӑвӑсем ҫырать. Вӑл сӑвӑсенче автор чухӑнсен асаплӑ пурӑнӑҫне кӑтартса панӑ, улпутсене, патша влаҫне хирӗҫ хӗҫпӑшал тытса ҫапӑҫма, „ырлӑха вӑрҫса илме" чӗннӗ. Унӑн „Хыпар" хаҫатра „Шухӑш", "Чаплӑ вилӗм юрри", „Ҫӗнӗ ҫул", „Ҫӑлӑнӑҫ" т. ыт. сӑвӑсем пичетленеҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне „Пурӑнӑҫ ҫутти" ятлӑ прозӑллӑ произведени пичетлесе кӑларнӑ. Вӑл вырӑсларан „Интернационал", „Марсельеза" юрӑсене чи малтан чӑвашла куҫарнӑ.

**„Шухӑш"** сӑвӑра Тайӑр Тимкки ӗҫҫыннисен асаплӑ, выҫлӑтутлӑ пурӑнӑҫӗ ҫинчен, тар тӑкса ӗҫлени харампырсем валли кайни ҫинчен калать. Ҫав харампырсене, патша влаҫне, „ӗнсе ҫинчен пӑрахма" чӗнет. Чухӑн хресченсен ӗлӗкхи асаплӑ пурӑнӑҫне вӑл ҫак сӑмахсемпе пит те уҫҫӑн кӑтартса панӑ:

... Хӗнре, тертре пурӑнса,  
Эпӗ выҫӑ ларатӑп.  
Ялан хытӑ ӗҫлесе,  
Вӑйран кайса ӳкетӗп.

Ҫӗрӗн йывӑр ӗҫӗ те ӑна ырлӑх кӑтартмасть: выҫлӑхӗ, тырӑ пулманни, шӑтманни, пӑр ҫапса кайни чухӑн хуҫалӑхне пушшех те начарлатса ярать, хутаҫ ҫактарать.

Кунсӑр пуҫне тата хресченӗн куланай тӳлесе тӑрас пулать; пупӗсене, кантур йыттисене те тӑрантарса ҫитерес ҫук нихӑҫан та. Ҫавна тарӑхса хресчен ҫапла шухӑшлать:

Пирӗн йывӑр ӗҫлени  
Мӗншӗн ахаль ҫухалать?  
Пирӗн мӗнпур тар тӑкни  
Харампырта саланать...

Ҫав пусмӑр тӗнчинче „йӗри-тавра йынӑшни", „куҫҫулӗ", „тӗнче тулли вӑйсӑр халӑх юн тӑкни" кӑна пулма пултарнӑ. Анчах вӗсем вӗри куҫҫульсем юхтарни, йынӑшни, хуйхӑрни „тутӑ ҫынна илтӗнмест", „сивӗ пӳрте ӑшӑтмасть". Ҫавӑнпа та Тайӑр Тимкки сӑвӑ вӗҫӗнче хресченсене мӗн тумаллине лайӑх кӑтартса парать, сӑввине революци тума чӗнсе каланипе пӗтерет:

Мӗншӗн, мӗскӗн халӑхсем,  
Эпир ҫапла тӳсетпӗр?

Мĕншĕн вĕри куççульсем
Çĕре ахаль тăкатпăр?
Çитĕ пире тертленме!
Пурте пĕрле пухăнар!
Тĕрлĕ харампырсене
Ĕнсе çинчен пăрахар!

„**Чаплă вилĕм юрри**“ сăвăра та Тайăр Тимкки çав харампырсемпе кĕрешесси, пусмăрлăх тĕнчине пĕтересси çинчен çырать, ĕçхалăхне ирĕке тухма пулăшакан, вĕсене ертсе пыракан революционерсене çакса вĕлернине кăтартать. Вĕсем вилеççĕ пулин те, чĕрĕ юлаканнисене малашне татах та хытăрах кĕрешме, мул тĕнчине çĕр çинчен ĕмĕрлĕхех пĕтерсе лартма, „ырлăха вăрçса илме“ чĕнсе хĕрӳллĕ сăмахсем калаççĕ; халăха революцишĕн кĕрешнĕ чух „пуласси çине шанса“ хытă тăма хушаççĕ:

Ман юлашки сăмахсем:
Пуласси çине шанса,
Хытă тăрăр, халăхсем,
Ан чарăнăр хăраса!..

Çав хушăрах революционерсем хресченĕн пусмăрти йывăр пурăнăçĕ мĕнлине те каласа параççĕ. Çĕр çинче çырмари пек юн юхни, тăвăр хире хресчен куççульпе сухалани, ачасем тăлăха юлни, выçă ларни çинчен калани чухăнсене пăлхантарать, патша йыттисене курайми тăвать. Революционерсем кĕрешĕве чĕнсе калани те пуçа çирĕп кĕрсе ларать:

„Эй, пур нушаллă халăх!
Çакна эсир ан манăр.
Вăл халь пирĕн вăхăтлăх,
Пулассишĕн тăрăшăр!!!“
. . . . . . . . . . . . . . .
„Ырлăхăра вăрçса илĕр...“

Çакăн пек сăмахсемпе чĕнеççĕ революционерсем ĕçхалăхне пусмăр тĕнчипе кĕрешме. Çавăн пек хĕрӳллĕ сăмахсемпе çырнă Тайăр Тимкки хăйĕн сăввине.

Цензура сăвăри „ырлăхăра вăрçса илĕр“ текен сăмахсене кăларса пăрахнă пулнă. Анчах, наборщикре ĕçленĕ Тайăр Тимкки, ăна каллех сăвва кĕртсе, хаçатра пичетлесе кăларать-кăларатех. Революционер-поэт ĕçхалăх ĕçĕшĕн чунне парса ĕçленĕ.

„**Çĕнĕ çул**“ ятлă сăвăра автор чухăнсене çĕнĕ пурăнăç, çĕнĕ йĕркесем пама кирли çинчен çырать. Çулсем шунăçемĕн ирĕклĕ çул çитессе шанать вăл:

Килĕр, пĕрле пухăнса,
Çĕнĕ шухăш шухăшлар.
Çĕнĕ çулта савăнса,
Кивĕ ĕçе пăрахар...

Çаксем: „çӗнӗ шухăш шухăшлар“, „кивӗ ӗçе, кивӗ йӗркене пăрахар“ тенисем ирӗклӗхе туртăнма чӗнекен сăмахсем пулаççӗ те ӗнтӗ.

Малашне ирӗклӗ те савăнăçлă пурăнăç пулассине автор шаннă:

Тата пӗр-ик çул иртӗ,
Çынсем аван пурăнӗç.
Пур усала çӗнтерсе,
Çынсем чунтан савăнӗç.

Тайăр Тимкки шанса калана сăмахсем пурăнăçа кӗчӗç.

## К. В. Иванов (1890—1915).

Чăваш илемлӗ литературин классикӗ Константин Васильевич Иванов 1890 çулта Пушкăрт республикинчи Бишбуляк районӗнче, Слакпуç ялӗнче пуян хресчен çемьинче çуралнă.

1897 çулта ялти шкула вӗренме каять. Анчах унта вăл нумай вӗренмест. Вӗрентекен (дьячок пулнăскер) начар вӗрентни пурне те пӗлме тăрăшакан ачан кăмăлне кайман. Çавăнпа вăл вӗренме Кекен ялне Марье аппăшӗ патне кайнă. Кӗçтенттин унтан 1901 çулта питӗ аван вӗренсе тухнă. 1901 çулта кӗркунне вăл Белебей хулинчи шкула вӗренме кӗнӗ. Унта пӗр çулталăк вӗренет. 1903 çулта ăна, тата малалла вӗрентес тесе, Чӗмпӗрти (Ульяновск) чăваш шкулне ăсатнă. Унта вăл икӗ çул хушши (1903—1905) Чăваш шкулӗ çумӗнчи подгруппăра вӗренет. 1905 çулта кӗркунне учительсене хатӗрлекен чăваш шкулӗн 1-мӗш класне вӗренме кӗрет. Анчах унăн вăл шкула вӗренсе пӗтерме май килмен.

1907 çулхи февралӗн 20-мӗшӗнче Иккӗмӗш Государственнăй Дума уçăлнă кун, Чӗмпӗр шкулӗнче пăлхану пуçланать. Çав кун шкул çурчӗ тăрринче хӗрлӗ ялав вӗлкӗшет. Патша правительствин миссионерла шкулӗ чăрсăр пăлхавçăсене шкулта тытса тăма пултараймасть. Хусан вӗренӳ округӗн попечителӗ хушнипе, забастовка тăвакан ачасене вăра 1907 çулхи март пуçламӗшӗнче ушкăнӗпех чăваш шкулӗнчен кăларса янă. Çавсен хушшинче К. В. Иванов та пулнă.

17 çулхи Кӗçтенттин кун хыççăн тăван ялне, Слакпуçне, таврăнать. Кунта вăл хресчен ӗçне туса пурăнать тата чăваш юмахӗсене, юрри-такмакӗсене пухать. Анчах тӗрӗслӗхшӗн çунакан Иванов пуян ашшӗ-амăшӗсемпе килӗштерсе пурăнма пултарайман. Пӗрре пуçланă вӗренӳ ӗçне нимӗнле те пăрахас килмен пирки, Иванов урăх шкулсене кӗме тăрăшать.

Вăл Ӗпхӳ (Уфа) кӗпӗрнинчи Благовещенск заводӗнчи учительски семинарине тата Бирск хулинчи вак халăхсене учителе хатӗрлекен шкула кӗресшӗн ăшаланать, вӗренме илме ыйтса прошени ярать, анчах „забастовщик“ тесе ăна ниçта та илмеççӗ. Правительство, паллах, пăлхавçăсем ытти шкулсене кайса кӗрессӗн, вӗсен ячӗсене пур шкулсене те çитернӗ, илме юраманни çинчен систернӗ.

Çапла, К. В. Ивановăн, тем чул тăрăшсан та, малалла вĕренесси ирĕксĕрех чаранса ларнă.

Пĕррехинче Иванов патне Яковлевран çыру çитнĕ. Вăл Иванова хăй патне тĕн кĕнекисене чăвашла куçарма чĕнсе çырнă пулнă. К. В. Иванов пĕрре тарăхнă Чĕмпĕре тепĕр хут каясшăн пулман, анчах вĕренес шухăш вăйлă пулнипе Чĕмпĕре тухса кайнă.

К. В. Иванов Чĕмпĕрте кĕнеке куçарас ĕçе путать. Анчах пурăнăç условийĕ унăн йывăр пулнă. Пурăнма укçа кирлĕ пулнипе темле кĕнеке те куçарма лекнĕ.

Л. Н. Толстой шкул ачисем валли вулама çырнă тăватă кĕнекине куçарать. Баранов çырнă кĕнекене ыттисем куçарнине редакцилет т. ыт. те. Çав кĕске вăхăтрах тата Иванов хăй юратнă ют государство писателĕсемпе вырăс писателĕсен произведенийĕсене питĕ нумай вуланă, чăвашла куçарнă, хăй те оригиналлă произведенисем çырнă. Вăл нимĕç поэчĕ Генрих Гейне, Норвеги писателĕсен Кнут Гамсунпа Генрих Ибсен произведенийĕсене юратса вуланă. Унтан Америка писателĕн Лонгфеллон индеецсен фольклорĕпе усă курса çырнă „Песнь о Гайавате“ ятлă поэмине вуласа киленнĕ.

Гейне сăввисене Иванов чăвашла та куçарнă. Анчах вĕсене пичетлеме май пулман, мĕншĕн тесен вĕсем капитализм обществи йĕркисене критиклесе çырнă сăвăсем пулнă. Çав куçарнă темиçе тетрадь т. ыт. те Ивановăн ашшĕ-амăшĕсен килĕ çуннă чухне вутра пĕтнĕ.

Вырăслисенчен Иванов М. Ю. Лермонтов çырнисене юратса куçарнă. Акă вăл куçарнă произведенисем: „Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата Калашник хуçа çинчен хунă юрă“ („Песня про царя Ивана Васильевича, молодого опричника и удалого купца Калашникова“), „Парăс“ („Парус“), „Чулту“ („Утёс“), „Пурăнăç курки“ („Чаша жизни“), „Тĕрме çынни“ („Узник“), „Тусен тăррисем“ („Горные вершины“), „Пирĕшти“ („Ангел“), „Хумсемпе çынсем“ („Волны и люди“).

1908 çулта Лермонтовăн куçарнă сăввисемпе поэмисем Чĕмпĕрте кĕнекен пичетленсе тухаççĕ.

Кунсăр пуçне, чăвашсен фольклор материалĕсемпе, юмаххаллапĕсемпе усă курса, 17 çулхи Иванов „Икĕ хĕр“, „Тăлăх арăм“, „Тимĕр тылă“ халлапсене сăвăласа çырать, асран кайми „Нарспи“ поэмăна та çырса пĕтерет. Вĕсем 1908 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 40 çул тултарнă ячĕпе кăларнă **„Чăваш халлапĕсемпе юмахĕсем“** („Сказки и предания чуваш“) ятлă кĕнекере пичетленсе тухаççĕ. Ивановăн урăх сăвăсем, çырма пуçланă трагедисемпе легендăсем те пулнă.

Çаксем пурте К. В. Иванов талантлă поэт пулни çинчен калаççĕ.

Литература ĕçĕпе ларнă вăхăтрах, К. В. Иванов учителе тухас ĕмĕте те манман, хăй тĕллĕн вĕреннĕ: экзамен парса учитель ятне илнĕ.

Кунсăр пуçне, Иванов ăста художник, столяр пулнă. Вăл сĕтел-пукан тума вĕрентекен Николай Никоноровичăн сăнне чĕрĕ

çын пекех ӳкернĕ. Мастерскойĕнче те ĕçленĕ, тĕрлĕрен чертĕжсем тунă. Хăй аллипе çырсах, картинкисене хăй туса, статьисене те хăех çырса, чăвашла „Букварь“ те хатĕрленĕ пулнă вăл. Анчах вăл вăхăтра ун ĕçне картман, хисеплемен. Ĕçлеме май пулман. Йывăр условире çав тери нумай ĕçлени Иванова ывăнтарса çитернĕ. Чĕмпĕр хули, табак тĕтĕмĕпе тулнă пĕчĕк пӳлĕм йăлăхтарса çитерет. Çавăнпа та 1909 çулхи çуркунне Беляев землемерпа пĕрле Сызрань уездне кайса, кĕркуннеччен плансем ӳкерсе çӳрет. Çав кĕркуннех вăл хăйĕн тăван ялне таврăнать. 1909—1910 çулхи хĕле килĕнчех ирттерет. Ĕçсĕр ларма юратманскер, кичем пулнипе, килĕнче хăйĕн хĕсĕк вăхăтне столяр ĕçĕпе тултарать. Ахальтен мар вăл „Вата вăрман шухăшĕ“ ятлă çырса пĕтермен сăввинче хăйĕн вăл тапхăрти пурăнăçĕ çинчен çапла калать:

Асап килсен, хĕн килсен,
Шухăшласа ларатăп:
Çамрăк вăхăт, ыр вăхăт,
Ăçта эсĕ çухалтăн?

Çамрăк кунсем, ыр кунсем
Иртсе кайрĕç, тĕлĕк пек.
Асап, хĕн-хур халĕ пур,
Килчĕç хура пĕлĕт пек.

1910 çулта Иванов Чĕмпĕре каять. Кунта вăл каллех кĕнекесем куçарнă, куçарнă кĕнекесене редакциленĕ, шкул ачисене рисованипе вĕрентнĕ. Урăх ĕçсем капланнипе, литература ĕçĕпе ларма вăхăчĕ пулман. Начар условисемпе пурăннипе Ивановăн сывлăхĕ чакма пуçлать: чахотка хĕсме тапратать. Çавăнпа та 1914-мĕш çулхи кĕркунне, ноябрь уйăхĕнче, К. В. Иванов Слакпуçне таврăнать. Пĕр хĕл хушши вырăн çинче выртнă хыççăн, 1915 çулта, мартăн 26-мĕшĕнче, ытарайми илемлĕ „Нарспи“ поэма çырнă Ивановăн кунçулĕ татăлать.

### К. В. ИВАНОВ ТВОРЧЕСТВИ.

К. В. Ивановăн произведенийĕсем ĕлĕкхи пурăнăç йĕрки киревсĕррине, мул тĕнчи, „турă çырни“, тĕн законĕсем халăха пусарса, хĕссе, тĕттĕмлĕхре, пусмăрлăх айĕнче усранине аван кăтартса параççĕ.

Иванов творчествине хаклама унăн пур произведенисене те шута илмелле. Анчах унăн пичетленмен, çырма пуçланă тата çырма шутласа хунă произведенисем те нумай. Унăн 1907—8 çулсенче çырма пуçланă „Шуйттан чури“ ятлă 3 пайлă трагедин планĕпе татăкĕсем çеç юлнă. Ăна вăл каярах сăвăллă поэма туса çырма тытăннă. Трагеди тĕп шухăшĕ—укçа çынна аташтарни, чĕресĕр туни. Укçа пирки тăванĕ хăйĕн тăваннех вĕлерет-мĕн...

1907—8 çулсенчех Иванов „Пăртта йăхĕн историйĕ“ ятлă произведени çырма шутланă. Вăл Пушкинăн „Арап Петра Великого“ майлă автобиографиллĕ произведени пулмалла пулнă.

Алҫыравӗсене пухса пичетленӗ тӑрӑх, унӑн „Выҫӑ аптӑранисем“, „Усал шӑрӑх“, „Кӗркунне“ т. ыт. сӑвӑсем те пурри курӑнать.

1909—10 ҫулсенче, ялта пурӑннӑ чух, Иванов халӑх юмахӗсене, фольклор материалӗсене нумай пухнӑ. Вӗсене вӑл сӑвӑласа ҫырса, илемлетнӗ юмахсен кӗнеки тума шутланӑ.

Унта „Тимӗр тылӑ“, „Икӗ хӗр“, „Тӑлӑх арӑм“, „Ватӑ вӑрман шухӑшӗ“, „Хуркайӑксем“ т. ыт. кӗмелле пулнӑ.

Юмах циклне вӑл, халӑх юмахӗсене пуҫланӑ пекех, ҫапла пуҫлама палӑртнӑ:

Кукашшӗне итлесе
Ларать ача сак ҫинче,
Хӑйӑ ҫунать ташласа,
Хура пӳрте ҫутатса,
Ватти тӑвать ҫӑпата,
Хӑй юмахне ҫаптарса.
(Юмах юпа тӑрринче
Халлап хапха тӑрринче).

Малалла халӑх юмахӗсенчен сӑвӑласа тунӑ „Тимӗр тылӑ“, „Икӗ хӗр“, „Тӑлӑх арӑм“ юмахсене (балладӑсене) пӑхса тухар.

**„Тимӗр тылӑ“** юмахра халӑх хушшинчи тӗшмӗшлӗ ӗҫ ҫинчен, ӗлӗк хӗрарӑм пӗр качча кайсан пысӑк асапа кӗрсе ӳкни ҫинчен кӑтартса панӑ. Килтен ӑна ниҫта тухса ҫӳреме ирӗк паман. Вӑл ҫынсем патне те, тӑванӗсем патне те ирӗклӗн ҫӳреймен. Унӑн хӑйӗн ӗмӗрне кӑмака умӗнчех ирттермелле пулнӑ. Килти пур йывӑр ӗҫсене ун ҫине тиенӗ.

Чӗкеҫ ятлӑ кинӗ ҫинчен Иванов ҫапла ҫырать:

... Алли ҫӑмӑл ӗҫ тума...
Куҫӗ-пуҫӗ пит йӑваш,
Ҫын савӑнса тӑмалла.

Ҫапах та карчӑк ӑна юратмасть. Чӗкеҫ, тем чул тӑрӑшса ӗҫлет пулин те, ыр ят илтеймест, качча кайнӑранпа ниҫта тухаймасӑрах ӗмӗрне ирттерет. Ҫавӑнпа вӑл пӗрре хӑнана яма ыйтать:

— Апай, яр-ха хӑнана,
Аппам патне каям-ха.

Карчӑк ярасшӑн мар, вӑрҫать:

Пуҫ ҫавӑрмӗш, ҫӗр ҫӑтман...
Авантарах ӗҫне ту,
Вӑхӑт ҫитсен ярӑп-ха.

Вӑхӑт хӑҫан ҫитессине Иванов ҫапла кӑтартать:

Вӑхӑт ҫитсен, хӑй вилсен,
Ярӗ-ха вӑл хӑнана.

Карчăк, кинĕ виçĕ кун çаплах антратнипе, вăрçса-çиленсе те чулин, кайма ирĕк парать, анчах ăна вĕлерме шутлать: тимĕр тыллине ярать. Кинĕ виçĕ хутчен юсман пăрахса хăтăлать:

Хăрат, хăрат тăшмана,
Сĕтпе юрнă юсманăм,—тет.

Акăр ялне çитсен, Чĕкеç аппăш хапхине шаккать:

Аппам, кĕрт-ха йăмăкна,
Усал тăшман хăвалать!

Анчах лешсем уçмаççĕ:

Çĕрле çӳрес хăнам çук,
Утах хăвăн çулупа!—теççĕ.
—Сыв пул эппин, аппаçăм!—тет Чĕкеç.

Тепĕр аппăшĕ патне те, пиччĕшĕ патне те çитсе шаккать—пĕри те кĕртмеççĕ. Вара вăл пиччĕшĕн аслăкĕ çине улăхса, улăм ăшне пытанать. Тимĕр тылă ăна тупса вĕлерет. Ăна карчăк çапла хушса янă-мĕн:

—Шалт-шалт тыллăм, шалт тыллăм!
Акăр çулĕпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм,
Çав кин пуçне çи, тыллăм!..

Вара тимĕр тылă:

Шалт-шалт тăвать, шалт сикет.
Сарă кин чунне витерет...

Ку юмах пире ĕлĕкхи пурăнăçа пĕлме пулăшать. Упăшкисем тахçанах çук пулин те, кинĕсем карчăк патĕнчен пĕр-пĕр çĕре курма, ĕçлеме кайма е урăх çĕре качча кайма пултарайман.

**„Икĕ хĕр“** ятлă юмахăн тĕп шухăшĕ çапла: чее çын ĕçпе мар, сăмахпа юрать. Тĕрĕс калакан ĕлĕк çынна юрайман. Пĕр пуянăн икĕ хĕр пулнă. Ашшĕ вĕсенчен: мĕн мăнтăр, мĕн тутлă, мĕн çемçе?—тесе ыйтать. Асли, чеескер, ашшĕне юрас шутпа, ашшĕн пуянлăхне ырлать: пирĕн атте килĕнчи кăвак лаша пит мăнтăр, вĕллери пыл пит тутлă, тӳшек-минтер пит çемçе, тет. Кĕçĕн хĕрĕ, ăслă-тăнлăскер, çапла ответлет: çут тĕнчере çĕр мăнтăр, ыйхă тутлă, алă çемçе, тет.

Вара ашшĕ аслине:

Ăслă каларăн, хĕрĕм,
Хисеп турăн аçуна,
Ĕнтĕ сана çакăншăн
Çур мулăма паратăп,—тет.

Кĕçĕн хĕрне вара:

—Санран пархатар сахал,
Эсĕ манăн хĕрĕм мар!—тесе хăваласа ярать

Кунта эпир ӗлӗкхи саманара пуянсем хӑйсен мулне мухтакан ҫынсене юратнине куратпӑр.

**„Тӑлӑх арӑм“** юмахӑн содержанийӗ ҫапла: ҫиччӗн пӗр тӑван тӑшмансемпе ҫапӑҫма кайнӑ. Кӗҫӗнни вӑрҫӑра вилет. Амӑшӗпе ҫичӗ кинӗ ҫав вӑхӑтра уйра тырӑ выраҫҫӗ. Амӑшӗ ывӑлӗсене тем пулман-ши, тесе, ҫичӗ кашӑк ывӑтать. Кӗҫӗн кинӗн кашӑке юнлӑ: вӑл упӑшки вилнине пӗлтернӗ. Кӗҫӗн кинӗ хурланса упӑшкине шырама тухса каять. Ҫул ҫинче пиччӗшӗсенчен ыйтса пӗлет. Лешсем хӑйсен тӑванӗ ӑҫта выртнине каласа, кӗҫӗн кинне ҫул кӑтартса яраҫҫӗ. Хуйха чӑтаймасӑр, тӑлӑха юлнӑ салтак арӑмӗ ҫакӑнса вилет... Юмах яраканӗ уншӑн хӑй те хурланать:

Эп те вара хурланса,
Икӗ чуна асӑнса,
Урхамаха вырттартӑм,
Чӳклерӗм те хӑвартӑм.

Ҫапла вара, ку юмахра Иванов вӑрҫӑ тискерлӗхне, унӑн сиенлӗхне питӗ аван кӑтартса панӑ.

## „НАРСПИ“.

Чӑвашсен революцичченхи литератури ҫинчен сӑмах тапратсан, пире тӳрех М. Федоров ҫырнӑ „Арҫурипе“ К. В. Ивановӑн „Нарспи“ поэми аса килеҫҫӗ. Ытла та аван ҫырнӑ вӗсене. Вӑл произведенисене хальхи вӑхӑтра пӗлмен чӑваш та сахал. Вӗсене вӗҫӗмсӗр вулас килет, пӑхмасӑр калас килет. Темиҫе вуласан та, вуласа тӑранма ҫук Ивановӑн „Нарспи“ поэмине.

Мӗн ҫинчен калать-ха Иванов „Нарспи“ поэмӑра?

Силпи ялӗнчи пуян Михетерӗн Нарспи ятлӑ пӗртен-пӗр хитре хӗрӗ пур. Нарспи хӑйсен ялӗнчи чухӑн ачана Сетнере юратать. Анчах Михетер, пуян упӑшка шыраса, Нарспие Хушӑлкари Тӑхтаман ятлӑ ватӑ пуяна вӑйпах качча парать. Нарспипе Сетнер, пӗр-пӗринчен уйӑрӑласшӑн мар пулса, вӑрмана тараҫҫӗ, анчах вӗсене тытса таварӑнаҫҫӗ те хытӑ хӗнеҫҫӗ. Ҫапла вара, Нарспин ирӗксӗрех Тӑхтамана качча каймалла пулать.

Нарспи качча пынӑ-пыманах, ӑна Тӑхтаман питӗ хӗсӗрлеме пуҫлать. Нарспи, тӳсеймесӗр, Тӑхтамана наркӑмӑш парса вӗлерет те Сетнер патне пурӑнма каять. Анчах Сетнерпе вӗсем нумай пурӑнаймаҫҫӗ. Михетере вӑрӑ-хурахсенчен ҫӑлма кайсан, Сетнере вӑрӑсем вӗлереҫҫӗ. Нарспи те вара, ҫав йывӑр хурлӑха чӑтаймасӑр, Кантӑр Варти йӑмраран ҫакӑнса вилет.

„Нарспи“ поэмӑна К. В. Иванов ҫамрӑклах, 17 ҫулта чухнех, Чӗмпӗрте ҫырнӑ. Ку сюжета ӑна Чӗмпӗр шкулӗнчи Иван ятлӑ сторож каласа панӑ пулнӑ. Сторож Иван каласа панӑ тӑрӑх, Нарспи чӑнах пулнӑ-мӗн. Унӑн пурӑнӑҫӗ ҫинчен сторож Иван К. В. Иванова йӗре-йӗре каласа панӑ-мӗн. Хушӑран вара: „Эх, Кӗҫтук, Нарспи телейсӗр пулнӑ ҫав!“—тесе ассӑн сывланӑ-мӗн.

Анчах „Нарспи“ поэмӑра Иванов пӗр ӗҫ ҫинчен кӑна кӑтартман. Вӑл патша саманинчи йӗркесене, мул тӗнчине хирӗҫ, хӗрарӑмсене ҫын вырӑнне картмасӑр усранине, мул хыҫҫӑн кайса

ирĕксĕр качча панине хирĕç тăрать. Çав енчен ĕнтĕ „Нарспи" чăнласах та хаклă произведени пулса тăрать. Хĕрарăма асаплăхра усрани, ăна ирĕксĕр качча пани — капитализм саманинче, мул тĕнчинче йăлана кĕнĕ ĕç пулнă; чăвашсен кăна мар, ытти пур халăхсен те çавах пулнă.

Хĕрарăмсен чунне, чĕрине ăнланма мул тĕнчипе пуянлăх май паман.

Çутă тĕнчере этем пек вăйли çуккине автор аван кăтартать. Çав вăйлă этем, класлă обществăра хăй те мул тĕнчин чури пулса тăрать: Ăна „мул", „укçа", „эрех" пăхăнтарать, киревсĕр ĕçсем тутарать. Михетер те çав класлă обществăри мула пăхăнакан „вăйлă этем".

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.

Анчах вăйлă этем те
Хăй тĕнчене пăхăнать.
Укçапала эрехех
Çынна ăсран кăларать.

Хытă чĕреллĕ ашшĕсем хĕрĕсене „çичĕ юта" сутса яраççĕ.

Крепостной строй тапхăрĕнче улпутсем хăйсен аллинчи хресчен хĕрарăмĕсемпе тавар пекех суту-илӳ тунă. Акă мĕнле пĕлтерӳсем çапнă урамсем хушшине вĕсем: „Продается здоровая крепостная девка. Умеет вязать кружева", е тата: „Меняю на охотничью собаку девку 17 лет" т. ыт. те.

Уйрăм çынсем çав мул тĕнчине, унăн киревсĕр йĕркисене хирĕç пĕчченлĕ кĕрешӳ пуçласа янă. Вĕсем кивĕ йĕркесемпе, „турă çырнисемпе" килĕшме пултарайман. Тĕрĕслĕхшĕн çапăçнă. Çаксен шутне кĕрет ĕнтĕ Ивановăн „Нарспи" поэми те. Анчах Нарспи пек пĕччен кĕрешекенсем тĕрĕс çул-йĕре тупма пултарайман, вĕсен кĕрешĕвĕ вилĕмпе вĕçленнĕ.

„Нарспи" поэмăри шухăш — вăл тапхăрти халăхăн малта пыракан шухăшĕ.

Анчах вăл шухăш революци çулĕ çине тухайман. Çавăнпа та кивĕ тĕнчери нарсписем, кĕрешӳ тĕллевне пĕлмесĕр пĕчченле кĕрешнипе, нимĕнле улшăну та тума пултарайман. Анчах та вăл — кĕрешӳ пуçламĕшĕ. Халăх кивĕ йĕркесемпе килĕшми пула пуçланине, ăна хирĕç кĕрешӳ вăйланса пынине кăтартать. Нарсписем, Катеринасем, Добролюбов калашле, „тĕттĕм патшалăхри çутă пайăркасем" пулса тăраççĕ.

„Нарспи" поэмăри малалла туртăнакан (прогрессивлă), тĕрĕслĕхшĕн тăракан шухăшсене эпир авторпа Нарспи сăмахĕсенче те, хăш тĕлте Сетнер сăмахĕсенче те куратпăр. Акă, тĕслĕх илер:

Тату, ырă, килĕшсе
Иккĕш пĕрле пурăнсан,
Çĕр хут ытла телейлĕ
Юрлă çын та пуянран.

Ку — автор сăмахĕпе Нарспи сăмахĕ. Çапла шухăшпа кăтартнă вĕсем тĕрĕслĕхе. Пурăнăç телейĕ мулпа пуянлăхра маррине вĕсем аван ăнланнă.

Нарспи хăйне ашшĕ ватă пуян Тăхтамана мĕншĕн качча панине те аван пĕлнĕ. Пуянлăх, чаплăх илĕртнĕ Михетере. Чухăн Сетнере качча парсан, ăна ытти пуянсен умне, ял умне тăма та намăс пулĕччĕ, унăн чапĕ çухалĕччĕ. „Ял кулли", „Çынсем мĕн калĕç", „Яла култаратăн çав?" текен сăмахсем халиччен хăнăхнă йăла-йĕркесенех пăхăнса пурăнма хушнă.

Тăхтаман вилсен, Сетнер патне пынă Нарспие ашшĕ каллех урăх пуяна тупса парасшăн çунать. Хăй калашле, „Хĕр телейшĕн тăрăшса пуян каччă шырать":

Атя, хĕрĕм, таврăнар
Шăтăк-шатăк ку пўртрен.
Тепрер каччă тупăпăр
Яту çĕрсе кайиччен.
Яту пĕтнĕ пулсан та,
Аçун мулĕ пур вĕт-ха.

Тем каласан та, тĕрĕслĕхшĕн, телейлĕ мăшăрлă пурăнаçшăн çунакан Нарспи ашшĕ-амăшĕ сăмахне итлемест. Сетнертен уйăрăлмасть. Çавăн пирки те Михетерпе карчăкĕ Сетнер патĕнчен вăрçса, ылханса тухса каяççĕ:

Ы-ых, Сетнер, астăвăн:
Манăн хĕре эс çирĕн!
Эсĕ, çавтер усал хĕр,
Хура пўртрех тип эппин!

Карчăкĕ те Михетер майлах вăрçать: тĕрлĕ сăмахсем каласа хăртать:

Вăрçсам ĕнтĕ хытăрах,
Пăсăрлантар Сетнерне:
Ĕçре хытнă аллипе
Ан хапсăнтăр çын хĕрне!
... Сетнер, **йытă, кĕççе пит**,
**Пуян хĕрне ан хапсăн!**
...Сетнер, **шуйттан**, илĕртнĕ.
Хĕрў çине **сур** ĕнтĕ!—тет Михетерне.

Вара, юлашкинчен, çапла вăрçса ылханса тухса каяççĕ:

Пĕтĕр, типĕр çакăнта,
Типĕр, хăрăк турат пек!
Шăммăр-шаккăр çĕриччен
Асапланăр йытă пек!

Çак киревсĕр шухăшсене, мул хыççăн, укçашăн хăвалакан патша саманинчи йĕркесĕр шухăшсене хирĕç пыни Нарспи монологĕнче питех те аван палăрать. Ку монолог—поэмăри чи илемлĕ, чи паха, чи тарăн шухăшлă, чĕрене витермелле каланă вырăн пулса тăрать:

Арăм пулнă пуçăмпа
Киле пырса тăрăп-и?
Савман качча кайсассăн,

Татах асап чӑтӑп-и?
Ҫук, ҫук, атте, ан чӗн те:
Халь тин киле пыраймӑп.
Ҫапла пулса пӗтсен тин
Каччӑ кӗтсе-лараймӑп.
Мӗншӗн ҫапла ху хӗрне
Парса ятӑн кашкӑра?
Саншӑн ҫав пур ырӑлӑх
Мӗн пурӗ те укҫара...
Эй, аттеҫӗм, пурнӑҫ мар
Савман каччӑ килӗнче...
Пуянлӑхра анчах мар,
Ыр курасси—ҫыннинче...

Ҫак кӗрешӳре автор Нарспи енче тӑрать. Нарспи чӗринчен тухакан кӑвар сӑмахсем—Иванов сӑмахӗсемех.

Пусмӑр, мул тӗнчине хирӗҫ ҫырни Ивановӑн ытти произведенийӗсенче те тӗл пулать. Ӑна автор ылханать, ҫынна йӗркеллӗ пурӑнма паманшӑн, юрату тӑрӑх пӗрлешме ирӗк паманшӑн ҫак „усал тӗнчене" тарӑхса ҫырать:

Анчах вӑйлӑ этем те
**Хӑй тӗнчене пӑхӑнать.**
**Укҫапала эрехех**
**Ҫынна ӑсран кӑларать.**

Е Сетнер сӑмахӗсене илер:

Вӑл тӑшмана пӗтерме
Икӗ вӑйлӑ аллӑм пур,
Анчах ӑна пӗтерсен,
**Унтан усал тӗнче пур.**

Е Иванов хӑй каланине сӑнар:

Тӑрса юлнӑ кӑлӑхах
Сетнер ҫавтер чун савни.
Турӑ ҫырни ахӑрах,
**Ҫапла-тӑр ҫав самани.**
...Каччи пуян тенипе
Хӗрӗн чунне пӗлмерӗ.

Мӗнле пӑхать-ха Иванов пуянлӑх ҫине? Хӑшӗсем, вӑл Силпи ялне ҫав тери ырласа пуян пек кӑтартнӑ, чухӑнсене шупка кӑтартнӑ тесе, К. В. Иванова кулакла поэт, пессимист, революцилле шухӑшлакан поэт мар т. ыт. теме пӑхрӗҫ.

Акӑ мӗнле ҫырать Иванов силпи ялӗ ҫинчен:

Силпи ялӗ пуян ял
Ларать вӑрман ӑшӗнче.
Кантур пекех ҫурчӗсем
Ват йӑмрасем айӗнче.
... Кив капанлӑ анкарти,
Тӗрлӗ ҫимӗҫлӗ пахча.

Аслă урам тăршшĕпе
Хăма витнĕ çурчĕсем.
... Сарă хапха килсерен
Чĕнтĕрленĕ тăрăллă.
Силпи ялĕ аслă ял,
Хула тейĕн инçетрен.
Ахăр, кунти чăвашсен
Мулĕ пур-тăр çав вĕсен.

Анчах „пуян ял“ тени пурте пуяннине пĕлтермест. „Çав ял пуян пурăнать“ тени вăл ялта пуян ытлараххине, вăл ял вăйлăраххине кăна пĕлтерет.

Пурте пуян марри çинчен Иванов хăех çырать-çке:

Ял вĕçĕнче, Тукасра,
**Пĕчĕкçеççĕ пӳрт** ларать.
...Чипер ача Сетнерĕн
Пĕр урхамах лаши пур,
...Пуян ĕçне ĕçлеме
Икĕ вăйлă алли пур.
Унтан урăх Сетнерĕн
**Нимĕн те çук** япала.
(Анчах асту, Михетер
Хĕрне памасть **çуккалла**).

„Пуян ĕçне ĕçлеме икĕ вăйлă алли пур“, „нимĕн те çук япала“, çавăнпа та „Михетер хĕрне памасть çуккалла“ тени Силпире те икĕ кас—пуянсен урамĕ, чухăнсен урамĕ—касси пулнине пĕлтерет. Вĕсем пĕр-пĕринпе хутăшса пурăнма юратманнине сăнласа парать.

Иванов пуянсен урамне кăтартма, пуянсен пурăнăçĕпе паллаштарма илнĕ çав „Аслă урам тăршшĕпе хăма витнĕ çуртсене...“ чухăнсен пурăнăçĕ „ял вĕçĕнче“-мĕн. Çавăнпа та художник-поэт вĕсене пĕр карточка çинех шăнăçтарайман, уйрăмăн ӳкерсе кăтартнă. Ял варринче пуянсен çурчĕсем пулнă. Чухăнсене унта пурăнма кун паман: вĕсене ял вĕçне хĕссе кăларнă. Паллах, апла пулсан, чухăнсен килĕ пуянсен урамĕнче пулман.

Пуянсем те пурте пĕр пек пуян марри уççăнах паллă. Чи пуянни Михетер-мĕн:

Пĕтĕм ялта пĕр пуян,
Ăна никам çитеймест.

Вара, унтан пĕчĕкрех пуянсем, вăтамсем, чухăнсем (Сетнер, кĕтӳ ачи), Михетер тарçисем каяççĕ. Анчах Ивановăн задачи урăх пулнипе, вĕсен пурин пурăнăçне тарăн кăтартма пултарайман. Пĕр произведенирех автортан, патша саманинче, çитменнине реакци тапхăрĕнче, чăваш литератури тин çеç палăрнă чухне, пурне те çырса пама ыйтма май та çук.

Çавăнпа та автор пур ыйтусем хыççăн та шалалла кайма пултараймасть. Хăй палăртнă задачăна туллин пурăнăçлама кир-

лĕ таран çеç илет. „Нарспи“ поэмăн тĕп шухăшĕ — хĕрарăмсем арçынсемпе пĕр тан праваллă пулманнине, мул тĕнчин киревсĕр йĕркисене хирĕç тĕрĕслĕхшĕн çапăçнине кăтартасси пулать.

## „НАРСПИ“ ПОЭМĂРИ ГЕРОЙСЕМ.

„Нарспи“ поэмăра эпир ытлашши çынсем курмастпăр. Кашни геройĕ унăн обществăри уйрăм тип пулса тăрать: Михетер, Тăхтаман—пуянсене сăнлакан тип, Нарспи—тĕрĕслĕхшĕн тăракан таса чĕреллĕ хĕрарăма, Сетнер —чухăнсене сăнлакан типсем, т. ыт. те.

„Нарспи“ поэмăри типсене уйрăммăн пăхса тухар.

**Нарспи**—пуян Михетерĕн пĕртен-пĕр хĕрĕ. Вăл питĕ таса, хитре пулнă-мĕн:

Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă чечек пек.
Икĕ куçĕ хуп-хура,
Икĕ хура шăрçа пек.
...Ирех тăрать, тумланать,
Нарспи ĕçе тытăнать:
... Е çĕлеме ларать те,
Çĕвви шăрçа пек пулать;
Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă
Пĕр кĕрет те пĕр тухать...

Анчах çав чаплă хĕре Михетер юратман çынна качча парать. Нарспи Сетнере юрататъ; çичĕ ютра та ăна асăнать:

Вăрттăн-вăрттăн вăл йĕрет,
Сетнер ятне асăнать.

Чăтса пурăнма йывăррипе:

Вилес мар-ши пуçăмпа?
Çук, пуçăма çийиччен
Тăшманăма пĕтерем.—тет Нарспи.

Тăхтамана наркăмăшлă яшка çитерсе вĕлерет. Вара çĕрлех Сетнер патне вăрман витĕр тухса утать, вăрманта хăйне çăлма хирĕç пыракан Сетнере тĕл пулать те Сетнер патне каять.

Нарспи Сетнер патĕнчине пĕлсен, Михетерпе карчăкĕ Нарспие илме пыраççĕ. Вĕсем Нарспие тепрер пуяна качча парасшăн. Нарспи вĕсене итлемест. Вăл тĕрĕслĕхшĕн çапăçать. Ашшĕамăшне вăл акă мĕн калать:

Эпĕ асап курнишĕн
Ху айăплă, эпĕ мар.
... Сетнер кĕрӳ пулмасан,
Эпĕ сирĕн хĕрĕр мар.
Эй, аттеçĕм, аннеçĕм,
Сетнерпеле пехиллĕр—
Çавăн чухне тин вара
Ĕмĕр пĕрле пулăпăр.

Нарспи хӑй асап курнишӗн, савнӑ Сетнере каймалла пулманнишӗн пӗтӗмпех ашшӗ айӑплине лайӑх пӗлет. Ҫавӑнпа та Нарспи—кивӗ пурӑнӑҫ йӑлисене: „турӑ ҫырнине“, „телей шӑпине“ хирӗҫ вӑйлӑн кӗрешекен хӗрарӑм. Вӑл вӑхӑтра кивӗ саманана хирӗҫ тӑрасси ҫӑмӑл ӗҫ пулман. Чӑнласах та ӗнтӗ Нарспи „тӗттӗм патшалӑхри ҫутӑ пайӑрка“ пулса тӑнӑ.

**Сетнер**—чухӑн ачи. Ҫавӑнпа та унӑн нимех те ҫук:

Чипер ача Сетнерӗн
Пӗр урхамах лаши пур,
Ватӑ карчӑк амӗш пур,
Кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлеме
Икӗ вӑйлӑ алли пур.
Тӑшман пуҫне пӗтерме
Вӗри вут пек ҫилли пур...

Сетнер те, Нарспи пекех, тӑшманран хӑраса тӑмасть; Нарспи асапне пӗлсе, вӑл ӑна ҫӑлма тухса каять:

Нарспи асапне илтсе,
Вилӗм сунать тӑшмана...
Тӑшман, выртӑн, хускалмӑн,
Нарспи пулмӗ ҫуртӑнта.

Ҫак сӑмахсем Сетнер те ӗлӗкхи саманара тӑшмансемпе кӗрешме хӑраманнине кӑтартаҫҫӗ, тӑшмана хирӗҫ тӑнине палӑртаҫҫӗ.

Анчах, темле кӗрешсен те, пӗчченшерӗн кӗрешнипе, уйрӑм тӑшмансене пӗтернипех лайӑх пурӑнӑҫ тума май пулман. Ҫавна Сетнер лайӑх пӗлнӗ. Патша йӗрки, мул тӗнчи пӗччен кӗрешнипе пӗтес ҫуккине вӑл чухланӑ. Ҫавӑнпа та вӑл:

Анчах ӑна пӗтерсен,
Унтан усал тӗнче пур,—тенӗ.

Усал тӗнчене хирӗҫ пӗчченшерӗн кӗрешме йывӑр пулнӑ. Ҫапах та, Сетнер Тӑхтамана вӗлерме кайни—Сетнер кӗрешӳ ҫулӗ ҫинче тӑнине кӑтартать. Вӑл ӗлӗкхи самана йӗркисене, мул тӗнчипе мул хуҫисене тарӑхса пурӑннине кӑтартать.

**Михетер**—Силпи ялӗнчи ҫӗрме пуян. Ӑна ялта никам ҫитеймест:

... Унӑн ҫурчӗ хула пек,
Кӗрсен витӗр тухма ҫук.
Хуралтисен тӑррине
Чӑх-чӑп вӗҫсе ҫитме ҫук.

Тем те пур ун ҫуртӗнче:

Тырӑ-пулӑ туллиех
Ишӗлмест-и кӗлетре?
Ҫу, сӗт-турӑх, сӑра-пыл
Тулли мар-и нӳхрепре?

Анчах Михетерĕн сахал йышлă çемьи тума пултарнă-ши çав пуянлăха? Çук. Михетерсене чухăнсем ĕçлесе панă. Эпир унăн çичĕ „тарçи-тĕрçи“ пуррине, ăна ял çыннисем пулăшнине те пĕлетпĕр

Михетерĕн килĕнче
Парне валли çĕлеççĕ...
... Çичĕ тарçи-тĕрçине
Эрех парса ӳсĕртнĕ.

Çакăн пек астутарать Иванов Михетер чухăнсене эксплоатациленине, вăл çичĕ тарçă тытса усранине.

Михетер, мул çулĕ çине тăнипе, çав тери хытă чĕреллĕ пулнине куратпăр. Михетерсене мул тĕнчи, укçа çуратнă. Укçашăн вĕсем тем тума та хатĕр. Вăл хăйĕн савнă хĕрне те ватă пуян Тăхтамана ирĕксĕр сутса ярать. Пуян упăшкана алран вĕçертес мар тесе:

Аслă çăварни хыççăнах
Хучĕ ăна çураçса.

Анчах хĕрне тумлантарнă пулин те, мул хыççăн кайса унăн чунне курман: ăна асаплăх тупса панă, çамрăклах вилмелле туса хунă. Хăй çапах:

Хĕр телейшĕн тăрăшса
Пуян каччă шырарăм,—тесе сӳпĕлтетет.

Нарспи амăшĕн образĕ уйрăмах çак сăмахсенче уççăн палăрать:

Пĕтĕр, типĕр çакăнта,
Типĕр, хăрăк турат пек!
Шăммăр-шаккăр çĕриччен
Асапланăр йытă пек.
... И-и, Михетер, каяр-ха,
Хĕрӳ çине сур ĕнтĕ!

Пуян çын ятне ярас мар тесе, вăл йăпăлтатса та, хаярланса та калаçма пултарать, хăйĕн хĕрне тавар вырăнне сутма чарас тесе шухăшламасть, хĕрĕ майлă тăмасть.

Юмăç старик те пуянсем майлах, чухăнсене улталаса тăрансa пурăнать. Халăх вĕсене юратманни ваттисен сăмахĕсенчен те паллă: „ӳркенмен—ăста пулнă, вăтанман—юмăç пулнă“, тенĕ. Кама паллă мар-ха юмăççен ĕлĕк пурне те çапла суйса калани:

Пӳрнĕ ăна пӳлĕхçĕ
Кĕске ĕмĕр, йывăр кун...
... Турă çырни çаплалла...

Ку сăмаха, юмăççем пек, „ури айне шăрт хурса, умма укçа хурса“ хăтланмасăрах такам та калама пултарнă. Ĕлĕкхи саманара „йывăр кун“ пуласси юмăç каламасăрах паллă пулнă.

**Тăхтаман**—Михетер пек „çичĕ ютри" тепĕр пуян. Çавăнпа та Михетер унпа хурăнташ-пĕлĕшлĕ пулса, ĕçсе-çисе савăнса пурăнма, Нарспие ирĕксĕрех çамрăклах качча парса ярать. Автор çырнă тăрăх, Тăхтаман Нарспи кăмăлне, çамрăк хĕр кăмăлне каймалли çын пулман. Вăл ватă, усал çын-мĕн. Акă Иванов çырнине пăхар:

Лаптак сăмса, хĕсĕк куç,
Сарă çӳçпе сар сухал...
Пичĕ-куçĕ пит усал...

Укçи пулмасан, пуянлăхĕ пулмасан, Тăхтаман Нарспие тĕлĕкре те курас çук. Çавăнпа та Иванов:

Чипер каччă Тăхтаман
Силпи хĕрне çаклатнă,—тесе тăрăхлать.

Мул пуррипе çеç „çаклатнă" вăл Нарспие. Çитменнине ăна вăл хурлăх кăтартса усрать, хĕнет.

— Асту, Нарспи, йĕвенӳ
Ман алăра маташне.

Пурăнма пуçласан, Нарспин патак çимен кун иртмест:

Куллен-кунах саламат
Анать-ĕçке пăтаран.

... Усал куçпа çавăрса
Кăтартать вăл чăмăрне.

Тăхтаман хăйĕн мулĕпе мухтанса, арăмне чăтса пурăнмалла мар йывăр услови туса панипе, хăйне валли вилĕм тупать.

### „НАРСПИ" ПОЭМА ФОРМИ.

Кунта эпир Иванов поэмăна формипе содержани енчен çав тери аван çыпăçтарса çырнине куратпăр. Вăл усă куракан халăх юррисем, тупмалли юмахсем, чĕлхе çаврăнăшĕсем, рифмăсем т. ыт. те поэма содержанипе çав тери лайăх килĕшсе пыраççĕ; вĕсем поэмăн пĕтĕм шухăшне пăсма мар, ăна пушшех хитрелетсе тăраççĕ. Вĕсене кăларса илсен, содержани те пăсăлса кайĕччĕ. Горький: **фольклортан кирлисене илсе усă курма пĕлмелле,** тенине Иванов пурăнăçлана.

Акă „тимĕр йыттăн сӳс хӳре" текен тупмалли юмахпа автор поэмăра мĕнле усă курнă:

... Е çĕлеме ларать те,
Çĕвви шăрçа пек пулать;
Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă
Пĕр кĕрет те пĕр тухать.

Çав тери яка, илемлĕ, системăллă çырнă поэмăна Иванов. Пĕрер пайне кăларса илес пулсан, поэма илемĕ, çыхăнăвĕ пĕтнĕ

пулӗччӗ: вӗсем пӗр-пӗринпе питӗ майлӑн ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Чӑн-чӑн чӗлхе ӑсти, поэзи ӑстиех ҫырнӑ ҫав! Кашни вуламассерен унта ҫӗнӗ япала куратӑн. Поэма ҫав тери тарӑн шухӑшлӑ. „Нарспи“ поэмӑна Иванов фольклор материалӗпе анлӑн усӑ курса ҫырнӑ, терӗмӗр. Тата чӑваш пурӑнӑҫне, йӑлине, чӗлхине т. ыт. те питӗ те аван пӗлсе усӑ курнине те манмалла мар.

Тӗслӗх:

1. Ялти тантӑш-тӑвансен
Пырӗ тӗпӗ ярӑнать.
2. Асту, Нарспи, йӗвенӳ
Ман алӑра малашне.
3. Ырӑ кӗрӳ Тӑхтаман
Туй кӗлетне астӑвать.
4. Перекетлӗ сӑрана
Ӗҫе-ӗҫе туй лартар!
5. ... Эсӗ мана хӗнесе
Кӗлрен вутӑ тӑвас ҫук.
6. ... Илтни ҫинчен ҫав хутрах
Ялта сӑмах сараҫҫӗ.
7. Э-э, усал, ытлашши
Ан кар ӗнтӗ ҫӑварна.
8. Кӑнтӑрлапа пӗтӗм ял
**Пӗҫҫисене шарт ҫапать.**

Ҫак тӗслӗхсем Иванов халӑх чӗлхипе усӑ курма пӗлнине кӑтартаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӗсем ӗлӗкхи пурӑнӑҫа пӗлме те нумай пулӑшаҫҫӗ.

Тепӗр кунне ирхине
Чӑваш хире тухмарӗ.
**Эрне куна асӑнса**
Нимӗн ӗҫ те тумарӗ.

Ӗлӗкрех, христос тӗнне йышӑниччен е каярах та, чӑвашсен хӑйсен канмалли кунӗ—эрнекун, пулнӑ,

Е тата урӑх тӗслӗх:

Халь те пулин Силпире
Асӑнаҫҫӗ мӗскӗне.
**Ялан, ҫумӑр ҫумасан,**
**Шыв сапаҫҫӗ тӑприне.**

Ку тӗслӗх, ӗлӗк тӗне ӗненнӗ чух, наука енчен халӑх кайра тӑнине, ҫумӑр мӗнрен пулнине пӗлменнине кӑтартать. Вил тӑприне шыв сапсан, вӗсене хисеплесен е чӳк тусан, вӗсен шучӗпе вара ҫумӑр пулма пултарать имӗш.

Кунсӑр пуҫне, ҫимӗк кунӗ мунча кӗни, тӗшмӗшлӗх кӗллисем т. ыт. нумай (тӗслӗх, вӑрманта тӗлӗк курни, юмӑҫ сӑмахӗсем, Нарспи сӑмахӗсем—наркӑмӑшлӑ яшкана вӗретнӗ чух темтепӗр калани, хӗре пиллени т. ыт. те).

Чӗлхене илемлетсе ҫырас енчен эпир Иванов фольклора та, литература теорине те, чӗлхе пуянлӑхне—илемне таран та ӑста пӗлсе ҫырнине куратпӑр. Кунта юрӑ, тупмалли юмах, аллитераци, эпитет, танлаштару, олицетворени, метафора, метоними, гипербола, повторсем, параллелизм т. ыт. нумайӑшне куратпӑр.

Акӑ, тӗслӗх, халӑх юррине илсе, майлӑ усӑ курнӑ вырӑн:

— Мӗншӗн шӑппӑн ларатӑр,
Мӗншӗн шӑппӑн ларатӑр?
Шӑппӑн-шӑппӑн лармашкӑн
Шӑпчӑк чӗппи мар эпир!—

Е тата:

... Тухса кайрӗҫ хӑтасем
Ырӑ юрӑ юрласа:
**„Айтӑр каяр ҫулпала,
Курка тулли пылпала...“**

*Эпитетсем* (поэзилле определенисем):

**Сивӗ, хаяр** хӗл иртет...
**Тӗттӗм** вӑрман чӗрӗлет,
**Ешӗл** тумтир тӑхӑнать.
**Тӑрӑ** шывӑн ӑшӗнче
**Кӑвак** пӗлӗт явӑнать,
**Ватӑ** йӑмра тайӑлса
Тӗсне пӑхса савӑнать.

*Метафора* (куҫару, чӗрӗ япала пайне ахаль япала ҫине куҫарса калани: сӗтел *ури,* кантӑк *куҫӗ,* кӑмака *ҫӑварӗ):*

Сивӗ, хаяр хӗл иртет,
Каять **йӗрсе, хурланса;**
Сивӗ **куҫҫульпе йӗрет,**
Иртнӗ куншӑн **хуйхӑрса.**

*Олицетворени* (чӗрӗ мар япалана чӗрӗ пек кӑтартни):

1. Тӗттӗм вӑрман чӗрӗлет,
   Ешӗл тумтир **тӑхӑнать,**
   Ҫеҫен хир те ешерет,
   Илемӗпе **мухтанать.**
2. Силпи ялӗ **харлатса**
   Вилнӗ ҫын пек **сывӑрать.**
3. Куллен-кунах саламат
   **Анать-ӗҫке** пӑтаран.
4. Икӗ савни пӗрлешсен,
   Пуҫне **тайрӗ** ват юман.

*Параллелизм* (ҫутҫанталӑкри явленипе ҫын ӗҫне пӗрле илсе кӑтартни):

Ешӗл курӑк хушшинче
Сап-сарӑ чечек ӳсет;
Аслӑ Силпи ялӗнче
Нарспи ятлӑ хӗр ӳсет.

... Хирти сарă чечеке
Ăшă куçпа кам пăхмĕ?
Ун пек лайăх хитре хĕре
Мĕнле каччă юратмĕ?

*Психологилле параллелизм*:

Хирте ака айĕнче
Çерем лап-лап касăлать.
Усал хуйхă-суйхăран
Нарспи чунĕ касăлать.
Кăтăр-кăтăр арман чулĕ
Чĕре çинче авăрать...

*Танлаштарусем* (сравнени):

**Кантур пекех** çурчĕсем...
**Чул хӳме** пек çавăрнă...
Унăн çурчĕ **хула пек...**
Унăн выльăх-чĕрлĕхсем
**Пичĕке пек** çӳреççĕ.
Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм,
**Хирти сарă чечек пек.**
Икĕ куçĕ хуп-хура,
**Икĕ хура шăрçа пек...**
**Нар пек** хитре хĕрĕсем
**Акăшсем пек утаççĕ...**
Йывăç ларать **улăп пек.**

*Повторсем* (пĕр сăмаха, выражение темиçе хут калани):

**Юлашки каç** выляса
Юлас арăм пуличчен,
**Юлашки каç** Сетнере
Курас юта кайиччен.

**Хăй йĕркипе** ташлама
**Вăхăт** пуса каччисен;
**Хăй йĕркипе** юрлама
**Вăхăт** çитнĕ хĕр-çумсен.
**Сĕм-сĕм** вăрман, **сĕм вăрман,**
**Мĕншĕн** хытă шавлатăн?
**Мĕншĕн**, шăй-шай шăхăрса,
Мĕскĕн чуна хăрататăн?

*Гипербола* (ӳстерсе е пĕчĕклетсе калани):

Тĕрлĕ апат айĕнче
Çăка сĕтел **авăнать.**

Силпи ялĕ аслă ял,
**Хула** тейĕн инçетрен.

Тата поэмăра çутçанталăкри япаласем те геройсемпе пĕрле хурланнине, вĕсемпе савăннине куратпăр. Вăл ĕнтĕ çын шу-

хăш-кăмăлне, хуйхи-савăнăçне пĕлме пулăшать.

Тĕслĕх:

1. Чипер кайăр! теет те
   Пуçне таять çул парса.
2. Пÿртри сĕтел-пукансем
   Хăратаççĕ арăмне.
3. Хăйĕн вăрăм аллипе
   Хăратать вăл Нарспие.

Иванов поэми грамматика енчен те пуян: темле формăна та, пур правилăпа та унта тĕслĕхсем тупма пулать. Унăн куçĕ пурне те курнă, пурне те асăрханă. Тарăн шухăшлă вырăнсем те нумай.

Тĕслĕх:

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен.
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.
Анчах вăйлă этем те
Хăй тĕнчене пăхăнать.
Укçапала эрехех
Çынна ăсран кăларать.

Çутçанталăка та Иванов аван картинăласа çырнă. Художник картини пекех куç умне тухса тăрать вăл çырнă явлени.

Тăрă шывăн ăшĕнче
Кăвак пĕлĕт явăнать,
Вата йăмра тайăлса,
Тĕсне пăхса савăнать.

Халăх юрринчи пек, пĕрреллĕ хисеп вырăнне нумайлă хисеп, нумайлă хисеп вырăнне пĕрреллĕ хисеп тĕл пулнине те куратпăр:

Çĕр çĕмĕрсе **каччăсем**
**Ташлать** хапха умĕнче...
**...Шăнкăртатать тенкисем.**

Сăвă форми, техники енчен поэма революцичченхи ытти писательсенни пекех, фольклорпа çывăх тăнине куратпăр. Поэмăна, халăх юррисем пекех, 7 сыпăкпа çырнă. Тĕслĕх:

Çыр-ма ю-хать кĕр-ле-се
Ас-лă я-лăн çу-мĕ-пе.
Хĕ-вел, тĕ-рĕ тĕр-ле-се,
Вы-лять у-нăн шы-вĕ-пе.

Уйрăмрах шухăшсене пайласа, пилĕкшер куплетăн çырса пынă.

Поэмăра диалогсем те нумай тĕл пулаççĕ. Вăл „Нарспи“ поэмăна опера е драма тума та май парать. Ăна сцена çинче вылянă, опера та тунă.

Юлашки çулсенче „Нарспи“ поэмăна вырăсла куçарса кăларнă, халĕ ытти халăхсен (тутар, пушкăрт, мăкшă т. ыт.) чĕлхи çине те куçарса кăлараççĕ.

Иванова чăваш ĕçхалăхĕ ĕмĕр манмĕ, мĕншĕн тесен:

Вăл çурхи юр айĕнчен
Пĕччен тухнă чечек пек,
Ирхи шуçăм умĕнчен
Хăпаракан çăлтăр пек,—
...Чуралăхри чĕлхене
Шанчăк пама курăннă,
Пулас сăвăç туссене
Çул кăтартма пуçăннă.

(С. В. Эльгер—„Нарспи“ авторне асăнса.)

# V. ОКТЯБРЬ РЕВОЛЮЦИЙĔ ХЫÇÇĂНХИ ЛИТЕРАТУРА.

## А. ЧĂВАШСЕН ОКТЯБРЬ РЕВОЛЮЦИЙĔ ХЫÇÇĂНХИ ЛИТЕРАТУРИН ŸСĔМĔ.

Октябрь революцийĕ хыççăн Совет Союзĕнчи пур халăхăн та хăйĕн пурăнăçне, культурине вăйлатма çул уçăлчĕ.

Кашни халăх формипе нациллĕ, содержанипе социализмлă культурине анлăн вăйлатса пырать.

Акă мĕн калать наци культури пирки Сталин юлташ: „Хăйĕн содержанийĕпе социализмлă пролетариллĕ культура, социализмлă строительствăна хутшăннă тĕрлĕ халăхсен, вĕсен чĕлхе, йăла т. ыт. уйрăмлăхĕсене кура, тĕрлĕ формăсемпе тата тĕрлĕ меслетсемпе палăрса пырать... Пролетариллĕ культура наци культурине пăрахăç тумасть, вăл ăна содержани парать. Тата урăхла та, наци культури пролетариллĕ культурăна пăрахăç тумасть, вăл ăна форма парать“.

Хальхи вăхăтра Совет Союзĕнчи 111 халăх чĕлхипе кĕнекехаçатсем пиншер экземплярпа тухса тăраççĕ. Паянхи куна Чăваш республикинче республикăри хаçатсем 4 тухса тăраççĕ: „Чăваш Коммунĕ“, „Красная Чувашия“, „Çамрăк большевик“, „Пионер сасси“. Кусемсĕр пуçне, районсенчи хаçатсем 28, заводсенчи хаçатсем 4, колхозсенчи хаçатсем 2 тухаççĕ, журналсем 5 тухаççĕ: „Ленин çулĕпе“, „Ĕçхĕрарăмĕ“, „Сунтал“, „Хатĕр пул“, „Капкăн“. 1938 çулта Чăвашгиз—149, 1939 çулта 169 кĕнеке кăларнă. Кунсăр пуçне, колхозсенче, учрежденисенче, шкулсенче т. ыт. стена хаçачĕсем тухса тăраççĕ.

Октябрь революцийĕ хыççăн чăваш совет литератури те анлăн ўсме пуçларĕ. Çыракансен йышĕ çулран çулах йышланса пырать. Кам пĕлмест халь Эльгерĕн „Вăрçă кунĕсем“, „Хĕн-хур айĕнче“ кĕнекисене, „Хурçă карап“ сăввине? Кам пĕлмест Уйăп Мишши, Ал. Алга, Арк. Эсхель, Н. Янгас, И. Ивник сăввиюррисене?

Юратса вулать чăваш ĕçхалăхĕ Пайраш, Тукташ, Агаков, Трубина Марфи, Иван Мучи, Данилов-Чалдун калавĕсене; юратса курать Осиповăн, Айзманăн, Кăлганăн пьесисене.

Çав вăхăтрах пирĕн культурăна, литературăна буржуаллă национализм çулĕпе яма пăхнă тăшмансем те пулнă. Революци хыççăнах вĕсем чăваш çĕршывĕнче буржуаллă правительство „Аслă канаш“ тума хăтланнă. Коммунистсен партийĕ, Ленин, Сталин юлташсем ертсе пынипе, пирĕн çĕршыв пусмăрлăхран хăтăлчĕ, шалти тĕрлĕ тăшмансене аркатса, тăрă шыв çине кăларса пычĕ. Анчах çав „нацилле общество“ часах саланман. Вăл урăх ятпа контрреволюцилле ĕç тума пуçланă. Чăваш облаçĕ организацилесен (1920), унăн руководствине буржуаллă националистсем (Эльмень, Г. Михайлов т. ыт.) кĕрсе каяççĕ. „Чăвашсен нацилле обществин“ лагерĕнчи тăшмансем „Вырăнти края тĕпчекен общество“ организацилеççĕ. Вĕсем вырăс, тутар т. ыт. халăхсене хирĕç элек сараççĕ, чăваш халăхне партипе совет влаçне хирĕç тăратма пăхаççĕ. Буржуаллă националистсен тĕп тĕллевĕ вăл—капитализма реставрацилесси пулнă.

Вĕсем, чăвашсем пăлхарсенчен пулса кайнă теорипе усă курса, ĕлĕкхи саманана ырласа çырнă кĕнекесене, пьесăсене пичетлеме, сцена çинче курма май пана, докладсем тунă. Авантюрист-националист М. Юрьев „Пулхăр патшалăхĕн юлашки кунĕсем“ ятлă пьеса çырнă. Чăваш писателĕсен „Канаш“ союзĕн руководствинче ларнă буржуаллă националистсем союз ятне „Пăлхар-чăваш писателĕсен союзĕ“ тесе улăштарма пăхнă.

Буржуаллă националистсем—халăх тăшманĕсем литература фронтне аркатса пынă. Хăйсем „пуçпулса“ тăнипе, литература йышĕнчен çамрăксене е чăваш совет литературине вăйлатма тăрăшакан çынсене пăрса янă. Вĕсем пĕр-пĕрин тăшманла, националистла произведенийĕсене пичет урлă ырласа пынă, çырнăçырман контрреволюцилле произведенисемшĕн премисем валеçсе ларнă. Çак буржуаллă националистсене, миссионерсене, троцкистла бандăсене т. ыт. те пирĕн совет разведки тăрă шыв çине кăларса тĕппипех кăкласа ывăтрĕ. Литература, искусство руководствине шанчăклă, çирĕп большевиксен аллине пачĕ. Пирĕн коммунистсен партийĕ, юратнă çулпуç Сталин ертсе пынипе, Совет Союзĕнчи халăхсем формипе нацилле, содержанипе социализмлă культурине аталантарса пыраççĕ. Вăл çул çинчи тăшмансене аркатса, хăйсен искусствипе литературине çитĕнтереççĕ.

Литература фронтне тĕрĕс çулпа аталантарас тĕлĕшпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ уйрăм постановленисем те йышăннă. Совет Союзĕнчи халăхсен литератури çинчен ВКП(б) Центральный Комитечĕ хăйĕн 1925 çулта йышăннă резолюцийĕнче çапла каланă: „Наци литературине аталантарас ĕç çине те пирĕн союзăн нумай республикĕсемпе облаçĕсенче тимлĕн çаврăнса пăхмалла“.

Парти Тĕпкомĕн 1932 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнче художествăллă литература организацине тĕпрен çĕнетсе урăхлатасси çинчен йышăннă постановленийĕ РАПП, ВАПП, ЧАПП-сене пĕтерчĕ. „Совет влаçĕн платформине тытса тăракан тата социализм строительствине хутшăнса ĕçлеме тăрăшакан писательсене пурне те

Совет писателĕсен коммунистла фракциллĕ пĕрлĕхлĕ союзне йĕрлештермелле",—тенĕ вăл постановленире.

Малалла Октябрь революци хыççăнхи чăваш литературин çинчен, кĕнеке-хаçатсем, журналсем çинчен, писательсен организацийĕ епле пуçланса кайса ÿссе пыни çинче чарăнса тăрар.

Октябрь революциччен эпир чăвашла хаçат „Хыпар" тухни çинчен каланăччĕ. Ун чухне урăх хаçатсем пулман. Октябрь революцийĕ хыççăн пирĕн хаçат-журналсем йышлăн тухма пуçлаççĕ.

1917 çулхи февраль революцийĕ хыççăн эсерсен, миссионерсен ушкăнĕсем „Хыпар" хаçата тепĕр хут кăларма пуçлаççĕ. Унăн содержанийĕ пĕтĕмпех совет влаçне хирĕçле пулнă. Унта кадетсем, эсерсем т. ыт. те пуçпулса тăнă.

1918 çулхи февраль уйăхĕнче вара сулахай эсерсем Хусанта „Хыпара" хупса „Канаш" хаçат кăларма пуçлаççĕ.

1919 ç., Колчак çарĕсем Хусана илсен, „Канаш" вăхăтлăха Шупашкара куçать. Çав вăхăтрах Хусанта „Хресчен сăмахĕ" 3 номер, „Хĕрлĕ ялав" 18 номер тухать. Хусана шуррисем туртса илсен, çав тăшман енне куçнă „Хыпар" каллех тухма пуçлать. Хĕрлисем çĕнтерсен, вăл хаçата ĕмĕрлĕхех хупса хунă. „Канаш" тухма пуçласан, ун тавра чăваш çыраканĕсем: поэтсем, фельетонистсем т. ыт. те чăмăртанма пуçлаççĕ. Çеçпĕл Мишши, Ахах (Ундрицов И.), Тал-Мăрса, Чĕкеç, Эльгер, Викторов, Ваçанкка (Шаланкă), Тăхти, Акимов, Ефремов, Павлов Ф., Осипов П. т. ыт. те хăйсен произведенийĕсене „Канаш" хаçатра та, уйрăм кĕнекен те пичетлеме пуçлаççĕ.

1918 çулта, Хусанта Максимов—Кошкинский пуçарнипе Чăваш театрĕ ĕçлеме пуçласан, пьеса çыракансем (Тал-Мăрса, Ефремов, Акимов т. ыт.), чăваш артисчĕсем (Осипов П., Тал-Мăрса, Илларионов (Иван Мучи), Егоров, Ырзем, Тимофеева) йышланаççĕ. Вырăс чĕлхинчен тата ытти чĕлхерен тĕрлĕ пьесăсем куçараççĕ, вĕсене сцена çинче лартма пуçлаççĕ.

1919—21 çулсенче „Шурăм-пуç" ятлă литература журналĕ тухса тăрать. Унта „Нарспи", „Арçури" т. ыт. пичетленеççĕ.

1918—1919 çç. „Чухăнсен сасси" хаçат тухать. Унта Ахах (Ундрицов) ĕçленĕ. Ку хаçат Хĕрлĕ Çарăн Хĕвелтухăç фронтри V-мĕш армийĕн органĕ пулса тухса тăнă.

1919—22 çç. Ĕпхÿре (Уфа) „Хĕрлĕ Урал" хаçат тухнă.

Мускавра 1922 çултан пуçласа „Ĕçлекенсен сасси" журнал тухса тăнă (каярах вăл „Чăваш хресченĕ", „Коммунар" ятлă хаçат пулса тăнă).

1920 ç., Чăваш Автономиллĕ облаçĕ организациленсен, пирĕн культура центрĕ те Шупашкара куçать. 1921 çулти кĕркуннерен Шупашкарта „Канаш" хаçат т. ыт. те тухма пуçлаççĕ. Чăваш театрĕ те хăй ĕçне аталантарма тытăнать. 1924 çултан пуçласа „Сунтал", 1925 ç. „Капкăн" журналсем тухма пуçлаççĕ.

1923 çулта „Чăваш çырулăхĕн ушкăнĕ" организациленет. Уставне те пичетленĕ пулнă. Анчах вăл ушкăн буржуаллă-националистсен позицинче тăнă. А. Милли ку ушкăна совет влаçне хирĕçле, вырăс культури-чĕлхине хирĕçле ĕçлеттерме шутланă.

Организаци ятне те „Пӑлхар-Чӑваш ҫыру ушкӑнӗ“ тесе ят панӑ.

1923 ҫулхи июлӗн 20-мӗшӗнче пухӑннӑ Чӑваш писателӗсен пухӑвӗ Милли ушкӑнне салатса ярать. Вара ҫӗнӗ ушкӑн—„Чӑваш писателӗсен „Канаш союзӗ“ организациленет.

1924 ҫулхи июнӗн 6-мӗшӗнче „Канаш союзӗ“ пуху (I съезд) пухать. Кунта тӗрлӗ литкружоксенчен (ячейкӑсенчен) те представительсем пулаҫҫӗ (рабфак, совпартшкул т. ыт. те). Кун хыҫҫӑн союз, уйрӑм пичет органӗ кирлине туйса, журнал кӑларса тӑрас ыйтӑва тапратать. Вара 1924 ҫулхи июль уйӑхӗнчен „Сунтал“ журнал кӑларма тытӑнаҫҫӗ. Унччен литература произведенийӗсене „Канаш“ хаҫатра уйрӑм кӗтес, литература кӗтесси, туса пичетлесе пынӑ.

1925 ҫулхи мартӑн 18—20-мӗшӗсенче писательсен союзӗн II-мӗш съезчӗ пухӑнать. Ку съезда ытти республикӑри представительсене те чӗнеҫҫӗ. Союз уставне ҫӗнетеҫҫӗ. Чӑваш хушшинчи ҫамрӑк ҫыракансене пӗрлештерме, кружоксем уҫма пуҫлаҫҫӗ.

1926 ҫулта Чӑваш литератури organizацийӗ Совет Союзӗнчи пур халӑхсен литературине ертсе пыракан Мускаври центрне ВАПП-а кӗрет, унӑн секцийӗ пулса тӑрать. Ятне те улӑштарать: ЧАПП („Чӑваш пролетари писателӗсен ассоциацийӗ“) пулса тӑрать.

1927-мӗш ҫулхи июнь уйӑхӗнче ЧАПП организацийӗ III-мӗш съезд пухать. Съезда тӗрлӗ кружок представителӗсем пухӑнаҫҫӗ. ЧАПП ҫитменлӗхӗсемпе йӑнӑшӗсем пирки нумайӗшӗ туха-туха калаҫҫӗ. ЧАПП икӗ ҫул хушшинче (II-мӗш съезд хыҫҫӑн) ҫӗнӗрен активлӑн ҫыракансене 15 ҫын палӑртнине кӑтартать т. ыт. те.

1930 ҫулта август уйӑхӗнче чӑваш писателӗсен 4-мӗш съезчӗ пулса иртет. Кунта проза, драма, поэзи, ача-пӑча литератури, кулӑш литератури тӑрӑх докладсем лартнӑ.

1932 ҫулхи апрелӗн 23-мӗшӗнче ВКП(б) Центральный Комитечӗ художествӑллӑ литература организацисене улӑштарасси ҫинчен уйрӑм постановлени кӑларать. РАПП, ВАПП организацисен рамки литература фронтне малалла сарӑлса пыма чарса тӑнӑ пирки, ӑна пӗтерсе, Совет Союзӗнчи Совет писателӗсен Союзӗ туса хурать. ЧАПП-та вара пӗтет. Ку постановлени литературӑпа ӗҫлес текенсене, совет майлӑ ҫыракансене йышлӑн хутшӑнма май парать.

## Б. ОКТЯБРЬ РЕВОЛЮЦИПЕ ГРАЖДАН ВӐРҪИ ТАПХӐРӖНЧИ ЛИТЕРАТУРА.

Октябрь революципе граждан вӑрҫи тапхӑрӗнче чӑваш литературинче ҫак писательсем палӑрнӑ: Ҫеҫпӗл Мишши, С. Эльгер, Чӗкеҫ Ҫ., Ахах (Ундрицов), Тал-Мӑрса (Г. В. Зайцев), Тӑхти (И. Ефимов), Ефремов, Акимов, Ваҫанкка т. ыт. те.

Анчах вӗсем ҫав тапхӑрти пысӑк событисене пурте тӗрӗсех кӑтартайман. Хӑшӗ вӑл темӑсемпе сахал ҫырнӑ е пачах та ҫырман (Ефремов т. ыт.). Хӑшпӗрин сӑвви-поэмисем националистла шухӑшлӑ пулнӑ. Ку ӗнтӗ ҫав писательсем Октябрь революципе

граждан вăрçи çине пурте пĕр пек пăхманнинчен килнĕ. Политика енĕпе çирĕп идеологиллĕ писательсем пулса тăрайманнипе, вĕсен произведенийĕсем те пĕр-пĕринпе хирĕçле тухаççĕ.

### И. Е. Ундрицов—И. Ахах (1898—1920).

Иван Евграфович Ундрицов (И. Ахах) Элĕк районĕнче, Уйпуç ялĕнче 1898 çулта вăтам хресчен çемьинче çуралнă. Малтан Хĕрлĕ Чутайри 2 класлă шкулта вĕреннĕ, унтан Хусанти духовнăй семинаринче вĕреннĕ. 1918 ç. Хусанти Педагогика Институтне кĕнĕ, анчах 1919 çулта, çара кайнипе, пăрахма лекнĕ. Унтан вăл „Канаш" хаçат экспедицинче ĕçлет, коммунистсен партине кĕрет. Хĕрлĕ Çарта тухакан „Чухăнсен сасси" хаçатра ĕçлет. Армипе пĕрле фронтра хаçат кăларса çӳренĕ чух шăнса пăсăлать, чирлет. Вара килне таврăнать, 1920 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче вилет. Вăл çак произведенисене çырнă: сăвăсем—„Сарă хĕр", „Шухăш", „Эпĕ кам?" „Карпыч", „Çуралнă çĕршывăма", „Тăван аннене", „Хуралта", „Купăс сасси", „Тăлăх-турат", „Малалла" т. ыт. те; драмăсем—„Тайга пусмăрĕнче", „Марине". Çырма пуçланă поэмăсем те пулнă („Алюнапа Алюшка" „Тăвана юратни" т. ыт..те).

Шуррисене çĕнтерсен, çутă пурăнăç килессе Ахах кĕтнĕ:

Пит çирĕппĕн пĕрлешер,
Шур усала пĕтерер.
Хамăр ӳснĕ çĕршыва
Кăларăпăр çутталла. („Малалла".)

Е тата: ... Тĕрĕслĕхшĕн çапăçма
Вăл ĕненсе вăрçа кĕчĕ...
Хăй çуралнă çĕршывшăн
Хăй пурăнăçне вăл пачĕ...
... Канаш ывăль вăл пулчĕ... („Амăшĕ".)

Хальхи Канаш ирĕкне
Вăл чунĕпе юратрĕ,
Çавна пулăшас тесе,
Кунĕн-çĕрĕн ĕçлерĕ... („Çыру".)

Ку сăвăсенче Ахах çуралнă çĕршыва, Совет Союзне сыхлама кирлине, уншăн пурăнăçа хĕрхенмесĕр çапăçма кирлине кăтартать. Тăшмансенчен ялан сыхă пулма чĕнет вăл:

... Калпак... Çĕнĕ шур кĕрĕк...
Ăш çăматă уринче,
Патронсемпе сыхнă пилĕк,—
Çĕнĕ пăшал аллинче.
Пирĕн хĕрлĕ салтак вăл,
Хуралта иккен тăрать.
Таса, харсăр, лăпкă вăл—
Шур тăшмансенчен сыхлать. („Хуралта".)

**„Тайга пусмăрĕнче“** („Тайга шавлать“) драмăра революцишĕн çапăçакан çамрăксем Çĕпĕрте ссылкăра пурăннине кăтартать. Вĕсем патшана сирпĕтсен ирĕке тухаççĕ.

Ахах вилсен, Çеçпĕл Мишши ăна асăнса çапла çырнă:

... Калас килет сана: Чăваш чĕлхи илемĕ
Ӳссех пырать. Тăрсам! Каллех сăвă çырар.
Тăван çĕршыв чĕлхи малашнехи çинчен
Шухăшласа, пуçа тĕрлĕ шухăш килсен,
Сан иртнĕ ĕмĕрӳ, çĕре кĕнĕ поэт,
Чуна пăчăртаса ялан аса килет.
(„Ахаха асăнса“.)

## ТАЛ-МĂРСА—Г. В. ЗАЙЦЕВ (1895—1921).

Георгий Васильевич Зайцев (Тал-Мăрса) 1895 çулта Чĕмпĕр кĕпĕрнинче Пăва уездĕнчи Упи ялĕнче вăтам хресчен çемьинче çуралнă. Вăл ялти шкултан тата 2 класлă шкултан вĕренсе тухнă. Унтан Чĕмпĕрти Чăваш шкулне кĕнĕ. Ку шкултан вĕренсе тухмасăрах патша вăрçине ирĕккĕн кайнă. Суранланса таврăннă хыççăн учительре ĕçлет. Унтан Хусанти Археологи институтне вĕренме кĕрет.

Вĕреннĕ чухнех вăл чăваш литературипе интересленет. Чăваш хĕрлĕ салтакĕсен труппинче артист пулса, вăл 4 çул ĕçленĕ. Ку хушăра вăл 9 пьеса çырнă, 47 пьеса куçарнă, сăвăсем те нумай çырнă. 1921 çулта Тал-Мăрса Хусанта Восточнăй Академире 4-мĕш курсра вĕренет. Анчах выçлăх пирки т. ыт. сăлтавсемпе тăван çĕршывне пăрахса каять. Унтан, выçлăх хăваланипе, арăмĕпе Çĕпĕрелле тухса каять. Асаплăх витĕр уйăх çурăран Ачинск хулине çиткелесе, унти политехникума истори вĕрентме вырăнаçать. 1921 çулта декабрĕн 7-мĕшĕнче тиф чирĕ лекнипе вилсе каять.

Тал-Мăрса çакăн пек сăвăсем çырнă: „Хирте“, „Чухăнсен юрри“, „Харамза“, „Хĕрлĕ ялав“, „Икĕ юрă“; драмăсем: „Силпи“, „Вăйлисен айăпĕ“, „Кам айăпĕ“, „Ухатер“, „Архай-хан“ т. ыт.

**„Силпи“** ятлă 7 пайлă сăвăллă трагеди вырăс (Мускав) патшалăхĕ ытти çĕрсене çĕнтерсе çӳренине кăтартать. Трагедире Андрей Боголюбский Тивлете-пăлхар паттăрне çĕнтерни—вырăс патшалăхĕ вăйлине пĕлтернĕ. Автор кунта Пăлхар патшалăхне, патшине ырласа çырать, ĕненĕвĕсене кăтартать. Силпи—пăлхар ханĕн хĕрĕ, Тивлетĕн савнийĕ. Тал-Мăрса историллĕ трагедисем татах та çырнă. Вĕсене вăл историллĕ фактсемпе çыхăнтарса çырма тăрăшнă.

**„Вăйлисен айăпĕ“** 6 пайлă сăвăллă трагеди. Трагедире автор Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕпе Иван Яковлевич çинчен çырнă. Вĕсене Тал-Мăрса вăрçса çырать. Иван Яковлевич вĕренекенсене садсенче çӳренĕшĕн ирĕксĕр тытса авлантарнисене, ирĕксĕр качча панисене, çамрăксене илĕртсе, патша влаçне сыхлама вăрçа янине тарăхса çырать. Шкулта вĕренекен Васяпа хĕрачасен шкулĕн-

че вӗренекен Агриппина шкул садӗнче юрату ҫинчен калаҫнӑмӗн. Вӗсене Степан ятлӑ вӗренекен итлесе тӑнӑ. Вӑл Агриппинӑна хӑй илесшӗн пулнӑ. Ҫавӑнпа вӑл Иван Яковлевичпа хӗрачасен шкулӗн наставницине Нат. Яковлевнӑна ҫак ӗҫ ҫинчен пӗлтернӗ. Иван Яковлевичпа Наталия Яковлевна ҫав ҫамрӑксене вӑрҫаҫҫӗ, шкултан кӑларассипе хӑратаҫҫӗ. Ҫапла вара Ив. Як. Агриппинӑна ирӗксӗр качча панӑ пулмалла. Трагеди пӗтӗмпе ҫук. Ҫавӑнпа пурте паллӑ мар.

Тал-Мӑрса сӑввисенчен чи лайӑххисем ҫутҫанталӑкӑн илемӗпе ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ.

**„Хирте“** сӑвӑра тинӗс пек кашласа ларакан ыраш пуссине чунтан савса ҫырать. „Путени те „пӗт-пӗлтӗк!“ тесе хресчене ҫутӑ, ырӑ ӗмӗт сӗнет:

Акӑ вӑл сӑвӑ:

Куҫпа виҫейми,
Вӗҫне ҫитейми,
Вӗҫӗ-хӗррисӗр
Ыраш хумханать...

Аслӑ тинӗс пек,
Канлӗх пӗлмест пек,
Ылттӑн хумӗпе
Хумне хӑвалать.

Лӑппӑн вылятса,
Савса, юратса,
Тулли пуҫаха
Ӑш ҫил чуптӑвать.

Ҫӳлтен, пӗлӗтрен—
Ҫутӑ хӗвелрен
Ылттӑн тинӗсе
Хӗлхем тӑкӑнать.

Ана пуҫӗнче,
Тымар ӑшӗнче
Вӑрттӑн сасӑпа
Путене юрлать.

Ылттӑн тинӗс пек,
Е сӗм вӑрман пек,
Хусканан тырра
Сасси ачашлать.

Пӗт-пӗт, пӗт-пӗлтӗк!
Тутарса илет;
Ҫутӑ, ыр ӗмӗт
Хресчене сӗнет.

1918 ҫулта Хусанта, Октябрь революцийӗ пулни ҫулталӑк тулнӑ ятпа „Эпир пуҫлӑх пулни ҫулталӑк ҫитет“ ятлӑ ҫӳхе кӗнеке тухнӑччӗ. Унта Тал-Мӑрсан „Чухӑн халӑх юрри“, „Харамза“ сӑввисем пичетленнӗ. „Чухӑн халӑх юрри“ сӑввине поэт чухӑнсем ирӗке тухни ҫинчен савӑнса ҫырать.

**ТӐХТИ—И. Е. ЕФИМОВ (1889—1938).** Вӑл граждӑн вӑрҫи вӑхӑтӗнче, 1919 ҫ., „Колчак“ поэма ҫырать. Автор ятне „Ҫавал“ тесе ҫырать. Ку поэмӑна хӗрлӗ салтаксем юратса вуланӑ. Поэмӑна Тӑхти Колчакӑн, унӑн генералӗсен, пупӗсен т. ыт. ирсӗрлӗхӗнчен, ӗҫкӗ-ҫикӗсем туни ҫинчен, вӗсем каллех чухӑнсене пусмӑра хӑварасшӑн хавасланни ҫинчен, кулса ҫырать. Тӑхти Октябрь революцичченех ҫырма пуҫланӑ. Сӑвӑсемпе поэмӑсемсӗр пуҫне калавсем те нумай ҫырнӑ.

**С. В. ЭЛЬГЕР.** Октябрь революци темипе „Хурҫӑ карап“ ятлӑ символлӑ сӑвӑ ҫырнӑ. Вӑл М. Горькийӗн „Песня о Буревестнике“ майлӑ. Хурҫӑ карап—коммунистсен партийӗ, капитанӗ—

Ленин, тинĕс—ĕçхалăхĕ. Вăл „Хурçă карап“ „чуралăх утравĕнчен“ (пусмăр тĕнчинчен) пĕр чарăнмасăр „тăп çыран еннелле“ (коммунизм патнелле) шăвать.

1928 çулта унăн **„Самана“** ятлă сăвă сборникĕ тухать. Унта вăл вăрçă асаплăхĕсем çинчен çырать, халăх ирĕке тухнăшăн савăнать. „Селтти“ ятлă пĕчĕк поэминче Селтти карчăк ĕлĕкхи вăхăтра вăрмана вутта кайсан, вутă лавĕ айне пулса вилни çинчен çырать. Хĕрĕ, Кулюç, амăшĕ таварăнасса кĕтет... „Селтти“ поэма содержанийĕ „Арçури“ баллада майлă. Эльгер тата „Вăрçă кунĕсем“ мемуар, „Хĕн-хур айĕнче“ историллĕ поэма, „Шуçăм килнĕ чух“, „Унтри“, „Кивĕ ялта“ калавсем çырнă. Çырма вăл 1917 çултах пуçланă. Эльгер çинчен уйрăмăн каярах IX-X-мĕш классем валли тухакан учебникре калăпăр.

## ÇЕÇПĔЛ МИШШИ (М. КУЗЬМИН).

(1899—1922)

Михаил Кузьмич Кузьмин (Çеçпĕл Мишши) 1899 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче Шăхасан районĕнчи Касаккасси (Шĕкĕр) ялĕнче, чухăн хресчен çемьинче çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухсан, Шăхасанти второкласнăй шкулта вĕреннĕ. 1917—1918 çулсенче Теччĕри учительсене хатĕрлекен семинаринче вĕреннĕ. 1918 çулта, Хусана шуррисем илнĕ вăхăтра, хăй ирĕккĕн Хĕрлĕ Çара каять. 1918 çултах партие кĕрет, Чăваш облаçĕнчи комсомолăн 1-мĕш съезĕнче президиум членĕ, кайран обкомол членĕ пулса ĕçленĕ.

1921 çулта, Чăваш облаçĕнчи ревтрибунал председателĕ, юстици уйрăмне пăхакан пулса ĕçленĕ. Украинăна юсанма кайсан, Хĕрлĕ Çарта тĕрлĕ ĕçсенче ĕçлет. Харьковри художниксен шкулĕнче те вĕренет.

1922 çулта июнĕн 15-мĕшĕнче, йывăр чирсемпе асапланнă хыççăн, Çеçпĕл Мишши Украинăри Остер ятлă хулара вилнĕ.

Шăхасана вĕренме кĕрсен, Çеçпĕл Мишши сăвă çырас ĕçпе интересленме пуçлать. Алăпа çырнă „Звездочка“ журнал редакторĕ пулать, ăста художник пулнăскер, журнал валли картинисене те хăй тунă. Вăл журнала нумай экземпляр кăларса салатнă. Кунсăр пуçне, вăл питĕ нумай вуланă. Шăхасан шкулĕнчи библиотекăри кĕнекесене пĕтĕмпех вуласа тухнă, теççĕ. Вырăс литературипе сочинени çав тери аван çырнă. Шкул инспекторĕ, хавасланнипе, Çеçпĕле: „Ку — шкулăн пулас директорĕ“, — тенĕ. Çеçпĕл çырнă сочинение Наукăсен Академине те янă, теççĕ. Çеçпĕл Мишши уроксене те пит лайăх итленĕ, тăнланă. Учительсем ыйтсан, питĕ те аван калама пултарнă. Çеçпĕл литературăпа интересленнине, нумай вуланине çак фактсем те аван кăтартаççĕ. Вăл хăй кĕнекисене ыттисене те вулама панă. Мĕнле кĕнекесем пулнă-ха унăн, мĕн сĕннĕ вăл юлташĕсене? „Предлагаю любителям чтения книг из собственной библиотеки: собр. сочинений М. Горького, С. Надсона, Мамина-Сибиряка, Сервантеса и др.“ тесе пĕл-

тернĕ. Вăл Теччĕри семинаринче те литературăпа ĕçленĕ. Журналкăларнă, сăвăсем, теорилле статьясем çырнă, вырăсла произведенисем, сăвăсем çырнă, вырăсларан куçарнă. Теччĕре вĕреннĕ чух (1917ç.) вăл вырăсла çырнă сăввисене, статьисене „Тетюшские известия“ тата Хусанти „Знамя революции“ хаçатсенче пичетленĕ. Вăл унта роман тата пьеса çырма пуçланă, 3 пайне çырнă та пулнă. Л. Толстойăнне „Хаджи Мурат“ повеçне куçарнă, Лермонтовăн „Мцыри“ поэмине куçарма пуçланă. Çеçпĕл М. сăввисем „Канаш“ хаçатра 1918—21 çулсенче пичетленсе пынă. Хăшĕ пичетленмесĕр çухалнă.

Халăх тăшманĕсем Çеçпĕле çав тери курайман. Çеçпĕле айăплас тесе, вĕсем тĕрлĕ майсем шыранă. Юстици çурчĕ çунсан, ăна Çеçпĕл çунтарнă тесе элек сарнă. Çапла вара, айăпсăр Çеçпĕл тĕрмене лекет.

Акă мĕн çырать çав тапхăр çинчен Çеçпĕл М. хăйĕн дневникĕнче: „Эпĕ чи пĕчĕкçĕ обстоятельствăсен мăшкăлĕ пулни мана вĕçĕмсĕр кӳрентерет... Мана тĕрмене тĕртсе кӳртессе эпĕ шансах таратăп. Халĕ ĕнтĕ тăрăшаççех. Эпĕ хамăн пурăнăçăма ырă мар пĕтеретĕп, пулас. Пĕриншĕн кăна çунатăп... коммунист пулса юласчĕ“ (Дневник). Допрос листине ухмахла хут татăкĕ тесе, шутлатăп, ун çине алă пусмарăм. Юстици отделне эпĕ вут тĕртнĕ тесе, ман çинчен ухмах кăна шухăшлать пулĕ тетĕп, çавăн пек ытусене, мана мăшкăлласа, шӳтшĕн кăна параççĕ пулĕ тесе шухăшларăм...“ (Суд материалĕсенчен—Кузьмин М. допросĕ).

Вара çапла çырать дневникĕнче: „Мана чăваш çĕршывĕнче, хамăр облаçра пурнăç пулмĕ“. Выçлăх çул вăл Украинăна каять, Хĕрлĕ Çарта тĕрлĕ ĕçсенче ĕçлет. Çав вăхăтрах унăн ури çĕрме пуçлать. Чăваш халăхне искусство енĕпе хăй мĕн пултарнине пама пултарас çуккишĕн кулянать. Выçлă-тутлă пурăнăç ăна пушшех те начарлатать. Вăл вара хăй паллашнă Украина писателĕ Ф. Покрышня ялне те кайса пурăнать. Çеçпĕл чăваш ĕçхалăхне юратнă, унăн пуласлăхне шаннă. „Манăн хушаматăм халĕ ĕлĕкхин пек Кузьмин мар,—Çеçпĕл. Хушаматăм пулин те хăть мана тăван çĕршывăм çинчен асăнтартăр“, тет юлташĕсем патне çырнă çырăвĕнче.

Вăл хăйĕн сăввисемпе пусмăртан хăтăлнă çĕршыва, чăваш халăхне вăйлатассишĕн тăрăшнă. Уншăн çуннă унăн кăвар пек вĕри чĕри. Вăл шухăш пур сăвăсенче те курăнать.

„Ман юратнă çĕршыв вилĕмрен чĕрĕлни
Пур енчен те савать куçăма“.
(„Катаран каç килсен...“.)

Çĕршывăн пит-куçĕ çĕнелĕ,
Ыран-и, паян-и вăл?—Час... („Хурăç шанчăк“.)
Çук, çук...
Çĕршывăм чĕрĕлет. (Ятсăр сăвă.)
Çĕн тĕнче! Эй, çĕнĕ кунăм,
Каялла ан кай, ан чак!
(„Тинĕсе“.)

Акă чăвашсем пирки çырни тата:

Чăваш çынни авал чухне
Пуçне чиксе шăппăн çӳренĕ,
Тункатаран та шикленнĕ... („Чăн чĕрĕлнĕ".)

Е тата:

Тăван чăваш хăюллине,
Вăл вăйлине курасчĕ ман. (Ятсăр сăвă.)

Кас-кас айне чăвашăн иртнĕ ĕмĕри
Вилсе выртса пытарăнса пырать.
(„Çĕн кун аки".)
Чăваш çынни те халь ĕнтĕ
Хăй пуçне çĕклерĕ,
Чăваш çĕршывне юратрĕ:
„Эпĕ те çын",—терĕ. („Чăваш арăмне".)

... Савнă çĕршывне кайсассăн,
Йывăр тимĕр сăнчăртан
Хăтăлнă чăвашсене...
Çĕнĕ пурнăç хĕвелне
Юратса тăма калатăр... („Тинĕс".)

Халăхсем ирĕке тухнипе пĕрлех, хĕрарăм та çын шутне кĕнине ырласа çырать. Вĕсене вăйланса, çĕнĕ пурăнăçа арçынпа тан активлăн хутшăнма чĕнет, ĕлĕкхи асаплă кун-çулне ылханать:

„Хĕрарăмăн çӳçĕ вăрăм—
Ăсĕ кĕске",—тетчĕç,
Уншăн çут тĕнче курмашкăн
Мĕне кирлĕ?—тетчĕç.
... Чăваш арăмĕ, саншăн та
Хурлăх хыçа юлтăр.
Пулас пурнăçу мăшкăлсăр,
Савăнăçлă пултăр.
Хĕрарăмсем, эсир те халь
Этем шутне кĕрĕр...
Ĕмĕр чура пулма çитĕ...
Ирĕклĕ кунçул тумашкăн
Тăрăр пурте харăс!.." („Чăваш арăмне".)

Çаксем ĕнтĕ Çеçпĕл М., чăваш арăмĕ те ытти халăх хĕрарăмĕсемпе пĕрлех, ирĕке тухни çинчен çырнине кăтартса параççĕ.

Пуринчен ытла Çеçпĕл чăваш чĕлхи пирки нумай çырать. Чаплă, капăр чĕлхе, чаплă поэтсем пуласса кĕтет вăл:

... Тин ирĕке тухрăн, тĕп чăваш чĕлхи!
... Пулас пурăнăçра та çивĕчпе хăватлăх
Ют чĕлхесенчен те кая пулмĕ сан.
(„Чăваш чĕлхи".)

тата: Калас килет сана: Чăваш чĕлхи илемĕ
Ӳссех пырать. Тăрсам! Каллех сăвă çырар.
(„Чăваш поэтне, Ахаха, асăнса".)

„Чăваш чĕлхи текех чухăн мар!
Чăваш чĕлхи чĕрĕлчĕ вилĕмрен.“
(„Чăн чĕрĕлчĕ“.)

„Вăхăт çитĕ“ ятлă статьяра та чăваш чĕлхи пуласлăхĕ çинчен çырать: „Вăхăт çитĕ. Чăваш чĕлхи те тимĕр татĕ. Çивĕч пулĕ, хĕртнĕ хурçă пек пулĕ... ... Вăхăт çитĕ! Вăхăт çитсен, çакна çыраканне:„ Ку чăн каларĕ“,—тесе асăнĕç“. Акă чăваш ачи, чăваш поэчĕ пулассишĕн, хăй чĕлхишĕн тăрăшмалла тесе калани:

Тăван çĕршыв, кала, пĕлтер—
Санăн ятна чапа кăларма,
Сан чĕлхӳне хăват кĕртме
Пултаракан ăçта пулать?
Вут-кăварлă чĕре! Кăвар чĕлхеллĕ
Чăваш ачи, ăçта эс, ăçта?
... Хăçан санăн юрру-сăвву
Янтратса ярĕ? (Ятсăр сăвă.)
Часрах килсе хăватлăх кĕртчĕ
Чăвашăн капăр чĕлхине.
Çунтартăр çулăмлă, кăварлă
Чĕлхӳ çынсен чĕрисене. („Чăваш ачине“.)

Çеçпĕл М. поэт пурăнăç çынни, пурăнăçра та хутшăнса ĕçлекен çын пулмаллине те кăтартать. Некрасов та: „Поэтом можешь ты и не быть, гражданином быть обязан“,—тенĕ. Çеçпĕл те çаплах калать. Акă мĕнле пулмалла поэтăн:

Çĕн куна, çĕн тĕнчене
Юратса çĕн юрă хутăр.
Кĕрешӳ ĕçне-вăйне
Хăй чĕрин хĕвелĕ тутăр.
Çĕн поэт ака та тутăр,
Утă çултăр,
Вутă çуртăр,
Ĕçлесе çĕн юрă хутăр... („Тинĕсе“.)

Паллах, ĕççĕр çапкаланса çӳрекен, пурăнăçра хăйсен большевикла вырăнĕсене тупайман „поэтсене“ Çеçпĕл чăтма пултарайман. Вăл ун пек поэтсене кĕтмен те.

Иртнĕ асаплă пурăнăça Çеçпĕл аван пĕлнĕ. Çавăнпа та вăл Октябрь революциййĕ пулнишĕн, чăваш ĕçхалăхĕ те ирĕке тухнишĕн питĕ те савăннă. Ĕлĕкхи пурăнăç пачах урăхла, йывăр пулни çинчен çамрăксене каласа пама хушать:

Эй, ваттисем!
Эй, ват çынсем!
Авал чăваш асаплă пулнине
Çамрăксене каласа парăр.

Çак сăмахсем авал пурăнăç „аван“ пулнă тенине, „ылттăн, кĕмĕл пăлхар самани“ текен националистла суя элексене çапса салатаççĕ.

Çеçпĕл Мишши пур сăввинче те эпир чăвашсен ĕлĕкхи пурăнăçĕ йывăр пулни çинчен çырнине куратпăр. Тĕслĕх: „Иртнĕ самана“, „Чăваш арăмне“ т. ыт. те. Ĕлĕкхи асаплăх çинчен акă мĕн çырать Çеçпĕл „Иртнĕ самана“ сăввинче:

Старшинапа тиеке
Е пупа курсан,
Хываттăмăр çĕлĕке
Çурă çухрăмран.
Сарлака та пысăкчĕ
Çĕр, тĕнче тавра,—
Санăн ану хĕсĕкчĕ
Сарлака уйра.

Пуянпа чухăн хушшинчи уйрăмлăха та вăл аван кăтартса парать, пуянсене ылханать:

Сан тайăлнă çĕрнĕрен,
Аслаçу пӳртӳ...
Кĕтессенче уласа,
Çил вĕрсе вылять...
Кăмакара выçăхса
Ачу-пăчу выртать...

Çав вăхăтрах:

Пуянсенĕн ĕçкĕре
Юхать пыл-сăра.
Сана пуян ĕçкинче
Пĕр курка тивмест,—
Арăму ун патĕнче
Канмасăр ĕçлет...

Унтан куланай пухни, выçлăх çулĕ, казаксем, патша йыттисем юн тăктарни—иртнĕ асаплăха тарăхса аса илтереççĕ:

... Килчĕ-кĕчĕ сан килне
Кантур йăтăнса.
Куланайшăн ĕнӳне
Кайрĕ вăл тытса...

Çавăнпа та:

Мĕскĕн юлташăм, çакна
Астуса ил те,
Ĕлĕкхи саманана:
„Тĕп пултăр çав!“ те.
... Çĕнĕ çурт лартар!
Пур чухăнсем тĕнчипе
Вăл çурта тăвар.
Вăхăт çитĕ, вăхăт пулĕ!—
Çĕн йĕрке килсен,
Юхмĕ! юхмĕ тек куççулĕ
Пурăнăç хĕсĕкрен!
Çĕнĕ пурăнăç хĕвелĕ
Çунĕ çутатса!

Вăл вăхăт çитрĕ ĕнтĕ. „Çĕнĕ пурăнăç хĕвелĕ çутатса çунать“, ĕçхалăхĕ пуян та культурăллă пурăнăçпа пурăнать. Кивĕ асаплăх ĕмĕрлĕхех хыçа юлчĕ.

„Пуласси“ сăвăра вăл коммунизм çинчен çырать, ирĕк пурăнăçшăн çапăçса вилнисене асăнать:

Ирĕклĕхшĕн вилнĕ тăвансенĕн юнĕ
Чĕлтĕрти çеçкеллĕ хĕрлĕ чечек пулĕ.
Чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх йăранĕ
Ирĕкпе çĕкленнĕ пурăнăçран тарĕ;
Чĕрере ачашшăн çунĕ, çулăмланĕ
Тантăшлăх, тăванлăх, юрату кăварĕ.

„Пурăнăçпа вилĕм“ сăвăра та граждан вăрçинче ирĕклĕхшĕн, коммунизмшăн çапăçса вилнĕ çынсене хурлăхлăн асăнса çырать:

... Ĕç ачи вăл. Çĕнĕ пурнăça
Сыхласа вилнĕ çапăçса.
Чухăнсемшĕн хăйĕн кунçулне,
Çамрăк ĕмĕрне вăл хĕрхенмен.
Коммунизм хĕрлĕ ялавне
Чун тухиччен çĕре ўкермен.

Çеçпĕл чăвашсен пуласлăхĕ пирки савăннă, хавхаланнă. „Эп вилсен“ сăвăра чăваш ĕçхалăхĕ, чĕлхи, çырулăхĕ аталанасса кĕтет:

Эпĕ выртăп... выртăп... юлĕ
    Вăхăт каялла.
Чăваш чĕлхи пурнăç майĕ
    Кайĕ малалла.
Савнă çĕршывăмăн пулĕç
    Чаплă сăвăçсем,
Чаплă та илемлĕ çырĕç
    Ун чухне вĕсем.
... Чăвашра çĕнĕрен сăвăç
    Çуралмассерен,—
Ман тăпра çине саркайăк
    Пытăр ир çинчен.
... Симĕс курăкпа тумлантăр
    Ман тăлăх тăпра;
Хĕрлĕ чечексем ешерччĕр
    Ман вырăн тавра...

Апла пулмасан,—çĕршыв, чăваш чĕлхи, çырулăхĕ пĕтсе ларать пулсан:

... Усал курăк та ан шăттăр
    Ман тăпра çине:
Çĕр çурăлтăр та çĕр çăттăр
    Вил шăмăсене.

Е тата чăваш чĕлхи пирки каланине илер. Акă мĕнле çырать Çеçпĕл:

Ивăр асапран та, тимĕр сăнчăртан та
Эсĕ парăнмасăр хăтăлтăн пулсан,—
Пулас пурнăçра та çивĕчпе хăватлăх
Ют чĕлхесенчен те **кая пулмĕ сан.**

Вилмен пулсан, Çеçпĕл халĕ тата та лайăх произведенисем çырнă пулĕччĕ. Анчах вĕсене вăл хăйпе пĕрле çĕре илсе кĕнĕ. Çавăнпа Украина поэчĕ Ф. Покрышня унăн тăпри çинчи памятник çине çапла эпитафи çырса хăварнă:

Оця едина могила
Великого поэта сховала.
З ним богато писень новых
Будена земля потеряла.[1]

## ÇЕÇПĔЛ МИШШИ СĂВВИСЕН ФОРМИ.

Çеçпĕл Мишши сăвăсене форма енчен питĕ аван шăратса çырма тăрăшнă. Теори енĕпе вăл нумай ĕçленĕ, нумай вуланă. Вырăс, украина, т. ыт. халăх литературине те сăнаса вĕреннĕ. Сăмахран, „Эп вилсен“ сăввине Т. Шевченконăн „Завещание“ майлă çырнă. Шевченко влиянийĕ содержанире те вăйлăн палăрать. Акă малтанхи куплечĕсене танлаштарар:

Ш е в ч е н к о:

Как умру—похороните
На Украйне милой.
Пусть курган в степи широкой
Будет мне могилой.

Ç е ç п ĕ л:

Эп вилсен—мана пытарăр
Çӳллĕ ту тăрне,
Йăмрасем лартса хăварăр
Ман тăпра çине.

Çеçпĕл сăвă техникинче революци тунă. Вăл чăваш чĕлхи законĕпе тоникăллă сăвă çырас техника та килĕшни çинчен татăклăн ответ парать. Тоникăпа çырма пуçлать. Унччен тоника çине сахал çаврăнса пăхнă. Вăл чăваш чĕлхинче ударени ялан сăмах вĕçĕнче пулать текен шухăша та çĕмĕрет. Кун пирки вăл „Сăвă çырассипе ударени правилисем“ ятлă теорилле статья çырать. Акă мĕн калать вăл çав статьяра: „... Çул шырас пулать. Тĕрĕс çул тупас пулать. Сăвă ĕçĕн техникине тума пултарас пулать. Сăвă тăвас ĕçре пит кирли—ударени правилисене тума пултарас ĕç. ...Сăмахсен ударени йĕрки пĕтĕм чăваш чĕлхинче пĕр пулмасан, сăвă ĕçĕн техникине тума кансĕр пулать“. Е тата: „Чăваш поэчĕсен малтан сăвă формине тăвас пулать. Кивĕ фор-

---

[1] Çакă пĕччен çĕ вил тăпри
Аслă поэта пытарчĕ.
Унпа нумай çĕнĕ юрă
Çухатрĕ ирĕкленнĕ çĕр.

ма, çичĕ сыпăклă сăвă чăваш поэзинче ку таранччен патша пулса тăнă. Халĕ çĕнĕ ăслайсем кирлĕ... Ку тĕрĕс çул, мĕншĕн тесен, картина тăвас тесен, малтан сăрă кирлĕ, çурт тăвас пулсан, чи малтан кирпĕч кирлĕ".

Çеçпĕл Мишши сăввисене тоникăпа çырнă. Ударенисем „Нарспи" поэмăри пек е халăх юррисенчи пек йĕрке вĕçĕнче, хыçалта мар—черетленсе пыраççĕ. Тĕслĕх:

Çырма юхать кĕрлесе
Аслă ялăн çумĕпе,
Хĕвел тĕрĕ тĕрлесе
Вылять унăн шывĕпе. („Нарспи".)

— — ⊥ — — ⊥ — — ⊥ — — ⊥
**Анапест:** I. Катаран каç килсен, каçхи кунăн **мĕлки**...
— — ⊥ — — ⊥ — — ⊥
II. Çĕр иртет те килет çутă ир,
— — ⊥ — — ⊥ — — ⊥
Анчах ĕмĕр пĕччен тăлăх хир.
⊥ — ⊥ — ⊥ — ⊥ —
**Хорей:** Лăпкă халăх—пултăр паттăр.
— ⊥ — — ⊥ — — ⊥ —
**Амфибрахий:** Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
Çĕршывăн хастар ачисем.
— ⊥ — ⊥ — ⊥ — ⊥ —
**Ямб:** Пĕлтер мана, тăван çĕршывăм:
— ⊥ — ⊥ — ⊥ — ⊥
Хăçан кăтартăн халăхна?..

Аллитераципе ассонанс та ун сăввисенче йышлăн тĕлпулаççĕ. Тĕслĕх:

**К**ăвак çут **к**ăваккăн
**К**ăвак кантăк витĕр
**С**арă **с**ĕтел урлă
Урайне ўксен...

(„Ака çинче".)

Кăпăк тумлăн, хумлăн-хумлăн,
Çырана çапса, хăюллăн,
Хумлă сулнăксемпе сулăн,
Хумлă кăпăкпа вĕре... („Тинĕсе")

Кунта **У** уçă сасă янăрать, ассонанс пулать.

Е тата: Тинĕс, тинĕс, вăйлăраххăн,
Хăвăртраххăн, çămăлраххăн,
Чул пулсан—хăватлăраххăн,
Хыççăн-хыççăн хум хумла...

Кунта **Х, Р** сасăсем нумай тĕл пулаççĕ, вĕсем тинĕс шавне сăнласа параççĕ.

Е тата: Инçе çинçе уйра уяр...
Çук, уяр мар, çут уйра мар—
... Хĕвел хĕлхемлĕ хĕлĕхсем
Çитмĕл çич чĕлĕхлĕн янăраççĕ...
Ман чĕрере уяр ури,
Хĕвел ури, хĕвел юрри,
Тăри юрри! Шевле сарри.

Повторсем те тĕл пулаççĕ. Тĕслĕх:

**Миçе** ĕмĕр витĕр асаппа тухмарăн,
**Миçе** çичĕ ютăн măшкăлĕ пулса.

Çеçпĕл Мишши чăваш писателĕсен организацийĕ тăвассишĕн, сборниксем кăларассишĕн тăрăшнă. Анчах вăл ĕçсене тăвиччен вăл вилнĕ.

Çеçпĕл—халăх поэчĕ, поэт-коммунист; кăвар чĕреллĕ поэт пулнă. Çавăнпа та вăл хăй çинчен çапла çырнă:

Кăвар чĕрем—пин çын чĕри,
Чĕрем юрри—пин çын юрри.
(„Хурăç шанчăк".)

## С. Ф. Фомин.

(1903—1936)

Семен Фомич Фомин (Чĕкеç, Хумма Çеменĕ) Тăвай районĕнчи Нăрваш ялĕнче, чухăн хресчен çемьинче 1903 çулта çуралнă. Нăрвашри 2 класлă шкултан вĕренсе тухсан, 1918 çулта Шăхасанти вăтам шкула вĕренме кĕрет. Вĕреннĕ чухне вăл комсомол ретне кĕрет. Комсомол организацинче чи хастарлă ĕçлекенсенчен пĕри пулать. 1919 çулта вăл Нăрвашра комсомол организацине пуçарса ярать, ялти кулаксемпе кĕрешет. 1920 çулсенче Хусанти педагогика курсĕнче вĕреннĕ, землемерсен курсĕнче те пулнă. Çав вăхăтрах сăвăсем те пичетлесе кăларнă. Сăввисем унăн революцишĕн, çĕнĕ пурăнăçшăн савăнса çырнăскерсем пулнă. 1920—1930 çулсенче вăл „Канаш" хаçат редакцинче ĕçлет.

1930—1936 çулсенче Чăвашгизра редактор пулса ĕçленĕ. 1936 çулхи сентябрĕн 25-мĕшĕнче Хумма Çеменĕ вилнĕ.

Хумма Çеменĕ çырма сăвăсенчен пуçланă. Унăн малтанхи сăввисем „Канаш" хаçатра тухса пынă. Каярах „Сунталра" т. ыт. çĕрте пичетленеççĕ. Унăн хăшпĕр сăввисене пăхса тухар.

1. **„Кĕтӳç"** сăвă кĕтӳçĕн хирти савăнăçне кăтартать. Вăл шăхлич каласа çырла татан хĕрсене итлеттерет, çĕнĕ юрăсем юрласа уй-хир илемне кăтартать.

Хаваслăхпа ирĕке
Юрла, юрла ху кăтарт!—тет.

2. **„Йывăр çул хыççăн"**. Ку сăвă выçлăх çул çынсем выçăпа тертленнине, вилнине кăтартать:

Эх, хуйхă-çке, хуйхă-çке,
Пӳрте пуснă-мĕн:

Хӗр ашшӗсем Ҫӗпӗрте
Вилсе юлнӑ-мӗн...
Выҫлӑх хурри пулнисем
Ялта пит нумай;
Нихӑҫан йӗрмен тӑвансем:
Ай-ай, теҫҫӗ,—ай!..

Выҫлӑх ҫул йывӑррӑн иртнипе поэт ӑна урӑх ан пултӑр, хыҫа тӑрса юлтӑр тесе ҫырать хӑйӗн ҫӗнӗ ҫул ячӗпе ҫырнӑ сӑввинче:

Ҫӗнӗ шанчӑк—ҫӗнӗ ҫул,
Ҫӗнетсем юрруна!
Выҫлӑх ҫулӗ, эсӗ юл
Инҫетри катана!.. („Канаш", 1 № 1922 ç.)

3. **„Ҫу уйӑхӗн 1-мӗш кунӗ"** сӑвӑра май уявӗ ирӗклӗ ҫӗршывра епле аван иртни ҫинчен, ҫав вӑхӑтрах капитализм ҫӗршывсенче ирӗклӗхшӗн ҫапӑҫакансем тӗрмере асапланса пурӑнни ҫинчен ҫырать.

4. **„Атӑл тулнӑ чух"** сӑвӑра ҫуркуннехи Атӑл илемне, унӑн вӑй-хӑватне сӑнласа панине куратпӑр.

5. **„Вутлӑ юпа"** сӑвӑра Октябрь революцийӗ Совет Союзӗнчи ӗҫхалӑхне ирӗке кӑларни ҫинчен, вӑл „Ҫӗр тутӑхне ҫунтарни" ҫинчен ҫырать:

Ӗҫхалӑхин ҫунан юпи,
Ҫунах, ҫунах, ҫунах!
Ҫӗнет ҫӗре... Ҫӗр тутӑхне
Ҫунтар, ҫунтар, ҫунтар!

Сунталӑн 11 №-че (1925 ç.) Хумма Ҫеменӗн „Сонет" пичетленнӗ. Унта вӑл кивӗ пурӑнӑҫ йӑлисем, тӗне пӑхӑнасси чӑваш халӑхӗ хушшинче пӗтсе пынине кӑтартать. Ӗлӗк хӗрсем турра ӗненсе венчете кайнӑ пулсан, халь ун ҫинчен шутламаҫҫӗ те:

Эс те, сар хӗр, халӗ ӗнтӗ урӑхлантӑн ҫак:
Венчете айта, тесе те каламастӑн ак!—тет.

**„Анюкпа Ванюк"** драмӑра автор революци хыҫҫӑнхи ҫулсене сӑнласа кӑтартать. Чукмар Павӑлӗ, чухӑн ҫын, укҫа хыҫҫӑн кайса, хӑйӗн Анюк ятлӑ хитре хӗрне пуян ывӑлне, Кӗркурие, парасшӑн. Анюкӗ ялти чухӑн ачине, Ванюка, юратать. Анюк хӑйне ирӗксӗр Кӗркурине качча парасси ҫинчен Хӗрлӗ Ҫарти Ванюк патне ҫыру ярать. Туй пулас умӗн Ванюк яла ҫитсе, Анюка хӑтарать. Хӑй патне илсе каять. Кайнӑ чух ҫапла калать: „Кайӑпӑр!.. Ӗлӗк ӑна ашшӗ-амӑшӗсем епле тӑвас тенӗ, ҫавӑн пек пулнӑ... Авалхи вӑхӑт авалах юлтӑр... Кайӑпӑр!.." тет.

Анюк та: „Кама юрататӑп—ҫавна каятӑп. Сывӑ пул, атте!"—тесе тухса каять.

2. **„Варвари"** „(Сунтал" ,2 №, 1926 ç.) —тӑватӑ пайлӑ пьеса. „Варвари" содержанийӗ ҫапла: Ӗҫ хулари пӗр учреждените пулса иртет. Учреждените сторожиха пулса Варвари пурӑннӑ. Унта

заведующи пулса Иван Петрович ӗҫленӗ. Вӑл учрежденире кучер пулса ӗҫлекен Иван урлӑ Варварие тутӑрсем панипе тата ӗҫтерсе хӑй майлӑ ҫавӑрать, пусмӑрлать. Ҫакӑн хыҫҫӑн, ку ӗҫе сӳнтерсе лартас тесе, Варварие ӗҫрен кӑларса ярать. Варвари профсоюза пӗлтерет. Анчах профсоюз представителӗ Сидоров ӗҫӗн тӗпне-йӗрне тупса ҫитерейместь, Варварине урӑх вырӑн шырама хушать. Иван кучер та Варвари майлӑ мар. Варвари вара пӗтнӗ ҫын пек садра ҫӳрет. Иван Петрович машинисткӑпа ларнине курсан, машинисткӑна ҫав путсӗр ҫынран пӑрахса кайма хушать: „Асту, сана та пӗтерет“,—тет. Кун хыҫҫӑн Варвари ӗҫе суда парать. Иртӗхсе, аскӑнланса пурӑнакансене суд тивӗҫлипе айӑплать.

3. **„Колхоз ҫулӗпе“**. („Сунтал“, 2—3 №, 1930 ҫ.). Ку пьесӑра автор колхоз пуҫланнӑ ҫулсене кӑтартать. Кулаксем, сектантсем, шур офицерсем колхоз строительствине епле чӑрмантарса пынине кӑтартас тенӗ пулас автор, анчах вӑл—пьесӑра курӑнмасть. Класс кӗрешӗвӗ ҫук. Кунта ун вырӑнне ҫапла кӗрешӳ иккен: арҫынсем—колхозшӑн, хӗрарӑмсем—хирӗҫ. Микула—ялти пуян, арман хуҫи, Колчак офицерӗ—Хӗлип, сектант—Ульки. Ҫаксем пурте пьесӑра мӗнле кӗрешни начар палӑрать. Энтри коммунист та ҫемҫе тухнӑ. Ҫаксем ӗнтӗ автор ялти класс кӗрешӗвӗ мӗнле пынине ӑнланса ҫитейменнинчен килнӗ йӑнӑшсем пулса тӑраҫҫӗ.

Малалла унӑн творчествинче паллӑ вырӑн йышӑнса тӑракан „Шишка“ тата „Орфей чӗрӗлсе тӑни“ калавсем ҫинче чарӑнса тӑрӑпӑр.

**„Шишка“** калав „Сунталӑн“ 1925 ҫулхи 11 №-че тата „Ҫул ҫинче“ кӗнекере 1933 ҫ. пичетленнӗ. Хумма Ҫеменӗ ку калавра бюрократланса кайнӑ Василий Иванович ятлӑ ҫын ҫинчен ҫырать. Шупашкарти пӗр учрежденире вӑл пуҫлӑх пулса ӗҫлет. Ялта арӑмӗпе ачисем пур пулин те, хулара урӑх майрапа пурӑнать. Кабинетӗнче те майрипех ахӑрса ларать, ӗҫпе пынӑ ҫынсене те йышӑнмасть. Пӗррехинче ҫакӑн патне ялти арӑмӗпе ашшӗ пыраҫҫӗ. Вӑл вӗсене кӗртмест, йышӑнмасть те, палламасть те. Хӑйсен ялӗнчи Хӗветӗре те паллами пулнӑ... Юлашкинчен ҫак „шишкӑна“, бюрократа, вырӑнтан кӑларса ҫапаҫҫӗ. „Шишкӑран“ та вӑйлӑрахххи пур иккен тӗнчере!“—тет автор. Ҫапла вара Шишка умне ҫакӑн пек хут пырса выртать: ...„ За некоммунистические поступки тов. Иванова В. И. исключить из рядов ВКП(б). Предложить... снять его с заведывания... Отв. секретарь Партколлегии (алӑ пуснӑ)“.

Ку калавра Хумма Ҫеменӗ бюрократла служащисене тӑрӑ шыв ҫине кӑларать. Шишка—бюрокартла служащисен сӑнарӗ пулса тӑрать. Ун пек бюрократсемпе пирӗн вирлӗн кӗрешмеллине, вӗсем халӗ те пӗтменнине астутарать.

**„Орфей чӗрӗлсе тӑни“**. („Сунтал“. 6 №, 1936 ҫ.). Ку калав патша саманинче пусмӑр айӗнче таптаннӑ халӑхсем революци хыҫҫӑн талантсене ӳсме ҫул тупнине кӑтартать. Калавра Нимӗҫ Иванӗ ҫинчен каланӑ. Вӑл ҫамрӑк чух ӑста купӑсҫӑ пулнӑ. Сӗрме купӑс каланӑ, вӗсене хӑй те тунӑ. Анчах ӳссе ҫитсен, ӗлӗкхи

пуранаç ана музыка ĕçне пӑрахтарать, Мелекес, Самар еннелле ĕç шырама ярать. Çавӑнпа та Нимĕç Иванĕ 30 çул хушши купӑс тытса курман. „Ахӑр, пуранӑç урапи ун урлӑ çав тери йывӑррӑн пусса каçса кайнӑ-тӑр",—тет автор.

Революци хыççӑн вара Нимĕç Иванĕ музыка ĕçне çĕнĕрен тытӑнать. Колхоз вечерĕнче, ака туйĕнче Паçанпа иккĕшĕ çĕнĕрен купӑс калама пуçлаççĕ. „Совет кӑварне илсе пырсан", вĕсем чĕрĕлсе тӑраççĕ. Ĕлĕк вĕсем сӳнсе пынӑ е пачах çухалнӑ. Çавӑнпа та композитор çапла калать: „Халӑх хушшинче мĕн чухлĕ талант пĕтмен пулĕ çавӑн пек? Шухӑшласан, çӳç-пуç вирелле тӑрса каять. Пирĕн халĕ ĕнтĕ, çĕнĕрен çуралаканнисене çитĕнтернипе пĕрлех, çав вилсех пĕтейменнисене те тепĕр хут чĕрте-чĕрте тӑратмалла",—тет. Çапла совет влаçĕ талантсене çул парать, вĕсене çĕнĕ вӑй парса чĕртет. Совет Союзĕнче кам пулас тесен те çул уçӑ. Çакна каласа парать ĕнтĕ „Орфей чĕрĕлсе тӑни" калав. Çакӑнта унӑн пахалӑхĕ.

Калав чĕлхи аван. Калава халӑх чĕлхин пуянлӑхĕпе, сӑмах çаврӑнӑшĕсемпе анлӑн усӑ курса çырнӑ. Вĕсем питĕ вырнаçуллӑ тухаççĕ. Кашни герой хӑй чĕлхипе калаçать.

Хумма Çеменĕ чӑваш поэзийĕ çинчен, уйрӑм поэтсем, писательсем çинчен „Канаш" хаçат çине теорилле, критикле статьясем те çырса тӑнӑ. Хӑйĕн сӑввисене те форма енчен илемлĕ тума тӑрӑшнӑ. Çамрӑк çыракансене хаçат урлӑ консультацисем парса тӑнӑ. Çапла вара, юлашки çулсенче Хумма Çеменĕ тĕрлĕрен националистла шухӑшсенчен, пӑтрашусенчен хӑтӑлса пынӑ, литературӑра тĕрĕс çул тупнӑ.

### Д. И. Исаев. (1905—1930).

Дмитрий Исаевич Исаев (Авраль) 1905 çулта Вӑрмар районĕнчи Кавал ялĕнче чухӑн хресчен çемьинче çуралнӑ. 13 çула çитсен, тӑлӑха тӑрса юлнӑ. Революци хыççӑнах вӑл çамрӑксем хушшинче ĕçлеме пуçланӑ. 1919 çулта комсомола кĕрет. 1921 çулта ӑна Мускава ачасен çуртне янӑ. Унта пурӑннӑ вӑхӑтра вӑл заводри çамрӑксен стена хаçатĕнче редактор тата политшкул пуçлӑхĕ пулса ĕçлет. Исторический материализм курсĕнче вĕренет. 1924 çулта Шупашкара ĕçлеме тавӑрӑнать, „Канаш" хаçат редакцинче ĕçлеме тытӑнать. 1925 çулта ӑна Шупашкар райкомолĕн ответлӑ секретарьне суйлаççĕ. Çав вӑхӑтрах Шупашкарти чӑваш педтехникумĕнче обществоведени учителĕ пулса ĕçлет. 1925 çулта кĕркунне вӑл Мускаври Коммунистический университета (КУТВ) вĕренме каять. Анчах виçĕ уйӑх вĕреннĕ хыççӑнах ӑна, чахотка чирĕ лекнĕ пирки, каялла яраççĕ. Вара вӑл каллех Шупашкарта, „Канаш" хаçатра, ĕçлет. 1925 çулти декабрьте „Çамрӑк хресчен" (халь „Çамрӑк большевик") хаçат тухма пуçласан, унӑн редакторĕ пулать. Хӑйĕн сывлӑхĕ начаррине пӑхмасӑрах, вӑл общество ĕçĕсенче хĕрӳллĕн хутшӑнса ĕçлет. Çав вӑхӑтрах литературӑпа та вӑйлӑн интересленет, калавсем, очерксем, фельетонсем çырать. Унӑн произведенийĕсем чӑваш литературине идеологи енчен чĕрĕ сывлӑш кĕртеççĕ. Коммунист-писа-

тель, критик чăвашсен илемлĕ литературине пролетарилле никĕс хывассишĕн кĕрешет.

1926 çулта ăна Хĕрлĕ Çара илеççĕ. Чахотка чирĕ тепĕр хут çивĕчленме тытăннипе Хĕрлĕ Çартан таврăнать, Самара (Куйбышев) кĕпĕрнин комсомол комитетĕнче инструктор пулса ĕçлет. 1927 çулта Исаев кĕçĕн Елчĕк районĕнчи парти райкомĕн агитаципе пропаганда пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет. 1928 çулта—„Сунтал“ журналăн ответлă секретарĕ. Калавсем, критикăллă статьясем çырать. Чăваш литературин идеологи фронтĕнче национализмла, есенинла т. ыт. тăшманла юхăмсемпе вирлĕн кĕрешет. 1929—30 çулсенче Исаев Самара хулине пурăнма куçать. „Колхозник“ хаçатра ĕçлет, ăна редакцилет. 1930 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче Исаев Мĕтри чахотка чирĕпе вилсе каять.

Исаев Мĕтри нумай пурăнаймарĕ. Çапах та чăваш литературинче вăл паллă йĕр хăварчĕ. Унăн произведенийĕсемпе критикла статьисем литературăра пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вăл чăваш пролетари литературине тăвассишĕн ырми-канми ĕçлекен писатель-коммунист пулнă.

**„Рабфак хĕрĕ“**. Ку калав 1927 çулта „Сунталра“ пичетленнĕ, каярах хрестоматисенче, сборниксенче те тухнă.

Калавра полковой шкулта вĕренекен примерлă курсант Семен Гаврилов лагерьте пурăннă чух автора хăйĕн пурăнăçĕнчи пĕр паллă истори çинчен каласа панине çырса кăтартнă. Çамрăксен юратăвĕ сапаланчăк пулмалла мар, вăл общество интересĕпе çыхăнса тăмалла. Çавăнпа та комсомолецсем çĕнĕ пурăнăç тунă чух малта, примерлă пулса пымалла. Исаев Мĕтри, комсомолеца Семен пурăнăçĕнчи тивĕççĕр ĕçсене кăтартса, çĕнĕ пурăнăçшăн, çĕнĕ йăлашăн кĕрешет.

**„Лисук Чăптаçă“** калав 1929 çулхи „Сунталăн“ 9, 10, 11 №-че пичетленнĕ. Каярах „Çĕнелнĕ йăх“ кĕнекере тухнă.

М. Исаев ку калавра реконструкци тапхăрĕнчи ял сăнне çав тери тарăн кăтартса парать. Унăн произведенийĕ тăрăх иртнĕ тапхăрти чăваш ялĕ куç умне пит те чĕррĕн тухса тăрать. Халăх калаçни те куç умĕнчех,—ху курнă пек, итлесе тăнă пек, туйăнать.

**„Çулăмри ял“** повеçре М. Исаев граждан вăрçи вăхăтĕнчи чăваш ялне çырса кăтартать. Ĕç Чашкăрма ялĕнче пулса иртет. Ял хушшинче Хĕрлĕ Çар валли коммунистсем, ĕçлĕ çынсем тырă, лашасем пухаççĕ. Кулаксен тыррисене, лашисене илеççĕ. Куçма, революцишĕн çунакан çын, Хĕрлĕ Çара ирĕккĕн каять. Çав вăхăтрах кулаксем совет влаçне хирĕç кĕрешнине те куратпăр.

**„Отряд“** калавра та („Сунтал“, 5 №, 1928 ç.) Исаев граждан вăрçи вăхăтĕнчи класс кĕрешĕвне кăтартать. Хĕрлĕ Çар валли тырă, лашасем пухма пырсан, кулаксем хирĕç тăраççĕ: тыррисене пытараççĕ, спекулянтсен аллине Кăрмăшалла тартаççĕ. Анчах чухăнсем вĕсене хирĕç кĕрешеççĕ, пытарнă тыррисене тупаççĕ. Ку ĕçре Михайлов, отряд пуçлăхĕ Сазанкин паттăрăн ĕçлеççĕ, вĕсем Хĕрлĕ Çара пулăшма кирли çинчен халăха ăнлантарса параççĕ. Автор тĕрлĕ наци ĕçхалăхĕ пĕр шухăшлă, интернационаллă шухăшлă пулса революцишĕн кĕрешнине кăтартать.

## VI. СӐВӐСЕМ.

### СӐВӐСЕН ФОРМИ. СӐВӐСЕНЕ МӖНЛЕ ÇЫРАÇÇӖ.

Литературӑра нумай жанр пуррине куратпӑр: сӑвӑлла, калавла, драмӑлла произведенисем т. ыт. те. Вӗсем хӑйсем каллех темиçе вак жанрсене пайланаççӗ: ода, юрӑ, эпиграмма, поэма т. ыт. те.

Кунта эпир сӑвӑлла произведенисен формисемпе вӗсене мӗнле çырнипе паллашса тухар. Сӑвӑсем ытти жанрсенчен формипе уйӑрӑлса тӑраççӗ. Сӑвӑсене сасӑ енчен йӗркелесе çырнӑ. Вӗсем калав е ахаль статьясен йӗркисем пек тем тӑршшӗ пулма пултараймаççӗ. Сӑвӑсене виçене (ритм), слогсен шутне, ударенисене пӑхӑнса çыраççӗ. Сӑвӑ виçисене вӗрентекен наукӑна **метрика** теççӗ. Метрика виçи виçӗ тӗрлӗ пулать: **метрика, силлабика, тоника**.

Чӑваш халӑх юррисем силлабикӑна çывӑх. Силлабика виçин законӗ çапла: йӗркери слогсен шучӗ пӗр пек, ударени хыçалта. Пирӗн халӑх юррисем нумайӗшӗ 7 сыпӑклӑ, ударени сӑвӑ йӗрки вӗçӗнче пулса пырать. Акӑ, тӗслӗх илсе пӑхар:

Эп каймӑттӑм вӑрмана,—7 слог.
Хура çырла илӗртет.—7 слог.
Эп тухмӑттӑм уллаха,—7 слог.
Сарӑ савни илӗртет.—7 слог.

Кунта эпир кашни йӗркерех 7 слог пулнине куратпӑр тата ударени йӗрке вӗçӗнче пулса пырать. „Арçури",„Нарспи" произведенисене те çав 7 слоглӑ виçепех çырнӑ. Тӗслӗх:

Хӗвел ансан Хӗветӗр (7)
(Эсир ӑна пӗлетӗр) (7)
Хӗвне çӑкӑр чикрӗ те, (7)
Тухрӗ, кайрӗ вӑрмана... (7)
(„Арçури".)

Е тата:

Пуш уйӑхӑн вӗçӗнче (7)
Хӗвел пӑхрӗ ӑшӑтса, (7)
Силпи чӑваш ялӗнче (7)
Юр ирӗлчӗ васкаса. (7)
(„Нарспи".)

Çапла, революцичченхи чӑваш литератури фольклора питӗ çывӑх тӑнӑ, вӑл халӑх поэзийӗ, юрри майлӑ пулнӑ.

Революци хыççӑн чӑваш литературинче тоника мала тухса тӑчӗ. Силлабикӑпа силлабико-тонически сӑвӑсем сахаллансах пыраççӗ. Чӑнах та, сарлака та тарӑн, кӗрлевлӗ çӗнӗ пурӑнӑçа 7 сыпӑклӑ сӑвӑпа кӑна кӑтартма май çук.

Тоника виçин тӗп законӗ çапла: ударени йӗрке вӗçӗнче мар, йӗрке тӑршшипех пӗрре е икӗ слог урлӑ черетленсе ларса пырать. Слог шучӗ те йӗркере 7 мар, тӗрлӗренех. Тӗслӗх, Эльгерӗн „Хурçӑ карапне" илер:

Кăвак тинĕсре шавлакан хумсем урлă (12)
Шăвать пĕр карап тăп çыран еннелле. (11)
Вăл ишнĕ шыв çулĕ пит тертлĕ, хĕн-хурлă, (12)
Нумай вăл кĕрешнĕ умри хĕнпеле. (11)

Ударени те хыçалта мар, хыçалтинчен 2-мĕш слог çинче. Ударени сăвă йĕркисем тăршшĕпе 2 слог урлă черетленсе пырать:

Кă-вак, ти-нĕс-ре шав-ла-кан хум-сем ур-лă
Шă-вать пĕр ка-рап тăп çы-ран ен-нел-ле.

Мĕншĕн апла-ха вăл? Мĕншĕн тесен пирĕн чăваш чĕлхин ударени сăмах пуçламĕшĕнче те, варринче те, вĕçĕнче те пулма пултарать. Ударени сăмахра тĕрлĕ вырăнта пулни, вăл сăвă йĕркисенче черетленсе пыни сăвăсене тоникăпа çырма май парать. Çеçпĕл Мишши те хăйĕн сăввисене тоникăпа çырнă. Вăл „Сăвă çырассипе ударени правилисем“ ятлă статьинче чăваш поэзинче тоника пулмаллине татса парать.

Чăваш чĕлхинче ударенисем сăмахра тĕрлĕ çĕрте пуласси çак законсенчен килет:

1. Сăмахра уçă сасăсем пур те вăрăммисем пулсан, ударени юлашки уçă сасă çине ӳкет (патак, урапа, каймалла).

2. Сăмахра уçă сасăсем пур те кĕскисем (ă, ĕ) пулсан, ударени яланах мала ӳкет (тĕлĕнтĕмĕр, пăрăнтăмăр).

3. Сăмахра уçă сасăсем вăрăммисем те, кĕскисем те пулсан, ударени юлашки вăрăм уçă сасă çине ӳкет (пуçтарăнчĕç, ĕçлеттерчĕç, кăмăлланчĕ.)

Тоникăн тĕп виçисем çаксем: хорей, ямб, анапест, дактиль, амфибрахий. Хорейпа ямб виçисенче 2 слог пуçне пĕр ударени пулать, çавăнпа вĕсене икĕ сыпăклă виçе (двухсложный размер) теççĕ. Ыттисенче 3 сыпăк пуçне пĕр ударени лекет. Вĕсене виçĕ сыпăклă виçе (трехсложный размер) теççĕ. Вĕсен схеми вара çапла пулать:

| | | |
|---|---|---|
| I. — ⌣ — ⌣ — ⌣ — ⌣ | (— ⌣)—хорей) | икĕ сыпăклă |
| II. ⌣ — ⌣ — ⌣ — ⌣ | (⌣ —)—ямб) | |
| III. ⌣ ⌣ — ⌣ ⌣ — ⌣ ⌣ — ⌣ ⌣ — | (⌣ ⌣ —) — анапест | виçĕ сыпăклă |
| IV. — ⌣ ⌣ — ⌣ ⌣ — ⌣ ⌣ — ⌣ ⌣ | (— ⌣ ⌣) дактиль | |
| V. ⌣ — ⌣ ⌣ — ⌣ ⌣ — ⌣ ⌣ — ⌣ | (⌣ — ⌣) амфибрахий. | |

Халĕ сăвă тĕслĕхĕсене кĕртсе çырар:

I. Эп вилсен—мана пытарăр
Çӳллĕ ту тăрне, **Хорей.**
Йăмрасем лартса хăварăр
Ман тăпра çине („Эп вилсен“, Çеçпĕл М.)

Ударени йӗркере 4 хут тӗл пулать: 4 мӑшӑр слог. Вӗсене стопа теççӗ. Ку йӗркере 4 стопа, çавӑнпа тӑватӑ стопаллӑ хорей пулать. 2, 4 йӗркисем—виçӗ стопаллӑ хорей.

II. Пӗлтер мана, тӑван çӗршывӑм:
Хӑçан кӑтартӑн халӑхна **Ямб.**
Ху чӗлхӳне хӑват кӗртмешкӗн
Тӗнчене килнӗ ывӑлна?
(„Чӑваш ачине", Çеçпӗл М.)

III. Шӑранса çӗкленет юрӑ ман чӗрере.
Чаплӑ ӗмӗр çинчен чаплӑ юррӑм пур ман.
Халиччен çын курманччӗ кун пек ӗмӗре, **Анапест.**
Çук, кун пек çынсене нихӑш ӗмӗр курман!
(„Ӗмӗрсен ӗмӗчӗ", Уйӑп М.)

IV. Тӑп-тӑрӑ уйӑхлӑ каç.
Çӑлтӑр çӳлте пит нумай. **Дактиль.**
(„Колхозри каç", Уйӑп М.)

V. Кӑвак тинӗсре шавлакан хумсем урлӑ
Шӑвать пӗр карап тӑп çыран еннелле. **Амфибрахий.**
Вӑл ишнӗ шыв çулӗ пит тертлӗ, хӗн-хурлӑ,
Нумай вӑл кӗрешнӗ умри хӗнпеле.
(„Хурçӑ карап", Эльгер.)

## РИФМӐСЕМ.

**Рифма** тесе сӑвӑ йӗркисен вӗçӗсем пӗр пек пӗтнине е пӗр пек янӑранине калаççӗ. (Тӗслӗх: пуласлӑх—çул аслӑ, умрисем—йӑмрисем, майӗ—кайӗ, капӑр—декабрь). Рифмӑсем çакӑн пеккисем пулаççӗ: **мужская**, **женская**, **дактилическая**, **гипердактилическая**. Ударени юлашки слог çине ӳксен, **мужская** рифма пулать. Йӗркере ударени хыçалтан 2-мӗш слог çине ӳксен—**женская**, 3-мӗш слог çине ӳксен—**дактилическая**, 4—5-мӗш т. ыт. çине ӳксен—**гипердактилическая** рифма пулать. Тӗслӗх:

I. Карели каçӗ калама çук ка**пӑр**, (женская)
Карели каçӗ кантӑк пек кӑ**вак**. (мужская)
Ак иртсе кайрӗ шартлама де**ка**брь...
Çӑлтӑрсем тухнӑ аслӑ пухӑ**ва**.

II. Умра вӗççӗр çут ин**çет**. (мужская)
Инçете куç **шӑ**вӑнчӗ. (дактилическая)
Çут хӗвелӗн çуттин**че** (мужская)
Тӗлӗрет çӗр**шы**вӑмçӑм. (дактилическая)

III. Унӑн халӗ **ку**рӑнӑçлӑ—(гипердактилическая)
Те вилет, те **пу**рӑнӑçлӑ. (гипердактилическая)

Чăваш поэзинче мужская, женская рифма нумай тĕл пулать. Дактилическая, гипердактилическая питĕ те сайра тĕл пулать, çукпа пĕрех.

Рифмăсем тата **точная, неточная** ятлисем пулаççĕ. **Точная** тесе пĕр пек саспаллисенчен тăраканнисене калаççĕ. Тĕслĕх: Хăта—вăхăта, урлă—хĕн-хурлă, ӳснĕ—тӳснĕ т. ыт. те. **Неточная** тесе пĕр пек янăракан рифмăсене калаççĕ, анчах саспаллисем пурте пĕр пек мар. Тĕслĕх: çуттинче — çут инçет, тĕтреллĕ — Карели, хыçала—кăçалах, чуппипе—чĕппи пек т. ыт. те.
Халĕ тĕслĕхсем илсе пăхар:

Карели, эп сана юратрăм,
Эп саврăм ирĕк Çурçĕре.
Эс çĕнĕ юрăсем çуратрăн
Ман çамрăк, шухă чĕрере.
(*Уйăп М.*)

1, 3-мĕш йĕркере—неточная рифма, 2, 4-мĕшĕнче—точная.

Рифмăсем пĕр-пĕринпе çапла черетленеççĕ: пĕрремĕш йĕркепе виççĕмĕш, 2-мĕшпе 4-мĕш: Тĕслĕх:

Автобусĕ пĕр хашкарĕ, (а)
Пĕр вĕçтерчĕ çивĕччĕн. (б)
Сывă пулах, Шупашкарĕ, (а)
Эпир тепре киличчен. (б)

Кунта рифма **а б а б** пулать. Ун пек рифмăсене **перекрестная** рифма теççĕ.

Тата 1-пе 4, 2-пе 3 йĕркесем рифмăланаççĕ.
Тĕслĕх:

Таврăнми иртсе юлать (а)
Асран кайми мухтавлă çулĕ, (б)
Куркамăрсем çĕкленччĕр çӳллĕ: (б)
Салам, салам çĕнĕ çула! (а)

Кунта рифма **а б б а** пулать. Ун пек рифмăсене **охватная** рифма теççĕ. Кунсăр пуçне сăвă йĕркисем 1-пе 2, 3-пе 4 рифмăланаççĕ. Тĕслĕх:

Сана, Шелеби, орден илнĕ ятпа, (а)
Çулпуç халаллана сӳнми хăватпа (а)
Ялан хӳхĕм юрă çырмашкăн чĕнетпĕр, (б)
Джамбул кун-çулне çитме сывлăх сĕнетпĕр. (б)

Кунта рифма **аабб** пулать. Ун пек рифмăсене **мăшăр (парная)** рифма теççĕ.

Рифмăра хăш чух икĕ сăмах пулать. Тĕслĕх: çут инçет—çуттĕнче, тинĕсĕ—тин эсĕ, Каçпи—каç пит, çулпа—çул пар, хура çын—ку Разин. Ун пек рифмăсене **составная** рифма теççĕ. Акă çак сăвва илер:

Кам пропеллер **чуппипе**
Сана танлаштарĕ!
Чĕрӳ чăхă **чĕппи пек**
Вĕçсе тухса тарĕ.

Рифмăра пĕр чĕлхери сăмахпа урăх чĕлхери сăмах (иностранные слова) пулсан, **макаронический** стих теççĕ. Тĕслĕх:

Умра парта. Ручка. Шурă хут.
Кĕнеке те циркуль, рифмăсем...
Е ячейка... Хими. Das sind gut.
Пуринчен те тытрăм тилмĕрсех.

Грамматика енчен тĕрлĕ категорири сăмахсенчен тăракан рифмăсене **гибкая** рифма теççĕ. Тĕслĕх: хашкарĕ—Шупашкарĕ, сăвăларăм—парăм, кăмăл—çăмăл, çутăлать—Атăла, тĕтреллĕ—Карели, хаяр—пуç таяр, кӳлсем—пӳлсем. Вĕсем чăнах та пĕр пек формăри сăмахсенчен хитререх янăраççĕ. Иккĕшĕ те глагол т. ыт. пулсан, рифма аван мар пулать (ирттертĕм—ӳкертĕм, чупаççĕ—çупаççĕ, курнаççĕ—пурнаççĕ т. ыт.). Çавăнпа паллă поэтсем рифмăсене тĕрлĕ формăра тăракан сăмахсемпе тăваççĕ. Çеçпĕл, Уйăп М. т. ыт. сăввисенче эпир пит те аван рифмăсем куратпăр.

Рифмăсăр сăвăсене **белые стихи** теççĕ, А. В. Кольцов хăйĕн сăввисене нумайĕшне рифмăсăр çырнă. Тĕслĕх:

Что ты спишь, мужичок,
Ведь весна на дворе.
Ведь соседи твои
Работают давно.

## КУПЛЕТ (СТРОФА).

Сăвăсен рифмăланнă татăкне строфа теççĕ. Строфара 2 йĕрке, 3, 4, 5, 6, 7, 8... 14 таран пулать. Анчах эпир нумайрах 4 йĕркерен тăракан строфасене куратпăр. Акă 2 йĕркерен тăракан строфаллă сăвă:

... Сыхă çĕршывăн чикки!
Сыхлать ăна çивĕч чекист.
Тăрать сивĕре, çăмăрта,
Пăшалне хытăрах чăмăртать.
Сивлеккĕн кашлать сĕм вăрман,
Тахшийĕ татах çывăрман.
Тăшман çывăрмасть çывăхра...
Тăр, хĕрлĕ хуралç, сыхăрах!

2 йĕркерен тăракан строфасене двустишие теççĕ. Рифма унта юнашар пулса пырать: аа, бб, вв...

4 йĕркеллĕ куплет:

Карели, эп сана юратрăм,
Эп саврăм ирĕк çурçĕре.
Эс çĕнĕ юрăсем çуратрăн
Ман çамрăк, савăк чĕрере.

Ку строфара 4 йӗрке. Рифма **абаб** пулса черетленет. Кун пек рифма питӗ нумай тӗл пулать. Ыттисем (**абба, аабб**) пит те сахал тӗл пулаççӗ.

5 йӗркеллӗ строфа:

Тинӗс тӳлеккӗн тӗлӗрет...
Ун кӗленче пек питӗнче,
Пăхсассăн инçете, лере,—
Çиçсе вылять каçхи тӗнче.
Тинӗс тӳлеккӗн тӗлӗрет...

Е тата:

Кун-çул кăвар—пӗлетӗр хăвăр,
Хӗрӳ кун-çул савать мана.
Хӗрӳ кун-çул сăвви—ман сăвă,
Хӗрӳ кун-çул юрри—ман сăвă.
Пӗлмешкӗн тивӗç эс ăна. (Ивник, „Амăшӗ".)

Ку строфара рифма **абааб** пулать.

Уйăп Мишшин сăввинче малтанхи йӗркине вӗçӗнче тепӗр хут каланине куратпăр. Ун пек куплетсене эстрадные куплеты теççӗ. Рифма вара (4 йӗркеллӗ куплетри майлах) **абаба** пулать.

6 йӗркеллӗ строфасем:

Анчах карчăк хурлă мар,
Вăл мăнаçлă, вăл хастар,
Вăл çапла пуплет:
Тепӗр хут килсен тăшман,
Ăна хирӗç çапăçма
Хам эп тухăп, тет.

Кун пек строфа рифмисем час-часах 1-пе 4, 2-пе 5, 3-пе 6 е 1-пе 2, 4-пе 5, 3-пе 6 черетленеççӗ: **абсавс** е **аабссб** т. ыт. те пулать.

8 йӗркеллӗ строфа, рифма **абабабсс** пулсан, **октава** пулать. Октавăн виçи—пилӗк стопаллă ямб (пятистопный ямб) пулать:

Вӗçет пӗлӗт пек ушкăн кăвакарчăн а
Ултшар уралла капансем çинче, б
Пӗсехисем илемлӗн кăвакарчӗç, а
Хӗрлӗ тӗс сарăлчӗ урисенче; б
Çапла ӗнтӗ, сивве кӗтсе хăпарчӗ а
Кӗркуннехи мăнтăр пуян тӗнче, б
Тусансăр сивӗ сывлăш питӗ уçă, с
Ăсан майӗ таран çӗкленчӗ уçăм. с
(Ухсай.)

14 йӗркерен тăракан сăвăсене **сонет** теççӗ. Вӗсенче рифмăсем çапла черетленеççӗ: малтанхи 8 йӗрки 2 рифма йышăнать, 4 йӗрки хăй тӗллӗн, тепӗр 4 йӗрки хăй тӗллӗн, юлашки 6 йӗрки хăйне уйрăммăн, хыçалти 2 йӗрки мăшăр пулать: (4+4+6 е 4+4+4+2) **—абабабабвгвгдд** пулать.

Тĕслĕх:

Икĕ хутлă шурă çуртăн шурă пӳлĕмне а
Электрицă лампăчкийĕ çутă карнă чух, б
Иккĕн эпир... иккĕн вăрттăн пăшăлтатнине а
Сассăр сывлăш итлесессĕн, эсĕ: „Ай, турух!" б
Терĕн ятăн çăмăлттайăн çăмăл юррине. а
Турă пур вăл, ан чĕн хирĕç, айтăр венчетне! б
Терĕн хыттăн, пуç устармĕш эсĕ—ух-ху-у-ух! а
Шухăшларăм, ăш каларĕ: Паттăр пул, Пракух!.. б
Çав çĕр хыççăн, эсĕ, чунăм, нимсĕрех мана: в
Хыт чĕреллĕ... юратмастăн, терĕн çиленсе... г
Иртрĕ вăхăт. Çĕнчĕ ĕнтĕ çĕнĕ самана. в
Шухăшсем те сĕнчĕç... килчĕç ĕнтĕ çĕнелсе. г
Эс те, сар хĕр, халĕ ĕнтĕ урăхлантăн çак: д
— Венчете айта, тесе те каламастăн ак! д

(Хумма Çеменĕ, „Сунтал", 11, № 1925).

Сăвăллă çырнă япаласен шутне тата эпиграмма, элегия, акростих, шарада, басня, баллада, поэма т. ыт. кĕрет.

**Эпиграмма** тесе кама та пулин тĕртсе е кулса çырнă кĕске сăвăсене калаççĕ. Вĕсем 2 йĕркерен пуçласа 8 йĕрке таран пулаççĕ. Унпа поэтсем пĕр-пĕринчен тăрăхласа çырнă чух усă кураççĕ. Вăл хăйне май критика шутланать. Тĕслĕх, И. Тукташ писатель пирки çырнă „Капкăн" журналри эпиграммăна илер:

Тип çыранлă „Вăкăр çырми" ăна
Пайтах вăхăт тертлентерчĕ.
Халĕ Тукташ çав çырмана
„Шурă роза" лартса ӳстерчĕ. (Митта Петĕрĕ.)

Поэтсене хăйсен сăввисен формипех тăрăхласа çырнине **пароди** теççĕ. Тĕслĕх:

... Шелебийĕн хутаççи—
Мĕн-мĕн кăна çук унта:
Кам пайласа çитерес
Ку хутаçри пурлăха?

(Ваçанкка. „Шелеби поэта" юратса тăрăхлани.)

Ку пародие, Шелеби творчествине хăйĕн формипех тăрăхласа, „Çĕрпӳ пасарĕ" сăвви майлă çырнă. Унта çапла пулнă:

Эх! Çĕрпĕвĕн пасарĕ,
Мĕн-мĕн кăна çук унта!
Кам каласа пĕтерес
Унта мĕн-мĕн пуррине...

(Шелеби, „Çĕрпӳ пасарĕ").

Кусемсĕр пуçне тата элеги, ода, баллада, эпиграф, эпитафи терминсемпе паллашар.

**Элеги** тесе поэт хăйĕн хурлăхлă настроенийĕ çинчен çырнă сăвăсене калаççĕ. Сăмахран, Пушкинăн „Брожу ли я вдоль улиц шумных“. Кунта вăл çулсем иртсе пынипе вилĕм çывхарнишĕн кулянса çырать. Ватă юмансем çине пăхса, вĕсем поэт çураличчеnex ларнине, вăл вилсен те çаплах юлассине аса илет. Çанталăк, эп вилсен те çаплах йăлтăртатĕ, анчах эпир пулмăпăр. „И чей-нибудь уж близок час“, тесе хурланать. Çеçпĕлĕн „Эп вилсен“, „Йывăр шухăшсем“ ятлă сăввисем те элегие çывăх тăраççĕ.

**Ода** тесе кама та пулин мухтаса çырнă сăвăсене калаççĕ. Вырăссен одасене Державин нумай çырнă. Сăмахран „Фелица“ т. ыт. те.

**Баллада** тесе пĕр-пĕр пулса иртнĕ ĕç çинчен калакан пысăк мар сăвăллă калава калаççĕ. Сăмахран, „Арçури“, „Тимĕр тылă“, „Тăлăх арăм“ т. ыт. те. Вĕсенче юмах элеменчĕсем, фантазилле материалсем тĕл пулаççĕ.

**Эпитафи** тесе вилнĕ çын тăпри çинчи чул е йывăç юпа çине ăна асăнса çырнă кĕске сăвăсене е çырусене калаççĕ.

**Акростих.** Акро—хĕрринче тени пулать. Акростих—хĕрринчи сăвă. Сăвă йĕркисен малти хĕрринчи пуçламĕш саспаллисене вуласа ансан, пĕр-пĕр предложени пулса тухать. Акростиха пирĕн Алагер, Тукташ т. ыт. çырнă

Пирĕн чăваш поэчĕсем хушшинче тĕрлĕ формăсемпе, тĕрлĕрен жанрпа çыракансем сахал мар. Çак пархатарлă ĕçре вĕсем литературăри паллă классиксен примерĕсемпе ăнăçлăн усă кураççĕ. Марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшалланса хăйсен политикăлла пĕлĕвĕсене ӳстернĕ май, çĕнĕрен çĕнĕ лайăх произведенисем параççĕ, чăваш литературине пуянлатаççĕ.

# ТУПМАЛЛИ:


*Стр.*

**I. Мĕн вăл литература. Литературăна мĕншĕн вĕренмелле** . . . . . 3
**II. Чăвашсен Октябрь революциччен хи пурăнăçĕ, культури** . . . . . 7
**III. Фольклор** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 10
Мĕн вăл фольклор. Фольклора мĕншĕн вĕренмелле . . . . . . . .
А. Юрăсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 13
Б. Юмахсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
В. Тупмалли (сутмалли) юмахсем . . . . . . . . . . . . . . . 26
Г. Пословицăсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 28
**IV. Чăвашсен Октябрь революциччен хи литератури** . . . . . . . . . 29
**М.** Ф. Федоров . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Н. И. Полоруссов-Шелеби . . . . . . . . . . . . . . . . . . 36
Тайăр Тимкки (Т. С. Семенов) . . . . . . . . . . . . . . . . 39
К. В. Иванов . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 42
К. В. Иванов творчестви . . . . . . . . . . . . . . . . . . 44
„Нарспи" . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 47
„Нарспи" поэмăри геройсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 52
„Нарспи" поэма форми . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 55
**V. Октябрь революцийĕ хыççăн хи литература** . . . . . . . . . . 60
А. Чăвашсен Октябрь революцийĕ хыççăнхи литературин ӳсĕмĕ . —
Б. Октябрь революципе граждан вăрçи тапхăрĕнчи литература . . 63
Çеçпĕл Мишши (М. Кузьмин) . . . . . . . . . . . . . . . . . 67
Çеçпĕл Мишши сăввисен форми . . . . . . . . . . . . . . . . . —
С. Ф. Фомин . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 75
Д. И. Исаев . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 78
**VI. Сăвăсем** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 80
Сăвăсен форми. Сăвăсене мĕнле çыраççĕ . . . . . . . . . . . —



Отв. редактор **Н. Дедушкин.** Коррек. **Г. И. Иванов.** Техн. редак. **Н. С. Степанов.**

НТ 2141 Заказ № 1533. Тираж 10.000 экз.

Объем 5,5 печ. л. Индекс У—2. В печ. л. 50.592 зн. Формат бум. $60 \times 92^{1}/_{16}$.

Сдано в набор 10 июня 1940 г. Подписано к печати 9/VIII 1940 г.

Типография № 2 Наркомместпрома Чувашской АССР, г. Алатырь.

Цена 3 р. 35 к.

Ф. С. МЕЦЕНАТОВ

ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА

Учебник для VIII класса
средней школы

Госиздат ЧАССР ◆ Чебоксары ◆ 1940